РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ВĔРЕНӮ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ

Федерацин аслă пĕлӳ паракан
«И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»
патшалăх вĕренӳ бюджет учрежденийĕ

**Э.В. Фомин А.М. Иванова**

# СĂМАХ ЭТКЕРĔ
# ЛЕКСИЧЕСКОЕ НАСЛЕДИЕ

СЛОВАРЬ

Шупашкар
2018

УДК 811.512.111′374
ББК Ш12=635.1*46
Ф76

*Рецензенты:*
д-р филол. наук, профессор *Г.Н. Семенова*
(Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова)
канд. филол. наук *С.А. Максимов*
(Удмуртский институт истории, языка и литературы
Уральского отделения Российской академии наук)

**Фомин Э.В.**
**Ф76** Сăмах эткерĕ. *Лексическое наследие*: словарь / Э.В. Фомин, А.М. Иванова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2018. – 108 с.

ISBN 978-5-7677-2704-9

Словарь включает около восьмисот слов чувашского языка, нашедших отражение в текстах XIX–XXI вв. и впервые подвергаемых лексикографированию.

Для специалистов в области чувашеведения и всех, кто интересуется чувашской культурой.

*Ответственный редактор*
д-р филол. наук, профессор *Г.Е. Корнилов*

Утверждено Учебно-методическим советом университета

*Публикация подготовлена в рамках поддержанного РГНФ научного проекта № 13-04-00045*

ISBN 978-5-7677-2704-9

УДК 811.512.111′374
ББК Ш12=635.1*46
© Издательство Чувашского университета, 2018
© Фомин Э.В., Иванова А.М., 2018

# УМ СĂМАХ

Сире паллашма сĕнекен сăмах пуххине Раççейри гуманитари ăслăлăх фончĕ пулăшнипе «Анлă тишкерĕве тĕпе хурса чăваш чĕлхинчи агнонимсен пĕлтерĕшне палăртни» проект шучĕпе хатĕрленĕ.

Словарь тĕллевĕ – вăл е ку сăлтава пула ку таранччен лексикографиленмен сăмахсене кодификацилесси, вĕсене малашнехи словарь ĕçĕн хутлăхне кĕртесси. Тĕпрен илсен, хатĕрлевçĕсем XX ĕмĕрти çăл куçсене пăхса тухнă, çав хушăрах хальхи литературăна та – пĕтĕм талккăшĕпе мар пулсан та – тишкернĕ.

Словаре кĕрекен сăмахсене хальччен пайăн-пайăн пичетлесе пынă [1–7]. Асăннă ĕçсенче пĕтĕмпе 647 сăмах лексикографиленнĕ. Анчах та пирĕн словаре вĕсенчен пурне те кĕртмен. Хатĕрлевçĕсем кашни сăмаха çĕнĕрен пăхса тухса хакланă.

Кунсăр пуçне, кĕнекене çӳлерех асăнса хăварнă çăлкуçсенче пичетленмен лексикăна та кĕртнĕ. Словарь калăпăшĕ – 766 сăмах.

Сăмаха лексикографилесси словарьте ирĕклĕ йĕркепе пулса пырать: сăмаха пĕр хутчен усă курниех ăна шута илмелли сăлтав пулса тăрать. Танлаштарма: Г. А. Дегтярев чĕлхеçĕ сăмаха кодификацилес умĕн ăна тĕрлĕ автор сахалтан та икĕ хут усă курнине тĕпе хурать. Америка тĕпчевçисен «The Global Language Monitor» ушкăнĕ йышăннă тăрăх вара акăлчан чĕлхинчи 25 пин хут усă курнă çĕнĕ сăмаха кăна чăн-чăнни вырăнне хураççĕ.

Чăваш чĕлхи словарьте çырса кăратнинчен нумай анлăрах. Эпир пухнă материал ытларах чухне чĕлхемĕрĕн шалти хăватне аталантаракан тĕслĕхрен тăрать.

Словарь хатĕрлевçисем сăмах пуххи чăваш лексикографине çĕнĕ вăй кӳрессе шанаççĕ, уйрăмах – кун йышши кăларăма çулсеренех пичетлесе пырсан.

### Сăмах статйин тытăмĕ

Леммăна çырса кăтартассине çак йĕркене пăхăнтарнă:

1) лемма (ăна çăра пысăк сас паллипе уйăрнă);

2) ăнлантару пайĕ (ытларах чухне оригиналти пек хăварма тăрăшнă);

3) леммăна усă курнине кăтартакан тĕслĕх;

4) сăмах паспорчĕ;

5) сăмахăн ансат этимологийĕ (май пур чухне).

Словарь статйин тĕслĕхĕсем:

**МАЛАЛЛĂХ** малашлăх, пуласлăх. *Çутат, хĕвелĕмĕр, ĕçпе кĕрешӳ урлă / эпир çитсе курас малаллăха!* [Алка А. Кăрлачăн 1-мĕшĕ, 1937 çул // Сунтал. 1937. № 1. С. 1].

**ХĂНТ** кĕренке [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394]. < выр. фунт < акăлч. pound < лат. pondus йывăрăш.

Сăмах статйин йĕркине пур чухне те çирĕп тытса пыман. Ку уйрăмах сăмаха усă курнине кăтартакан тĕслĕхре палăрать: ăна сиктерсе хăварма пултарнă. Çакна словарь материалне тĕрлĕ условире тĕрлĕ тĕллевпе пухнипе ăнлантармалла. Калăпăр, чĕлхемĕрĕн 2009-мĕш çулхи тӳнтер сăмах кĕнекине хатĕрленĕ вăхăтра çĕнĕ сăмахсене ахаль кăна – контекстсăр – çирĕплетсе хăварни те çителĕклĕ пулнă. Материалĕ пахалăхлă пулнине кура ăна хăй хальлĕнех ку словаре те кĕртсе хăварма йышăннă.

Сăмах пуххин пĕр пайне усăмсăр пĕлтерĕшлĕ лексика йĕркелет. Çавăн йышши сăмахсем те чĕлхе пуянлăхне

çирĕплетекен паллă шутланаççĕ. Вĕсене асăрхамасăр хăварма çук. Вăхăт иртнĕ май хальлĕхе чăн-чăн агноним шутланакан сăмах пĕлтерĕшне тупса палăртасси иккĕленӳсĕр.

Словарь чăвашла-вырăсла сăмах кăтарткăçĕпе вĕçленет. Ăна ансат статья евĕр панă, тĕслĕхрен:

| | |
|---|---|
| **айхиçĕ** айгист | **текмеклен ?** |
| **йăпăлтăш** льстивый | **ӳкерчĕкле** рисовать |
| **çутлăхçă** просветитель | **яркай** коньки |

## Кĕскетӳсем

### а) чăвашла

| | |
|---|---|
| акăлч. – акăлчанла | лат. – латинла |
| ар. – арабла | пол. – полякла |
| венг. – венгрла | танл. – танлаштарăр |
| выр. – вырăсла | тут. – тутарла |
| диал. – диалектра | фольк. – фольклорта |
| ит. – итальянла | фр. – французла |
| конт. – контекстра | |

### ă) вырăсла

| | |
|---|---|
| межд. – междометие | подр. – подражательное слово |
| миф. – мифическое | |

## Паллăсем

< – урăх чĕлхерен йышăннă сăмах

≤ – урăх чĕлхерен пĕлтерĕшне улăштармасăр йышăннă сăмах

= – пĕр тан

› – малаллахи леммăна пăхăр

# Сас палли йӗрки

А Ӑ Б В Г Д Е Ё Ӗ Ж З И Й К Л М Н О П
Р С Ç Т У Ӳ Ф Х Ц Ч Ш Щ Ъ Ы Ь Э Ю Я

**Усӑ курнӑ литература**


1. Желтов, П. Толкование слов, обозначенных индексом h / П. Желтов, Э. Фомин, Й. Луутонен // Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342–344.

2. Фомин, Э. В. Иртнӗлӗх эткерӗ: «çӗнӗ» сӑмахсем / Э. В. Фомин // Национальные языки и их диалекты на рубеже XX–XXI веков: теория и практика. Чебоксары: Чуваш. гос. пед. ун-т, 2014. С. 56–59.

3. Иванова, А. М. Агнонимичные парные слова в чувашском языке / А. М. Иванова // Ашмаринские чтения. Чебоксары, 2014. С. 67–74.

4. Фомин, Э. В. Словаре кӗмесӗр юлнӑ чӑваш сӑмахӗсен çӗнӗ пуххи / Э. В. Фомин // Ашмаринские чтения. Чебоксары, 2014. С. 125–143.

5. Иванова, А. М. Словаре кӗмесӗр юлнӑ чӑваш сӑмахӗсен пуххи / А. М. Иванова, Э. В. Фомин // Чӑваш чӗлхи, литератури, халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 2015. С. 29–45.

6. Иванова, А. М. Словарь агнонимов чувашского языка: неанализируемые единицы / А. М. Иванова // Сборник научных трудов молодых ученых и специалистов. Чебоксары, 2015. С. 48–53.

7. Фомин, Э. В. Иртнӗлӗх эткерӗ: словаре кӗмесӗр юлнӑ чӑваш сӑмахӗсен çӗнӗ пуххи / Э. В. Фомин, А. М. Иванова // Ашмаринские чтения. Чебоксары, 2016. С. 80–88.

# СĂМАХ ПУХХИ

**А**

**АВАНЛАШ** *лайăхлан*, конт. паллаш, пĕр чĕлхе туп [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**АВАНЛĂХ** ырă енлĕх. *Ĕмĕр тăршшĕне аван йăваш пурăннă çынсене ку йăмах йăвашлăха вĕрентет, вĕсене мăн кăмăл-лăланса, хăйсен аванлăхĕсемпе мухтанса, хăйсене тимеслĕх япалана ыйтасран сыхлантарать…* [Паллă мар çăлкуç].

**АВĂРТАКАНÇĂ** арманçă. *Ӳкĕнекен палăрмасть, / çылăх каçарттармаççĕ. / Çавăрттарать çĕр армань – / шăмă авăртаканçă* [Яккусен П. «Пурте эпир сывă мар…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 334].

**АВТОРСĂРЛĂХ** авторĕ паллă мар пулни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**АЙĂККА-МАЙĂККА** айккинелле. *Çапла карчăк кӳлешет / Чĕкеç илтсе тăмалла, / хăй чишкипе перкешет / айăккалла-майăккалла* [Шупуççынни Н. Еркĕн // Сунтал. 1927. № 2. С. 11].

**АЙЛЮККИ** анатри чăвашсен ушкăнпа çатан авнă пек тытăçса юрласа ташлакан ар çын ташши. *Айлюкки, эх, айлюкки, / чун каять санпа екки* [Ахун В. «Айлюкки, ай, айлюкки…» // Тăван Атăл. 1983. № 3. С. 39].

**АЙХИÇĔ** Геннадий Айхи сăвăç пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăкланакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**АКАМЛАН** туслаш (хĕрсем пирки). *Патшалăх вăйлăланса пынине кура йăхсемпе ăрусем хушшинчи хутшăнусем те çирĕпленсех пычĕç: никам та пĕр-пĕринчен ютшăнмасть, пĕр йăхпа тепри хĕр парса хĕр илеççĕ, акамланаççĕ, туслашаççĕ* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 58].

**АКТĂК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Атя (ячĕ), пирĕнпеле актăк юлашки яшкăна ирттерме* [Юпа туса асăнни. 934 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2009. С. 299].

**АЛЛЯХ** тимлĕ пулма хистекен сас-чĕвĕ. *Ирхине çынсем лаша шăварма анаççĕ тет. Кашкăра кураççĕ тет: «Аллях! аллях!» тесе кăшкăраççĕ тет.* [Тилĕ кашкăра пулă тытма вĕрентни // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 22].

**АЛМА-ШӲЛКЕМЕ** хĕрарăмăн капăрланмалли хатĕрĕ. *Пуян çынсен те алми пур-çке, / алми-шӳлкемисем тенкĕрен* [«Пуян çынсен те тухья пур-çке…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 59].

**АМĂЛ** аминь? *Çак сăрана чипер ялăм-йышăмпа кӳршĕм-кӳппĕмпе ĕçсе çима пар, турă: çуратма пĕлтĕн те – усрама пĕл. Айван кĕллине хапăл иле пар. Амăл* [Дмитриев М. Чӳклеме // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 114, 431].

**АНРАШКА** анра. *Çын пулин анрашка, çын пулин чалхăркка, / чун хавалсăр поэзи кичем* [Федорова Л. «Эп пулсам ăрăмçах, эс пулсам Пĕсмĕлле…» // Ялав. 2003. № 8. С. 44].

**АНТАРУ** çӳлтен аялалла куçарни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**АНТĂРЛĂ-ЧĔНТĔРЛĔ** эрешлĕ. *Йывăççем айĕнче чăнах та хĕвелĕн антăрлă-чĕнтĕрлĕ шевлисем чĕтренеççĕ* [Скворцов Ю. Уках хурăнĕ // Тăван Атăл. 1961. № 1. С. 33].

**АПАЙЛА** тимле. *Эпир виççĕн пĕр тăванччĕ, / апайласа пăхсан – пĕри çук* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 168].

**АПĂРШУК** мĕскĕн. *Турханов ырă чĕреллĕ çын вăл, а саншăн вăл ĕнтĕ вилме те хатĕр. Мĕнле тӳссе пурăнĕ-ши, мĕскĕн, сана качча иличчен… Саншăн типсе-хăрсах вилет пулĕ, апăршук* [Трубина М. Хӳтĕ вырăнта // Илемлĕ литература. 1940. № 1. С. 38].

**АР ÇЫНЛĂХ** ар çын пулнине пĕлтерекен паллăсемпе тыткаларăш. *Ар çынпа хĕрарăм хушшинчи хутшăнусенче канăçлăхпа килĕшӳлĕх пултăр тесен ар çынри хĕрарăмлăхпа хĕрарăмри ар çынлăх пĕр тан пулма кирлĕ* [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 146].

**АСАМÇĂЛА** асамла, юмăç яр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**АСАМÇĂ-ТУХАТМĂШ** юмăç тавраш [Асамçă-тухатмăш // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 212].

**АСĂК** выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке çитермелли апат. *Сыснана асăк та килĕшмест* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 76]. ≤ тут. азык

**АСĂМЧАХ** пĕлевçĕ. *Тутар патши Супетей аптăрасах çитнĕ. Вара вăл асăмчахсемпе тухатмăшсене пуçтарса канаш ыйтать…* [Супетей Улăпа пĕтерме тăрать // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 258–259].

**АСĂХ** аскăнлан. *Этем тени ан асăхтăр вăл* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 63].

**АСЛĂЛĂХ** чаплăлăх. *Вăл чĕррисене те, вилнисене те суд туса уйăрма аслăлăхĕпе тата киллелле, унăн Патшалăхĕ нихăçан та пĕтес çук тесе* [Сехет кĕллисем. Чĕмпĕр, 1891. С. 92].

**АСПĔС ПУЛ** анраш. *Çав тĕтĕшех Чĕкеç те / аспĕс пулса аптăрать* [Шупуççынни Н. Еркĕн // Сунтал. 1927. № 4. С. 11].

**АТИККА** атте. *Хăш шуйттанĕсем «Тавай атиккана кайса калас, илсе килес атиккана кунта!» теççĕ. Вĕсен атиккăшĕ – вун икĕ мăйракаллă сăттана…* [Хресчен ывăлĕ пуп тирне сӳни // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 54].

**АТМА-ТЕТЕЛ** пулă тытмалли хатĕрсем. *…Çулан чăпăл тунă шыв сунарçăсен алли-урине çирĕплетет, ухăпа тĕл пеме, тĕрлĕрен атма-тетел таврашне лартмалли вырăна пĕлсе суйласа илме пулăшать* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 370].

**АХАХ-ĔНЧĔ** мерчен йышши капăрланмалли хатĕрсем. *Куç илейми хитре тăрантасне те танкăр кĕмĕл-мерченпе, ахах-ĕнчĕпе илемлетнĕ* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 361].

**АХĂРУ** аташу, иртĕхӳ. *Ĕмĕт татăлни те, ютшăну та, / ахăру та пушатсан чунне, / çын ачи – куçне тин уснăн – утĕ / çут çанталăк тĕкĕрĕ умне* [Энтип В. Çĕрпе тӳпе // Тăван Атăл. 1989. № 8. С. 28].

**АХТИ** кирлĕ сăмаха аса иличченхи тăхтава тултармалли междомети. *«Эсĕ ăна юратнине каласа-и?» – ыйтрĕ хĕр Гаврил çине тăван шăллĕ çине пăхнă пек пăхса. – «Мĕн усси? Намăс курни çеç». – «Юрататăп тени вăл, ахти, намăс курни-и?»* [Лисаев И. Тивĕç. Шупашкар, 1989. С. 80]. < выр. ах ты.

**АШШАВЛИК** сĕтел çитти, конт. хăйне хăй апат хатĕрлесе паракан сĕтел çитти. *Ванькка курак йыснăшĕ панă ашшавлике сарса прахать те – музыка хускалса каять. Ашшавлик çинче мĕн çиес тенĕ, çав пур* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436]. ≤ тут. ашаулык.

## Ă

**ĂВĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Кантăк ăвăнче кӳлĕ çук…* [«Эп çак ăрама ма килеп?..» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 313].

**ĂВĂС ПĂРНИ** пыллă сăра. *«Чим-ха! Ман ăвăс пăрни пурччĕçке! Çавна илсе тухас-ха! Тутанса пăхас ăна!» – тесе Унтюк урай сармине сирчĕ те тĕп сакай алăкне уçрĕ* [Таллеров Л. Çăлтăр витĕр çул курнать // Ялав. 1981. № 11. С. 14].

**ĂРАСАК** телейлĕ, ăраскаллă. *Юрĕ хĕвелпе ирĕлет, / пире ăрасак çӳретет* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 126].

**ĂРАТНИК** çар çынни [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505]. ≤ ратник.

**ĂРЛАÇÇИ** çула май [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436].

**ĂСЛĂЛАНТАР** вĕрент, пĕлӳ пар; тăна кĕрт. *Эй чăн таса Виç ипостаçлĕ Турă, Эсĕ пĕр хăватлă, уйăрăлми Патшалăх, пур ырăлăх çăлкуçĕ; маншăн та, çылăхлăскершĕн, кăмăллă пулсам; мана тĕреклĕлентер, чĕреме ăслăлантар, ман çирен пур ирсĕрлĕхе те ил…* [Сехет кĕллисем. Чĕмпĕр, 1891. С. 98; Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ĂСЛĂÇ** пĕлевçĕ. *Чăн та каларĕç мана Хырлăх ялĕнче ăслăç пур тесе, халĕ ăслăçа хам куçпа куртăм* [Пуппа кĕтӳç // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 162].

**ĂС-ТАЛАЙ** ăс-хакăлпа талай-тыткаларăш. *Паллах, пурне те палăртса çитерекенни, «вырăна лартаканни» – куллен-хи пурнăç, хăвăнпа пурăнакан çыннăн ăсĕ-талайĕ мĕнлерех вĕт, теприн илемлĕ сăнне те курми пулатăн* [Лисина Е. Рия // Çăкăр чĕлли. Шупашкар, 1994. С. 117].

**ĂСУС** тупăш, процент. *[Василей] кĕтнĕшĕн ăрусне çапах илетчĕ, кивçен панине çапах илетчĕ* [Иванов И. Çынна епле тăвăн, ху та çавна курăн // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 165, 438].

**ĂХĂКЛАТ** нăшăкла. *Ача тӳрех Варккуç мăйĕнчен пырса уртăнчĕ. Иккĕн тан хӳхлеме тытăнчĕç. Райкка та вырăнтан хускалчĕ. Халь тин çывăрасси пулмасса ăнланчĕ те тăрса тумланчĕ. «Мана вĕлерессипе хăратаççĕ», – ăхăклата-ăхăклата илчĕ Олег* [Гордеев Д. Шăркалчă // Тăван Атăл. 2010. № 10. С. 50].

**ĂШ-ВАР** вар-хырăм. *Йынăшать, макăрать, ăша-вара ыталать. (Купăс)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 247].

## В

**ВАКĂЛĂХ** чăкăлтăшлăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВАЛА** ула. *Пĕр начар хресчен пĕртен-пĕр вала мăкăрне симĕс курăк çине питĕ начар пăхса кăларнă* [Вала мăкăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 36].

**ВАРАВĂР** шăмăсăр. *Çапла Перпанк çĕнĕрен çимĕç йăвăççисем – шăмăсăр (варавăр) сливăсем, слив-априккоссем, пит хăвăрт çитĕнекен мăйăрсем тунă* [Урхи Н. Амерĕкри çĕр ĕçĕ тата пирĕн задачăсем (А. Коль агроном çырнă тăрăх) // Сунтал. 1924. № 4. С. 40].

**ВАР-ВАСАК** çырма-çатра. *Ӳтĕнчен-тирĕнчен, шăмминчен-шаккинчен, варĕнчен-васакĕнчен, куç, тух, тух, куç, тух (анаслать)* [Куç чĕлхи. 36 // Чĕлхе сăмахĕсем. Вĕрӳ-суру чĕлхи. Шупашкар, 2014. С. 42].

**ВАРИАЦИЛĔХ** темиçе тĕслĕлĕх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВАРПУШ** çемçе. *Йăмăкĕ калать тет: «Укçа тупăнсан та кĕçĕн инкĕме пар, мана кирлĕ мар. Тахăр йĕрсе тăхнă, тăри йăва çавăрчĕ, варпуш пак çӳçĕме кăткă йăва çавăрчĕ, майра сăнĕ пек сăнма хурăн сарри çаппăрĕ», – тет* [Чеченик // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 73].

**ВАÇКА** маттур качча, йĕкĕт [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505]. < Василий (Васька).

**ВĂЙ ТУ** хĕсĕрле. *Эсĕ ăна кирек епле хăратсассăн та пулла ан пар. Вăй туса иле пуçласан эсĕ пуллуна аллăна ил те ак çапла каласа çĕре çĕклесе çап: «Ку пулă ман телейĕмччĕ, эсĕ ăна манран туртса илесшĕн, сана та пулмĕ, манăн телейĕме туртса илеймĕн» тесе çĕклесе çап* [Вун икĕ çула кĕрĕшнĕ тарçă // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 372].

**ВĂЙ-СĂЙЛĂ** вăйлă, хăватлă. *Мĕн чухлĕ сасă! калаçать кунта / чĕлхесĕрех – ăна юрлать Тĕнче! – / вăй-сăйлă сасăран / кĕрлет ката* [Сатур С. Сас. Шупашкар, 2001. С. 9].

**ВĂКĂРЛĂХ** хăмсарулăх. *Пĕр енĕ юманлăх, тепĕр енĕ çăкалăх, варринче вăкăрлăх. (Çапуççи)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 257].

**ВĂРĂМЛĂХ** пысăкăш [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВĂРĂМЧĂК** вăрăм япала. *Вăрăм-вăрăм вăрăмчăк, ылтăн пуçлă кĕмĕлчĕк* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 194].

**ВĂРМАН-ЧЕРĔ** тайга. *Вăрмансем-черĕсем, / выльăх-чĕрлĕхсем… / Пурте пит ĕрчевлĕ / Алтайра вĕсем* [Полоруссов-Шелепи Н. Коммунизм патне // Сунтал. 1933. № 5. С. 36].

**ВĂРТАХЛĂХ** тăванлăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВĂХĂТСĂРЛĂХ** йывăр та кăткăс самана [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 162].

**ВĂШĂР-ВĂШĂР** тӳлек çил вĕрнине евĕрлекен сăмах, вăшăл-вăшăл. *Хвел анать те, хвел тухать, / вăшăр-вăшăр çил вĕрет* [Улах юррисемпе такмаксем. 1814 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 251].

**ВЕЛТЕЙ** тăмсай. *Эх, вĕçев шкулне мĕнле майпа кĕме пуласси çинчен те ыйтаймарĕ вĕт пиччĕшĕнчен Якур, тăмпуç, велтей!* [Садай В. Аттесемпе пĕрлех // Тăван Атăл. 1974. № 11. С. 40].

**ВĔЛТĔРККИ** пушă тĕртнĕ пир [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393].

**ВĔТЕЛӲ** вак-тĕвекленў, чăкăлтăшлану. *Ӳсрĕм хам та, чун та ӳсрĕ / пĕвĕмрен те хăвăртрах, – / кĕвĕçӳсĕр, вĕтелӳсĕр / утрăм хĕсĕк пурнăçра* [Яккусен П. «Хир ачи – кĕтӳçĕ мар-и?..» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 307].

**ВИРТ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Анкарти-пĕр хыçне виртсе ятăм, / хăнтăр чĕппи пурне пĕлмерĕм* [«Анкарти-пĕр хыçне виртсем ятăм…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 101]. *Укăлчаран тухрăм та виртсем ятăм / ăмăрт кайăк пуррине пĕлмерĕм* [«Укăлчаран тухрăм…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 209].

**ВИÇЕВЛĔ** çителĕклĕ. *Ăс вăйĕ – виçевлĕ, – ăна эп пĕлетĕп, – / унпа перекетлĕ пулма вĕренетĕп* [Айхи Г. «Çапла, пăхасса та çӳле эс пăхатăн…» // Тăван Атăл. 1971. № 7. С. 4].

**ВИТЛЕВ-СИВЛЕВ** тăрăхлав [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВУТ ТУ** вулкан. *Пĕринче ăна [революционера] вут ту хăвачĕ çапса ӳкерчĕ* [Шаланкă. Истеррори // Сунтал. 1925. № 7. С. 11].

**ВУТЛĂХ** кăвайт. *Варри вутлăх, йĕри-тавра кӳллĕх. (Сăмавар)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 254].

**ВУТ-ТĔТĔМ** вут-çулăм [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ВЫЛЯНЧĂКЛĂХ** çăмăлттайлăх. *Кунтах «ребус чĕлхипе» çырнă «Хăш чух – пултарулăхри» «пушăлăх» сăвă та хăйĕн шухăшсăр вылянчăклăхĕпе «тĕлĕнтерет»* [Теветкел Н. Ăçтан «таврăннă» Айхи? // Ялав. 1988. № 12. С. 27].

**ВЫРНАÇУ** вырнаçса ларни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

## Д

**ДЕГРАДАЦИЛЕН** аркан, япăхлан [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

## Е

**ЕВĔР-ЁЛКЕ** калăп, тĕслĕх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЕВИТЕС ПУЛ** килсе çитнине пĕлтер. *Тӳрех патша патне салтака карĕç, çитрĕç те евитес пулчĕç* [Вăтăр пĕр ывăл // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 306]. ≤ выр. явиться.

**ЕЙĔМ?** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Чипер çынна, Вучахăм, пар эс хăтлăх, / умне кăлар эс тăварна. / Еймӳ сан пултăр тулăх, сăтлă – / хăну тав тутăр кил-çуртна* [Ахун В. «Усал чуна, Вучахăм, эс ан ăшăт…» // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ЕМЕЛККЕ** урапа. *Чулхула емелккене им-ямлатăр. / ССРС авто çине хăвăрт лартăр* [Янкас Н. Виççĕмĕш çул маршĕ // Сунтал. 1931. № 1. С. 8].

**ЕНКЕПИ, ЮНКĂЛТИ** çăмăлттай. *Кĕтӳçпеле юнашар / кукăр карчăк Силемпи: «Çăва патне, типĕ шар / тупать Туйсар енкепи».* [Ăнлантарни: *Екенпи, тепĕр тĕслĕ юнкăлти тесе çынна çăмăл енне кăтартасшăн калаççĕ*] [Шупуççынни Н. Еркĕн // Сунтал. 1927. № 2. С. 11].

**ЕР** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Карчăк Ваньккӑна калать: «Эсир кăçта каятăр, салтака каятăр-им – пурте салтакла тумланнă, ерсемпе, пурте лашапа?» – тет* [Вăтăр пĕр ывăл // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 224].

**ЕШĔРЛĔХ** хунав [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

## Ĕ

**ĔМĔШЛЕ** шухăшла, ĕмĕтлен [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 327].

**ĔНЕНӲЛĔХ** ĕненӳ, шану [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ĔНЕНӲЛЛĔ** ĕненчĕк. *Пĕр-ик минут вĕсем чĕнмерĕç, / анчах Онегин пычĕ те / каларĕ: «Эсĕр мана çырнă-ç, / ан тунăр. Вуласа пĕлтĕм / эп ĕненӳллĕ чун чĕмне те, / таса юратăш сĕмлевне те…* [Пушкин А. Евгений Онегин / П. Хусанкай куçарнă // Илемлĕ литература. 1936. № 3. С. 37].

**ĔНĔРЛЕН** шăппăн кĕвĕлен. *Кив патефон сасси пек / ĕнĕрленет пĕр çемĕ* [Ирхи Г. Кивĕ сăн ӳкерчĕк // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 69].

**ĔНЧĔ-АХАХ** мерчен, ахах йышши капăрланмалли хатĕрсем. *Аттил Паннонире чухне хунсенчен хăраса ун патне Рим элчисем пыраççĕ. Патша вĕсене пуçне ылтăнпа кĕмĕлрен тунă, кĕмĕл-мерченсемпе те ĕнчĕ-ахахсемпе илемлетсе пĕтернĕ диадема тăхăнса кĕтсе илнĕ…* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 272].

**ĔРĔМ** йĕрке? *Туйăн хăйĕн ĕрĕмĕ пур* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 415].

**ĔРЧЕТӲ** выльăх-чĕрлĕх усрани [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ĔСКĔРĔН** пăрăн, йĕрĕн. *Анатри чăвашсам ĕскĕрнетчĕ пиртан, вăлсам вирьял теççĕ пире* [Михайлов С. [Авалхисем çинчен] // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 106, 428].

**ĔТЛЕН** тертлен [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436].

## И

**ИЛЕМĔШ**[1] сăнар. *Хресчен писателĕсене хапăл туса йышăнмалла, вĕсен пирĕн пулăшупа усă курмалла. Вĕсен ӳссе пыракан речĕсене пролетари идеологин рельсĕсем çине лартасси – пирĕн задача пулать, анчах вĕсен пултарăвĕнчен (творчествинчен) илемĕшĕсене (образсене) тапратса кăларса*

*пĕтермелле мар, çав илемĕшсем хресчене çыпăçакан, ăна çавăракан кирлĕ япаласем пулаççĕ тет тăххăрмĕш пунктă* [Хумма Ç. Партин илемлĕ литературăри политики // Сунтал. 1925. № 7. С. 2].

**ИЛЕМĔШ²** эстетика. *Ку таранччен чăваш чĕлхинче илемĕш сăмах пулман, вăл илем япала ячĕ çумне сăмах тăвакан -мĕш аффикс хушăннипе пулнă. Н. И. Ашмарин словарĕнче (III кĕнеке) илем, илемлĕх сăмахсене "красота, краса" сăмахсемпе вырăсла куçарнă та скобкăра "одно из красивейших слов в чувашском языке" тесе палăртнă* [Сергеев В. Сăмах илемĕшĕ // Тăван Атăл. 2008. № 5. С. 116].

**ИЛĔХŸ** ӳсĕм [Кузнецов И. Чăваш халăхĕн ăслăхне тĕпчесе пăхни // Тăван Атăл. 1957. № 3. С. 95].

**ИЛĔШТЕР** ил, йышăн, хăвăнлат. *Кунта эпĕр хăйĕн савнине шур тутăрпа танлаштарса вăл сивĕннине тутăр хуралнипе пĕр туса хунине куратпăр. Ку манера эпĕ чăваш халăх юрри манерĕ тесе хурăттăмччĕ, анчах ун пек сăвăсем вырăс юрринче те çук мар… Çавăнпа вырăс юрринчен илĕштернĕ теме те пулать* [Ç. Х. Чăваш чĕрĕ чĕлхи // Сунтал. 1927. № 7–8. С. 31].

**ИМИН** çапла пултăр. *Эй, Хăвăнни ту, чи Аслă Тӳре!.. / (халь те / ялан / ĕмĕр-ĕмĕр)… – / имин!..* [Сатур С. Иисус // Сăмах. Шупашкар, 2001. С. 23].

**ИМ-ЯМЛА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Чулхула емелккене им-ямлатăр / СССР авто çине хăвăрт лартăр* [Янкас Н. Виççĕмĕш çул маршĕ // Сунтал. 1931. № 1. С. 8].

**ИНКЕКЛĔХ** инкек, синкер. *Инкеклĕхĕн тӳр йăмăкĕ – / сĕм шахтăри мăн шанчăк-ĕмĕт / хавхалантартăрах сире вăл* [Пушкин А. Çĕпĕре // Сунтал. 1937. № 1. С. 9].

**ИНКЕК-НУША** шар, инкек, нуша. *…йыснăшĕ Туккаш епле пуйса кайнине чистах ыйтса пĕлет, аккăшĕ çумĕнчи*

*пӳлĕмре вăрттăн чистах итлет, Туккаш хăй инкекненушине кӳлле путарнине те пĕлет* [Туккашпа инкек // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 21].

**ИРÇЕ-ÇАРМĂС** Атăлçи финн-угрĕсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ИСМА** пиччĕн енчен те, тӳнтер енчен те пĕр пек çĕвĕ [Жачева Е. Чăваш тĕрри // Ялав. 1990. № 5. С. 32].

**ИСӲ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Исӳ касмасăр кĕпе тăхăнмаççĕ* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 195].

**ИÇМУЛ** пуянлăх. *Иртсе çӳренĕ чух кĕрсе çӳрĕр, / иçмул пулмасассăн та чунсем пур* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 146]. *Иçмулăм çук-çке, ни мулăм çук, / сиртен ытла савнă та тăванăм çук* [Çавăнтах. С. 168].

**ИШĔК** авалхи. *Ишĕк тусăм, тупата туршăн, / пит хăвăрт ватăлнă-çке эсĕ!* [Аристофан. Мул / куçаруçи паллă мар // Илемлĕ литература. 1936. № 3. С. 62].

**ИШЛĔК** ишĕлчĕк. *Ирхи апат хыççăн писательсен пленумĕн делегачĕсем – çĕр çын ытла – авалхи Двин хули ишлĕкне курма кайрăмăр* [Элкер Ç. Армени çĕрĕнче // Сунтал. 1940. № 1. С. 20].

## Й

**ЙĂЛА-МАСА** йăла-йĕрке. *Хăш-пĕр çамрăк писательсем, пуринчен ытла поэтсем, хăсен сăввисене «националнăй колорит» пултăр тесе е «чăн-чăн чăвашла» тухтăр тесе чăвашсен кивĕ йăли-масисене, çынсен тахçан пулнă кăмăлĕсене илемлетсе сăвăлама тăрăшаççĕ* [Алка А. Çамрăк писательсен пултарулăхĕ // Ялав. 1947. №. 9. С. 28].

**ЙĂЛА-ХАЛАМ** йăла-йĕрке. *Пирĕн кĕнеке магазинĕсен çӳлĕкĕсем çинче Петĕр Хусанкайăн кĕнеки курăнни – савăнтаракан япала. Вулаканшăн тепĕр сарлака чӳрече уçăлчĕ. Çав чӳречерен тĕрлĕ кăмăл-шухăшлă, тĕрлĕ йăла-халамлă пысăк тĕнче хăйĕн историллĕ иртнĕ кун-çулĕпе те, хальхи пуян ĕçĕ-хĕлĕпе те уççăн курăнса кайрĕ* [Пономаренко И. Туслăхăн поэзири пуç кăшăлĕ // Ялав. 1969. № 4. С. 30].

**ЙĂЛМАК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Йăла вăл йăлмак пек* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 413].

**ЙĂЛТТАМ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Кушака пулăççем хăвалаççĕ-хăвалаççĕ, анчах йăлттамскерсене тытма çук* [Кĕмĕл çĕрĕ // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 311].

**ЙĂЛХА** йăллантар. *Икĕ ăвăс харăс аврĕç – / ик пĕçрен вĕрен йăлхарĕç. / Пиçĕ йывăç ваш çĕкленчĕ – / Урасмет çапла тĕпленчĕ* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ЙĂНТĂР-ЙĂНТĂР** кĕсле кĕввине евĕрлекен сăмах. *Мăн Орининăн вăйăçне / ылтăн патăм – илмерĕ, / йăнтăр-йăнтăр кĕслине / пĕр укçасăр пиллерĕ* [Шавли С. Пуçламăш çавра // Тăван Атăл. 1975. № 10. С. 35].

**ЙĂПĂЛТĂШ** йăпăлкка, чее [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЙĂПĂРККА** пурçăн [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**ЙĂПĂС-ЙĂПĂС** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах, юр йĕпелĕхĕ? *Йăпăс-йăпăс шурă юрĕ / шур çитти вăл витрĕ* [Сĕтнер. Хĕрлĕ çил арманĕ // Сунтал. 1929. № 1. С. 18].

**ЙĂХĂЛ-ЙĂХĂЛ** шапăлтату. *Пĕр юлташĕпе пĕрле Арçен хăйсем ĕçлекен редакцие хăпаратчĕ. Вĕсене хирĕç леш ташăçă пике, ун хĕрĕ пулнăскер, чавкăнса пыратчĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне шавлăн саламларĕç, чарăнса тăчĕç. Пуçланчĕ кăлтăр-кăлтăр та йăхăл-йăхăл. Пикен чĕлхи те вылять, ӳтпĕвĕ те авăнать* [Лисина Е. Рия // Çăкăр чĕлли. Шупашкар, 1994. С. 120].

**ЙĂХ-ШЫВ** йăх, несĕл. *Вăл [Аккас] тăван тавралăхра пурăнма çуккине курса хăйĕн арăмĕпе тата ачисемпе ашшĕ килне пăрахса хăварсах Сăкăт ушкăнне тарса кайнă. Мĕн тăвас тен, пыра киле çĕнĕ кил-йыш тунă. Çавăнпа юпленсе пырать те ĕнтĕ Юман Петровичăн йăх-шывĕ* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 32].

**ЙĔЙĔН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Тул çутăлсан лашине çавăтса таврăнчĕ, пиччĕшĕсем йĕйĕн кустарса таврăнчĕç тет* [Вăтăр пĕр ывăл // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 304, 384].

**ЙĔНЧĔЛ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Йĕп-йĕпен йĕрет Сӳрет Сӳрет йĕп вăрри пек чĕтренсе йĕпкĕнет йĕпхӳ питкуçа йĕплет шăмă туртса ыратать куç йĕнчĕлет çерем йĕлпĕрет…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 34].

**ЙĔПЕТӲ** нӳрлентерӳ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЙĔПКĔН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. › **йĕнчĕл.**

**ЙĔПЧĔК** йĕплĕ пулă, лат. Gasterosteidae. *«Юлашки вăхăтра икĕ çĕнĕ сăмах илтрĕм, – терĕ Иван Андреевич. – Пĕри – йĕпчĕк. Пулă ячĕ иккен вăл. Вырăсла колюшка тени пулать. Тепри – хыр кук. Ку – çĕнĕ кайăк ячĕ…»* [Семенов Ю. Тĕпчевçĕ çулĕ // Тăван Атăл. 1978. № 5. С. 80].

**ЙЫВĂÇ-ТĔМ** тĕмĕ йышши лутра йывăçсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЙЫХĂРĂН** йыхăр сăмахăн таврăну кӳлепи. *Вĕсем пĕри Андрей ятлă пулнă; Иисуса чи малтан вăл ернĕрен ăна малтан йыхăрăнни тесе калаççĕ* [Паллă мар çăлкуç].

## К

**КАВĂ** кофе. *8 сехет. «Кавă илме!» – илтĕнет кухньăра ĕçлекен пырса кăшкăрни. Санитарсем пысăк лотокпа пуçлаççĕ кавă çĕклеме. Кашни çынна – пĕрер стакан кавă. Ăна миска тĕпне ярса параççĕ. Кавă ĕçни çиес килнине вăйлатать* [Элкер С. Тĕнче вăрçи кунĕсем // Трактор. Шупашкар, 1933. 9-мĕш кĕнеке. С. 158]. ≤ венг. kávé.

**КАГАНЛĂХ** каганат [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КАЙ ЕНÇĔ** Анăç çĕр-шывĕсен йăли-йĕркине тĕпе хуракан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КАК** улма-çырларан пĕçернĕ апат [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**КАКАР** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ирт çулăм, карт çулăм, / какар питлĕ-çунатлă, / шарттин-шарттин шур курак. / Шур кураксем шур урлă, / пирн тăвансем уй урлă* [«Ирт çулăм, карт çулăм…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 258–259].

**КАККĂР** кĕвĕ каламалли темĕнле хатĕр. *Кĕтӳç вун ик шăппăрлă каккăра калама тытăнчĕ* [Вун ик шăппăрлă каккăр // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 335].

**КАККУЙ** мĕн сăлтава пула. *Кĕсресем хĕртен пĕр чикĕм улăм ыйтнă. Хĕр каланă: «Каккуй сире прахса памалли», – тенĕ те утнă* [Юратман хĕрĕпе амăшĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 319]. < выр. какой.

**КАКШĂ-МĂКШĂЛАТ** вырăсла *как же* текелесе тăр. *Капăр Таттян (асăрхануллă, Маргаритăна): «Итле-ха, эс тем ытла пит тăнлă калаçатăн çак?!.» Хамăр Толя (мăнаçланса): «А как-шă!» Капăр Таттян: «Мĕн какшă-мăкшăлатса тăран?»* [Чиндыков Б. Масаркасси ясарĕн çитмĕл çиччĕмĕш матки // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 283].

**КАМĂР** ятарласа хатĕрленĕ юсман чусти. *Аша йытти, таса тукмакăм, / карта пăтти ятна пĕçертĕм, / çĕн камăртан юсман пĕçертĕм…* [Ахун В. Эп – чӳклевçĕ чăваш // Ялав. 1991. № 9. С. 19].

**КАМЛАВ** юмăç пăхни, пулассине палăртни. *Самсăс мĕскер каланине ăнланчĕ пулсан та Темлейĕн ун камлавĕпе килĕшес килмерĕ* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 193]. < выр. камлание.

**КАН** кану? *Атьăр туя, ачасем: / ура канне кӳрĕпĕр, / алă канне кӳрĕпĕр, / ĕçĕпĕр те çийĕпĕр, / выльăпăр та кулăпăр, / юрлăпăр та ташлăпăр* [Туй халăхĕ хĕр илме каяс умĕн юрлакан юрăсем. 5 // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 7].

**КАНАЛЛĔ** путсĕр. *Ах, каналлĕ кăвак лаши / çак ял витĕр çул турĕ…* [Çăварни юррисем. 3105 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 401]. < выр. каналья < фр. canaille < ит. canaglia йытă кĕтĕвĕ; путсĕр таврашĕ.

**КАНАШЛĂХ** канашласа пĕр чĕлхе тупма тăрăшни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КАНИССАР** пĕчĕк вăрман. *Эс-им, эс-им, пулхăрăн арĕ, / юрататтăн Тăван Атăла? / Атăл улăхпала каниссарăн / илемне çĕнĕлле асăнан* [Митта В. Сĕрĕмре // Ялав. 1988. № 10. С. 14].

**КАРТ** ватă ар çын, старик. *Çуллахи чӳклеме (măн чӳк) виçĕ, тăхăр, вун икĕ çултан пĕрре çаврăнса çитет. Ăна элменпе виçĕ эптер (хутлăха кĕрекен ытти аслă киремет ертӳçисем) тата çав тăрăхри кашни ялтан килнĕ măчавăрсем виçĕ картпа икĕ карчăк йĕркеленĕ* [Çуллахи чӳклеме // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 112]. ≤ тут. карт.

**КАСАККИ** ар çынсем тăхăнакан пĕрмечеллĕ сăхман. *Хура пустав касакки, лутра кунчаллă хром атă тăхăннă Кĕçтук капан пек тĕреклĕ Иван Яковлевич çумĕнче ытла çинçешке, çамрăк ача евĕр çеç курăнать* [Артемьев А. Пролог: «Тăвăл умĕн» повесть сыпăкĕ // Ялав. 1968. № 4. С. 10]. < выр. казакин < фр. casaquin.

**КАСМĂК** тĕрме [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505]. < выр. каземат.

**КАСНĂЛĂХ** вăрман каснипе пулăннă уçланкă. *Каснăлăхра темле майпа / юлайнă сыханса пĕр чăрăш* [Николаев В. «Каснăлăхра темле майпа…» // Ялав. 1976. № 3. С. 23].

**КАСРИМУШКА, КОСТĂРМУШКĂ** хĕрарăмлăха сыхлакан пукане. *Вăйă пуçланиччен Касримушкăна тата ашшĕне суйлаççĕ* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 72].

**КАСУ** эреш. *Каскалакансем пура пураççĕ, / чăн ăстисем касу касаççĕ* [«Каскалакансем пура пураççĕ…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 413].

**КАÇЛУ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Шур саппуна çакас тетĕп, / Кунтикова каяс теп. / Кайнă куна асăнмалăх / каçлу сулă илес теп* [Каша хĕрĕ // Тăван Атăл. 1975. № 8. С. 62].

**КАТТА** калуш [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**КАЧА-МЕКЕКЕК** качака тавраше. *Хас! Тпруч! Кача-мекекек! / Çичĕ çул кĕтӳçре çӳрерĕм те / сысна пек çухраканни курмарăм, / качака пек макраканни курмарăм та / вăкăр пек мĕкрекенни курмарăм* [Кĕтӳ пăхакансен юррисем. 114 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 39].

**КАШКĂР ÇĂЛТĂР** Алтăр çăлтăр. *…Яртах çутатрĕ Кашкăр çăлтăр тĕксĕм тӳпене* [Ахун В. Эп – чӳклевçĕ чăваш // Ялав. 1991. № 9. С. 19].

**КĂКАК** кисĕп, çекĕл. *Сĕм вăрманта кăкаклăх йывăç çук. (Çӳç)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 215, 333].

**КĂКĂРСĂРЛĂХ** туберкулёз [Лява П. Кăкăрсăрлăхран (чаххуткăран) тӳрленесси // Сунтал. 1927. № 7–8. С. 29].

**КĂМĂЛЛАШ** хисепле. *Çав самантрах хĕсĕк, лутра алăкран виççĕмĕш кĕчĕ. / «Сирĕн марш – пирĕн марш. / Эп чăваш, илт, кăмăллаш. / Сирĕн марш çапла янрать чăвашла…»* [Маяковский В. Хусан / В. Услипе И. Алтынбаш куçарнă // Маяковский В. Сăвăсем. Шупашкар, 1941. С. 78–79].

**КĂМĂЛ-ТУРТĂМ** ĕçлес хавха. *Çамрăксен пултарулăхĕнче лайăх калавсемпе сăвăсем пурри çинчен каларăмăр пулсан та асăнса хăвармаллах пулать, вĕсен пултарулăхĕнче хальлĕхе пуринчен ытла çитменлĕхсем нумайрах-ха. Вăл çитменлĕхсем пĕлӳлĕх сахаллинчен, сахалтарах вĕреннипе ĕçленинчен тата, тӳррĕн калас пулсан, çырас кăмăл-туртăм чунра вăйсăртараххинчен килеççĕ* [Алга А. Çамрăк писательсен пултарулăхĕ // Ялав. 1947. №. 9. С. 28].

**КĂП** *лăпкă* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 328].

**КĂРАЛЛАН** хĕç-пăшаллан. *Часах виç çĕр ытла юлан утçă мĕн килчĕ унпа кăралланса çула тухрĕ* [Юхма М. Чăваш хĕрĕ // Тăван Атăл. 1968. № 5. С. 46].

**КĂРАНСĂР** чикĕсĕр. *Вăрăм уй – кăрансăр вăрăм чăсăлса кайнăран каланă* [Вăрăм уй // Тавралăх халапĕсем. Шупашкар, 2013. С. 24, 362].

**КĂРИНК** пĕрхĕт йыхравне евĕрлекен сăмах. *Пирĕн атте пĕрхĕт аçи – «Кăринк! – тетчĕ, йыхăратчĕ, / çĕр пуççипе йыш пуçтарма / çуначĕпе ăшăтатчĕ* [Ахун В. «Пирĕн атте пĕрхĕт аçи…» // Ялав. 1979. № 8. С. 23].

**КĂРНАТИР** салтак [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436]. < выр. гренадёр.

**КĂСĂХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ача чухнех пысăк сăмси ӳсе киле унăн тата пысăкланнă. Куçĕ, ахаль те хĕсĕкскер, сăмси ытлашши пысăкран тата хĕсĕкрех, темĕнле сысна куçĕ пекрех курăна пуçланă. Çавăнпа куç хыçĕнче ăна тăшманĕсем ятран мар, сысна куç тенĕ. «Сăмсипе куç харшийĕ пур ĕнтĕ, хăрах куç харшийĕнчен пĕр мăшăр алса пулать, урăх унăн нимĕн те кăсăхмалли çук», – тенĕ вĕсем* [Краснов Г. Юрату калавĕ // Тăван Атăл. 1959. № 1. С. 8].

**КĂТАЙ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çав кĕмĕл старик шурă кăтай чул çине / çыру çырать ăмăрт кайăк тĕкĕпе, / çыру çырать ăмăрт кайăк юнĕпе* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 12].

**КĂТАРТКĂÇ** мĕне те пулин кăтартакан хатĕр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КĂТАТ** *лавкка пир-авăрĕ* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**КĂШКĂРУ** *лозунг. Суха пуçне плук хăвалама тытăннăранпа, çурла хăй вырăнне тырă вырмалли машшина пама пуçланăранпа, тырă акмалли машшин ĕçе кĕнĕренпе, авăн çапмалла тырă сăвăрмалли машшинсем чăваш ялне çитнĕренпе «уйран уй ана пултăр» тенĕ кăшкăру (лозунг) пĕтсе ларчĕ* [Ют. Шкул тавра / Ют // Сунтал. 1924. № 1. С. 3].

**КЕВТЕ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çивчĕ хĕçĕ вăнт! тăвать – / этем пуçĕ ывтăнать, / алă сăнни тăрăнать – / кевте витĕр витерет* [Тутарсем Пӳлере илни // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 224; Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 516].

**КЕМ** *сахал* [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 516].

**КЕППЕÇ** тӳпеттей. *Йăрма сăмалаланса кайнă тутар кеппеçне хыврĕ те – çулла вăл Якур мĕн ас тăвассах çавăнпа çӳрет – «ваттисем валли» тесе «контякне» кăштах çĕре*

*тăкрĕ…* [Садай В. Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр // Тăван Атăл. 1974. № 11. С. 47].

**КЕРВЕНККЕ** кервен; мăнă, пысăк. *Атăл тăрăх анать кервенкке шухă кимĕ…* [Юмарт Г. Разин чĕлĕмĕ // Тăван Атăл. 1981. № 7. С. 42].

**КЕРМЕНККЕ** пĕчĕк кермен [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КĔЛ** ялан. *Эрех ĕçсе çынна лайăх пулсан / кĕл ĕçĕтчĕç ăна пуянсем* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 92].

**КĔЛТĔРККЕ** имшеркке, начаркка [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 328].

**КĔЛТТĔМ-КĔЛТТĔМ** вак укçа. *…Чун туртнă хулана пырса эп кĕтĕм, / вăтаннă кĕлмĕç пек шыв хĕррипе. / Кĕсьемсенче юлманччĕ кĕлттĕм-кĕлттĕм / çӳревçĕ пурнăçĕ шĕкĕррипе…* [Энтип В. Чĕнӳ чанĕ // Ялав. 1988. № 9. С. 12].

**КĔМЕРККЕ** пĕчĕк купа? *Йăкăнатсен улăм витнĕ çурчĕ çинчен тепле хĕвелтен пытанса юлнă юр кĕмеркки ирĕлнипе тумла юхать* [Яковлев Ç. Çутталла // Сунтал. 1928. № 1. С. 9].

**КĔНТЕШ** кӳлеш, кĕвĕç. *Эс те мана палларăн пуль терĕм: мана курсан, юпа пек хытса тăтăн, хут пек шуралса кайрăн… Эпĕ сăмах чĕнме мар, сан çине пуç çĕклесе пăхма та хăяймарăм… Çапах кĕнтешекен упăшкам çавна темле сиснĕ, сан пирки ăна ман ама çури систернĕ пулĕ терĕм вара* [Артемьев А. Тăвăл умĕн // Тăван Атăл. 1974. № 7. С. 14].

**КĔНЧЕЛЕРÇĔ** канцелярист [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КĔР КУННЕЛЕН** кĕрхи сăнлан, конт. ватăл. *çамрăк çепĕç ӳт-пӳ кĕр куннеленсе пырать* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 37].

**КĔРЕСНУЙ** хыçлă çуна [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393]. < выр. кресловый.

**КĔРЛЕВ-СĔРЛЕВ** шăв-шав. *Çурхи хаваслă кун кĕрлев-сĕрлевĕ / ян янраса тăрать çеç хăлхара* [Лукин А. Савни патне // Тăван Атăл. 1961. № 1. С. 27].

**КĔТЕЛЛЕ** кивçенле. *Ял хуçайстви панкки хресчене çителĕхлех кивçенле (кĕтелле) çитерейместь* [Автономиллĕ Чăваш облаçĕнчи советсен пиллĕкмĕш съесчĕ // Сунтал. 1924. № 6. С. 36].

**КИВЕЛККĂ** пурнăçран юлнă çын. *«Сентименталист, кивелккă! – кăшкăрчĕ те кăшкăрчĕ хĕр. – XVIII ĕмĕр! Чухăн лизăсене савас пулать санăн, неччу XX ĕмĕр хĕрĕсем хыççăн чупма!..»* [Чиндыков Б. Тухса кайиччен // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 103].

**КИЛ-ВУТ** кил-йыш. *Ялăм-йышăм ял тулли, / килĕм-вутăм кил тулли* [Филиппов Г. Чухăн çын пурăнăçĕ – хирти мулкач пурăнăçĕ // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 117, 432].

**КИМ** йӳнĕ [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436].

**КИПЕН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Пĕвер кĕпине çисен ачи кипен пулать* [Сăнавсемпе ĕненӳсем. Тĕлĕксем. Шупашкар, 2009. С. 77].

**КИРЛЕ** туя. *Малтан 50–80 см тăршшĕ туясем (кирлесем) хатĕрлеççĕ (пĕр вĕçне чутласа шĕвĕртмелле)* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 76].

**КИРПĔЧЛĔХ** кирпĕчрен тунă кил-çурт, хуралтă. *Шăхаль урам кирпĕчлĕх, сакăр пар çавăртăм çунана, / вун ик кирпĕч ваттартăм* [Улах юррисемпе такмаксем. 1986 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 263].

**КИРТĔК** шалча, шăчă [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 330].

**КИТАЙ** Китайра туса кăларнă пурçăн. *Кăвакарса килекен кăвак пĕлĕт / кăвак китай карса та чарăнас çук* [«Шуралса та килет те шурă шурăмпуç…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 91].

**КИТАЙЛАН** Китай культурине йышăн. *Халь ĕнтĕ вăл [Метте] патша керменĕнче китайланнă юэчше пикине ыталаса киленет, мĕскĕн Телейкке çинчен те тертпе асапра пурăнакан хăй халăхĕ çинчен те пĕтĕмпех-пĕтĕмпех манса кайнă* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 62].

**КНОПКĂЛА** кнопкăпа хĕстерсе хур [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КОСТĂРМУШКĂ** › **Касримушка.**

**КРЕВЕНКĔ** тура [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436]. ≤ выр. гребёнка.

**КРИМККĂ** кăкшăм [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436]. ≤ выр. крынка.

**КУЛККА** ката [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**КУЛЬКИ** кăвакарчăн. *Калаймасăрах хĕр юлчĕ, – / кунĕн-çĕрĕн хӳхлет. / Тăлăх кульки пек кăрлать вăл, / çын ăна илтмест…* [Шевченко Т. Тополь // Сунтал. 1939. № 3. С. 14].

**КУЛЯК** чухăн. *Каснан укçи – кулякпа, кулякпа…* [«Каснан укçи – кулякпа…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 161]. ≤ выр. голяк.

**КУН ТУХĂÇ** хĕвел тухăç. *Пĕррехинче çак çĕре кун тухăç енчен çитмĕл те çичĕ ту урлă, çитмĕл те çичĕ шыв урлă çичĕ пуçлă аçтаха, вут пĕрĕхен çĕлен килчĕ тет* [Улăп паттăр çичĕ пуçлă аçтахапа çапăçать // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 63].

**КУНА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Аслă çулпа килет аслă апус, / улма чăпар учĕ – çул пуçĕ, / йĕпкĕн хура учĕ – çул куни, / тимĕр кăвак учĕ – кил куни* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 15].

**КУНКĂШ** хĕвелпе телей кайăкĕ. *Кункăш кайăк – шурă кайăк / ларчĕ те минтер çине / çупăрларĕ юрă майăн, / вăштăр сарчĕ çунатне* [Ахун В. «Кункăш кайăк – шурă кайăк…» // Ялав. 1986. № 6. С. 8].

**КУПĂС-ТĂМРА** кĕвĕ каламалли халăх инструменчĕсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КУРĂК-ЧЕЧЕК** ӳсен-тăран. *Аслă çеçен хирте ялан шывлă кӳлĕсем тата юхан шывлă çырмасем пулман: чĕр чунсем тата курăк-чечексемпе йывăçсем çумăр шывĕпех пурăннă* [Шаланкăпа (текерлĕкпе) ула курак // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 72]. *«Тупа тăватпăр!» – терĕç пĕр харăссăн виç çĕр вунни ама çын. Вĕсен сасси курăк-чечек çийĕн пĕтĕм çеçен хире саланчĕ* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 70].

**КУÇ ĂВĂ** самантрах. *Ашшĕ кĕçĕн ывăлне пит хĕрхенчĕ тит те каларĕ тит: «Улăм, ан кулян, куçна макăрса ан йĕпет, на сана пăхăр çĕрĕ, ăна ан çухат, çак çĕрĕ витĕр шăхăрсан мĕн кирли сана веçех куç ăвăнче пулса тăрĕ, халĕ киле каях», – терĕ тит те шăтăка кĕрсе карĕ тит* [Кукша Йăван // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 204].

**КУТĂН-ПУÇĂНЛĂХ** пăтрашулăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**КУТИ-МАТИ** ĕç тума пĕлмен çын. *Акă вăл [Елмеш] тытăнчĕ якрак паккуса. Пĕр сăмах та чĕнмерĕ, анчах вăл пуçласса кĕтсе тăракансем пурте сисрĕç хăйсен айăпне, васкаса ӳке пуçларĕç хăйсен паккусне. Ăна кути-мати вырăнне хуракансем – вăтанчĕç* [Еллиев Е. Çаран çинче // Трактор. 1933. 5-мĕш кĕнеке. С. 12].

**КУШТАН-КАХАЛ** ӳркев ҫынсем. *Йăпăх-япăх – ямшăкра, куштан-кахал – кантурта* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 76].

**КӲЛЕВЛĔХ** ут таврашĕ [Чернов В. Кӳлевлĕх // Ялав. 1988. № 11. С. 31].

**КӲЛЛĔХ** нумай кӳлĕллĕ вырăн, конт. шывлă вырăн. *Варри вутлăх, йĕри-тавра кӳллĕх. (Сăмавар)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 254].

**КӲМĔЛТĔРĔК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Сахьян такмак – ҫумĕнче, / кӳмĕлтĕрĕк – тӳшĕнче, / хăмҫи – ҫумĕнче, кутлăхĕ – ҫийĕнче* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 20].

**КӲНЕ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ҫил кăна тăхта пĕлмесĕр / халь улать кунта кӳнесĕр. / Хурлăхлă ун сасси, юнавлă, / хăрхăм хӳхĕ пек юнхавлă* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**КӲПТЕМЕ** тулли [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 328].

**КӲРНЕК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Улăм ҫӳппи ҫĕр кӳрнек / улăм ҫӳппи вĕҫсессĕн / шӳтте кайĕ ҫĕр кӳрнек.* [«Улăм ҫӳппи ҫĕр кӳрнек…» // Ĕҫпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 437].

## Л

**ЛАКĂМЛА** лакăм ту [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЛАКҪĂМ** лупашка [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436].

**ЛАМТАЙ** вăл е ку ăру ҫынни; тăван [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ЛАПАНКА** айлăм вырăн [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 517].

**ЛĂМЛАН** нӳрлен, йĕпен. *И каç пулать, каç пулать, / курăк çийĕ лăмланать* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 196].

**ЛЕКУШ, ЛАКУШ** ярăнмалли вырăн. *Çăварни лекуш йăмраллă та, / йăмра хошшипе отма çол та…* [«Çăварни, çăварни терĕмĕр те…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 371, 517].

**ЛЕНКИ** юрăра усă куракан пĕлтерĕшсĕр сăмах. *Ленки-ленки йыт вĕрет, / пирĕн савнисем килеççĕ пуль / çут калушне çутатса. / Кармунь каласа килеççĕ пуль* [Улах юррисемпе такмаксем. 2309 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 288].

**ЛИКВИДАЦИЛЕ** тĕп ту, пĕтер. *ЧПП ассоциацине ликвидацилесси çинчен* [Трактор. 1932. № 3. С. 156].

**ЛИС** шпиц йышши пĕчĕк йытă ăрачĕ. *Хасăр çак тинĕс урлă каçаççĕ. Хăрхăмĕ юрлать: «Вĕр-вĕр, лиссăм, вĕр, лиссăм, / какала, чăххăм, какала, / авăт, автан, авăт». Вара автанĕ авăтса, чăххи какаласа, йăтти вĕрсе тинĕс урлă каçса карĕçĕ* [Пикепе хăрхăм // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 325]. < выр. лиса.

**ЛУТĂРЧАК** лутра. *Тупиччен siksе тухса харпăр хăйне çăлма пулать. Апла пултăр тесен çак сăмахсене каламалла: «Лутăрчак, лутăрчак, / лутăр-латăр лутăрчак, / катка çӳллĕш анчах пул!». Куна лутăрчак туни теççĕ. Лутăрчак – лутра пул тенине пĕлтерет имĕш* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 34].

**ЛУТКАЛА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çухалатса тум тытма, хăймалатса мул тытма, чĕреслетсе çу тытма, лутканаса пыл тытма парăсăнччĕ* [Калăм кĕллисем. 259 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 89].

**ЛӲХЕТ** антăхса ĕç. *Вар тĕпĕнчен сирпĕнекен сивĕ шыва ĕçсе тăранаймасла лӳхетпĕр, ăшсене кантаратпăр, вара вăрман хĕррине тухса лартăмăр* [Инкепулек вăрманĕ // Тавралăх халапĕсем. Шупашкар, 2013. С. 56].

**ЛЯХАХ** тимлеме ыйтса калакан сас-чĕвĕ. *Тепĕр каç полчĕ те, опана хорал тиврĕ. Çав чавса тăшшĕ старик каллех килчĕ те сăрана ĕçме поçларĕ. Çак опа: «Ляхах! – тет. – Ма ĕçен сăрине?» – тет* [Кукша тата упапа шуйттан ачи // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 183]. › **аллях.**

## М

**МАЛАЛЛĂХ** малашлăх, пуласлăх. *Çутат, хĕвелĕмĕр, ĕçпе кĕрешӳ урлă / эпир çитсе курас малаллăха!* [Алка А. Кăрлачăн 1-мĕшĕ, 1937 çул // Сунтал. 1937. № 1. С. 1].

**МАЛАН** ӳс? *Хĕвел хĕрелет, пит чиперленет, ыраш маланать* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 24].

**МАМУН** çын ятĕнчен [Ашмарин Н. И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 1935. Т. 8. С. 188] пулăннă хурлав пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Эттемен Энтрине çынсем мамунрах тенине кунчченех илтнĕччĕ-ха Куçма* [Садай В. Лайăх çын Чĕмпĕрте те нумай // Тăван Атăл. 1980. № 6. С. 50].

**МАНКА-СУРЧĂК** сĕлеке, манка. *Кайран этем малтанхи пек илемлĕ пулайман. Манки-сурчăкĕ тухса пĕтсен вилмелле пулнă* [Этем мĕншĕн сурчăк-сĕлекеллĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 76].

**МАÇТĂРЛĂХ** ăсталăх. *Съесра вулакансен мĕльюнлă массисен представителĕсем пулчĕç. Вĕсем хăйсен писателĕсенчен тата та çӳлĕ пахалăхлă чăн-чăнах хăйĕн ятне тивĕç маçтăрлăхлă совет литературин произведенисем ыйтаççĕ* [Пĕтĕм Союзри совет писателĕсен пĕрремĕш съезчĕ // Трактор. 1934. 10-мĕш кĕнеке. С. 6].

**МАТКĂЧ** патша. *Чи малтан икĕ маткăч (патша) суйлаççĕ* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 81].

**МĂЛ** вĕтĕ пулă. *Кăвакарчăн кўлĕ çине çитсе ўкрĕ те сĕлĕ мăлĕ пулса кайрĕ (мăл вăл вĕтçеççĕ пулă, сĕлĕ пĕрчи пек çеç)* [Вун икĕ çула кĕрĕшнĕ тарçă // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 371]. < выр. малёк?

**МĂН КĂМĂЛЛĂЛАНУ** чаплăлăхне мала хуни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**МĂНАÇСĂРЛĂХ** вăйсăрлăх [Ленин çинчен // Ялав. 1950. № 1. С. 1].

**МĂШКĂЛЛАНУ** мăшкăл пулнине чăтса ирттерни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**МЕТЕК** икĕ кустăрмаллă пĕчĕк урапа. *Вăхăт пĕлес тенĕн [хĕрарăм] хĕвел çинелле пăхса илчĕ те урамалла утса каясшăн пулчĕ, анчах сасартăк хăй еннелле метекпе темĕскер туртса килекен карчăкпа старике курса вырăнĕнчех хытса тăчĕ* [Юхма М. Çут тĕнче // Тăван Атăл. 1981. № 6. С. 34].

**МЕТĔР** çи, апатлан [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436].

**МĔРЧЕ** кăмака мăрйи [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 517].

**МИКЕТ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Йăлт микетрĕ вăрçăхарçă* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**МИНА-СНАРЯД** тупăран пемелли çар хатĕрĕсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**МИССИОНЕРЛĂХ** тĕне сарас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçхĕл [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**МИÇЕНЛĔХ** миçен пулни [Кузнецов И. Чăваш халăхĕн ăслăхне тĕпчесе пăхни // Тăван Атăл. 1957. № 3. С. 96].

**МОНОЛОГЛАН** хăвна кăна калаçтар. *Кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте тем те пĕр лăпăртатса çўреме тытăнаççĕ вара çав профессор текенсем. Монологланса каяççĕ. Ыттисене итлеме*

*пăрахаççĕ. Пĕр май хăйсем кăна сӳпĕлтетесшĕн* [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 162].

**МОЩИЙ, МОЩАЙ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Ай, мощий, ай, мощай! / Ытла шăрăх полсассăн / кĕпĕне ху та / ут! ут! ут!* [Чăпта çапакансен юррисем. 87 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 34]. < выр.

**МЫСКАРАЛАН** çын çинче аташ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

## Н

**НĂХРА** паллă мар музыка инструменчĕ. *Нăхра кăшкăртать, параппан сасси хитре кĕвĕ пулса тавралăха сарăлать* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 68].

**НĂХТА-ЙĔВЕН** лаша кӳлмелли йĕвен йышши хатĕрсем. *Выртмашкăн вырăн хатĕр – симĕс курăк, / пуçелĕк те çемçе – нăхта-йĕвен* [Шавли С. Хăлат Эрхип Иванĕ // Ялав. 1970. № 9. С. 14].

**НЕПĔССĔР-ĔМĔТСĔР** путсĕр. *Ĕлĕк-авал пĕр ялта икĕ пуян пурăннă тет. Иккĕшĕ те çав тери непĕссĕр-ĕмĕтсĕр пулнă тет* [Ĕмĕтсĕр пуян // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 71].

**НĔКĔТ** шăпăр евĕр музыка хатĕрĕ [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 110].

**НĔРТЕС** çăткăн, тăранайми. *Ĕлĕк-авал хаяр Владимир князь ĕмĕрĕнче Хырлăх ялĕнче Макар ятлă акăш-макăш нĕртес пуп пурăннă тет* [Пуппа кĕтӳçĕ // Илемлĕ литература. 1941. № 7. С. 95]. = лит. нĕртте, нĕрттемес.

**НИÇТАСĂРЛĂХ** нихăш вырăнта та пулманни, çуклăх [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 162].

**НУСЛĂ** тутлă. *Эсĕ тасатнă шыв тутлă, эсĕ ӳстернĕ çимĕç нуслă…* [Хĕвеле чĕнсе каланисем. 148 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 43].

**НУХАЛЯ** саламат. *Тепри: Ну-ка, тенкел çине вырт-ха, / шăлпа чĕлхӳне сырт-ха. / (Саламатпа (нухаляпа) çаптарать)* [Яркуни К. Палта чĕрĕлни // Сунтал. 1925. № 7. С. 8].

**НӲНӲКЕ** лăймакаллă. *Пăхĕ малтан шупка, нӳнӳке (лăймакаллă) тухать, унтан вар витти ерет* [Выльăх-чĕрлĕх чирлесен епле имлемелли çинчен. Хусан, 1910. С. 30].

**-НЯК** -им. *Антун çиет-çиет те тăранас чухне калать: «Хăлха илтми пулчĕ-няк, карчăк?» тет* [Антун чеелĕхĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 299].

## О

**ОРĂШКА** аркат. *Етрине холи тăрăх орăшкаса çӳранă чох сасă килчĕ Пăкача патне патша патĕнчен: Михилсон çарă поç она тытма янă* [Михайлов С. [Пăкача çинчен] // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 105, 428].

**ОРИЕНТАЦИЛЕ** тĕллесе яр. *Июнĕн 30-мĕшĕнче 1 сехет те 35 минутра Çĕр çине анма «Союз-11» карапа ориентацилесессĕн тормоз двигателĕн установкине ĕçе янă, вăл палăртса хунă вăхăт хушши ĕçленĕ* [Паттăрсен ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕр халăх асĕнче пулĕç // Ялав. 1971. № 7. С. 2 (хуплашка)].

## П

**ПАЙЛĂХ** хутлăх, тăрăх, ен. *Хунсен патшалăхĕ икĕ пайран тăнă: Анăçри пайлăх тата Тухăçри пайлăх. Тухăçри – Мал енчи пайлăх, вăл асли. Анăçри – Кай енчи пайлăх, кĕçĕнни* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 83].

**ПАКЛАВА** тĕрĕ тĕсĕ. *Паклава çĕвĕ икĕ еннелле пулса пырать, малтан сылтăмалла, кайран сулахаялла тĕрлетпĕр* [Жачева Е. Чăваш тĕрри // Ялав. 1990. № 10. С. 34].

**ПАЛАКĂР** чăм, кăкшăм. *Кушакпа хăймалла (палакăрла, чŷлмекле)* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 15]. < выр. балакирь.

**ПАЛĂРТĂМ** ăнлантарса пани, уçăмлатса-палăртса хăварни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПАЛУШНИК** пулăшуçă. *Сакăр вун салтак, ик секлеттер, пĕр палушник. (Тĕренче)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 236]. < выр. помощник.

**ПАПУЙ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *«Эх, салтаксем, аванах ачисем, / мĕншĕн питĕр-куçăр кăн-кăвак?» / – «Ир те, каç та папуй çинĕрен»* [«Эй, салтаксем, аванах ачисем…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 144].

**ПАРАМАТ** пысăк вăлта [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505]. ≤ выр. перемёт.

**ПАРĂНАС МАРЛĂХ** ирĕклĕ пулассишĕн кĕрешни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПАРУ** налук. *Саманисем йывăр, пару хаклă, / епле урттрем-ши ĕмĕре?* [«Атăлсем тăрă, шывĕ сулхăн…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 182].

**ПАТТИС** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Шурă паттис туттăрĕ / манăн пуçа кĕрес çук, / кĕрсессĕн те çыхас çук*

[Улах юррисемпе такмаксем. 1866 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 255]. < выр.

**ПАТЬЯНА** сарлака та лутра йывăç витре. *Тарасапа ăсмалла, ушачĕпе тултармалла, патьянапа ĕçмелле* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 31]. < выр. бадья.

**ПАХЧА КĔПÇИ** кăшкар ути. *Пахча кĕпçи (щавель) сĕтекĕ те усăллă* [Хура тут – çур кунне палли // Ялав. 1988. № 5. С. 32].

**ПАШЛĂК** пуçа тăхăнмалли хатĕр. *Мăн акай пашлăкне вуннăн çĕклеççĕ, мăн пичи пашлăкне пиллĕкĕн çĕклеççĕ. (Хушпупа çĕлĕк тăхăнни)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 281]. ≤ тут. башлык.

**ПĂЙĂМ-ПĂЙĂМ** пралукран авса тунă хăрах чĕлĕхлĕ ансат музыка инструменчĕ. *Çав хушăра вăл [Тимĕр] кĕсйинчен пăйăм-пăйăм кăларать те хĕтĕрĕнсе кайса тĕрлĕрен кĕвĕ кала-кала кăтартать. Ун пăйăм-пăйăмĕпе хам та калама пултарассăн туйăнать мана* [Илпек М. Тимĕр // Тăван Атăл. 1966. № 3. С. 41].

**ПĂЛАТ-ХУРÇĂ** тимĕр. *Юрать-ха пирĕн ачан / пăлат-хурçă хĕçĕ пулчĕ, хурçă хĕçĕ çивчĕ пулчĕ* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 22].

**ПĂЛТĂРЧАН** пăрчкан [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 517].

**ПĂЛХĂР** кивел, çĕтĕл [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393].

**ПĂРЛАНУ** пăрпа витĕнни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПĂРТАВУЙ** тĕксĕм хĕрлĕ [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 517].

**ПĂСКĂН** пăсăк. *Мĕн вăл пăскăн япала? / Мĕн вăл пăскăнчăк? – пĕлместĕп* [Федорова Л. «Мĕн вăл пăскăн япала?..» // Ялав. 2003. № 8. С. 43].

**ПĂТАЛАН** пăтапа çапăнса лар [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПĂХĂМ** сăнав. *Вара ăна [М. Горькие] Сормăври рабочисем патне революциллĕ чĕнÿсем çырса пичетленĕшĕн айăпласа арестлеççĕ те Арзамас хулине полици пăхăмне пурăнма ссылкăна яраççĕ* [Алексей Максимович Горький // Сунтал. 1936. № 7. С. 7].

**ПĂЧАЛЛĂ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Пăчаллă-пăчаллă шурă пусма, / метртан юлашки çакă анчах. / Пур тăвансем пурте мăшăрлă, / мăшăрсăр пурнаканни эп анчах* [Тăлăх арăмсен юррисем. 628 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 138].

**ПĂЧĂРИ** пăрăва шыв ĕçтернĕ чухне каламалли сăмах. *Пăчăри, пăчăри! / шыв сиппе пытăр-и! / Ĕç, хитре пăрушка, / сып, хура шурашка* [Тимахви А. Пăчăри, пăчăри // Тăван Атăл. 1983. № 6. С. 59].

**ПĂЧКĂ ПУЛĂ** çĕкĕ, çтерлĕк. *Çитет харамшăн пăчкă пулă / çатма çинче ăшаланни! / Тутанакан такам та пулĕ. / Çи эс, пулла тытаканни!* [Ухсай Я. Атăл // Ялав. 1957. № 11. С. 4].

**ПĂШАВАЙ** почта çÿретекен çын. *Çур çитсессĕн суха турăм, / хĕлле пăшавай çÿрерĕм* [Сутас пуль сана, хушка пуç… // Тăван Атăл. 1972. № 7. С. 32]. ≤ выр. почтовый.

**ПĂШАЛ-ТУПĂ** хĕç-пăшал. *Пăкач вăйлă вăрçнă тет, / анчах унăн çарĕнче / пăшал-тупă пулман тет, / сенĕксемпе вăрçнă тет* [Емел паттăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 43].

**ПĂШĂРХАНЧĂКЛĂ** пăшăрханчăк, хурланчăк [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПЕРЕВÇĔ** перекен çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПЕРĔШ** платникĕн ĕç хатĕрĕ. *Вăрман та сасси мĕн ус(ăл)лă, / вăрман та сасси мĕн ус(ă)лă? / Пулĕпе перĕш сассисем ай*

*усăллă* [Ака-суха тăвакан юррисем. 2 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 19].

**ПЕСВЕÇ** ялан [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437]. < выр.

**ПЕХАЛЯ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Путарнă чохне пĕр хора йăтă тохнă тет те пехаляпа вилнĕ çынна виççĕ çаппĕр тет* [Пуянпа хора йăтă // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 249].

**ПЕЧĔ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Çăка печĕ. Çав çăка кутне (хăвăлне) ĕлĕк нухрат тенкисем пăрахнă* [Çăка печĕ // Тавралăх халапĕсем. Шупашкар, 2013. С. 298].

**ПĔЛĔМЛĔХ** пĕлӳ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПĔЛĔН** пĕлĕш пул [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПĔЛĔНТЕШ** пĕлĕш. *Пĕлĕм çиме пĕлĕнтеш, хуплу çиме хурăнташ* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 52].

**ПĔР ĂНКАЙ** пĕр май, ялан [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393].

**ПĔР ХУТЛĂ** ухмах, айван. *Пĕр патшан виçĕ ывăл пулнă, кусенчен кĕçĕнни пĕр хутлăрах пулнă* [Пăхăр упа // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 375].

**ПĔРЛЕШĔН** пĕрле пул. *Атьăр тăрар, хĕç тытар, / пĕрлешĕнсе вăй пухар* [Атьăр тăрар, хĕç тытар! // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 39].

**ПĔРÇӲ** тына. *Ачасене тек йăпатать / çемçен аннем: / «Ан макăр, вăртрах килет / киле аçу. / Илсе килет / тăван киле Мавруша ятлă пĕр пĕрçӳ…»* [Еркай Н. Мавруша // Сунтал. 1935. № 10. С. 6].

**ПĔСĔРЛЕН** хăра [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ПĔÇ-КĂК** кӳлепепе ура пĕрлешнĕ тĕл. *Путек пек таса хĕр пике аллисене малалла тăсать, йăлăнать, пуç çапать, уйăх*

*тĕслĕ шĕлкĕм урисем, пĕç-кăк таврашĕнче пĕрлешсе, тачă çыпăçса, чĕр куççинчен аяларах тăсăлаççĕ…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 38].

**ПĔТӲ** талисман. *«Мĕн каласси пур, – ассăн сывласа илчĕ старик. – Пурри пур-ха та, тăванăм, анчах вĕсене чавакан çук. Вырăнĕсене никам та тĕплĕн пĕлмест, çитменнине кăчухне мулĕсем те пурте тухатнăскерсем пулмалла. Ăна тупса курас тесен алăра çавнашкал пĕтӳ кирлĕ, пĕтӳсĕр, ачамккă, нимĕн те тăваймастăн* [Чехов А. Телей / Х. Уяр куçарнă // Ялав. 1949. № 7. С. 27].

**ПИК** пӳ, князь [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 333]. *Юман Петровичăн чăн тымарĕ çав ялпа юна-шар, Хурачкаран. Вĕсен ăру пуçĕ Аккас ятлă чаплă чăваш, пик пулнă* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 15].

**ПИРШАВУЙ** сутăç [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437]. < выр.

**ПИШКИ** хăпарту икерчи. *Энтри эпир камсем иккенне каласа пачĕ. «Э-э… – тесе шалпар пусма кĕпе те тăвăр шалавар тăхăннă лутра старик вут патне арпус касса хучĕ, ӳплерен пишки илсе тухрĕ. – Сирĕн хырăм выçнă пулĕ-ха. Апла арпус мар, тын ытларах килĕшерех парать…»* [Уяр Х. Мухтав çут çăлтăрсене! // Ялав. 1949. № 10. С. 10]. ≤ выр. пышка.

**ПОВЕСТЬ-РОМАН** пысăк калăпăшлă литература хайлавĕсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПРОЕКЦИЛЕН** проекци тăвăн [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПУ** питĕ хытă, питĕ вăйлă. *Ак хай ама çури чире хывса пилешпе палан çирĕ тет те пу хăса пуçларĕ тет* [Ама çурипе ывăл çури // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 42, 386].

**ПУКАН-ДИВАН** килти лармалли хатĕрсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 342].

**ПУЛАТ[1]** сентре [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393]. < выр. полати.

**ПУЛАТ[2]** пӳлĕм [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393].

**ПУЛĂМЛĂХ** пулăнни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ПУЛĂНТАР** пултар [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ПУЛĂХЛАТ** пулăхлă тутар [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ПУЛĔ** платник ĕç хатĕрĕ. *Вăрман та сасси мĕн ус(ăл)лă, / вăрман та сасси мĕн ус(ăл)лă? / Пулĕпе перĕш сассисем ай усăллă* [Ака-суха тăвакан юррисем. 2 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 19].

**ПУР ÇĔРТЕЛĔХ** мĕн пур вырăнта пулни, пĕтĕмлĕх [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 162].

**ПУСАВ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Шур-шур лаша пусап. Шур çинчен илсе килнĕ Хĕрлĕ çыра çыхап. Çак Хĕрлĕ çыр, эс ĕçле, пусава шăвар!* [Çинçе вăхăтĕнчи учук кĕлли. 380 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 138].

**ПУСАХ** пусмăрçă. *…Пулнă тет Сарай пусахĕ – / пĕр чăваш, тĕнче пуçтахĕ. / Çил кăна тăхта пĕлмесĕр / халь улать кунта кӳнесĕр. / Хурлăхлă ун сасси, юнавлă, / хăрхăм хӳхĕ пек юнхавлă* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ПУСĂМЛАН** пусăмлă пулса тăр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ПУСКИЛ-ХУРĂНТАШ** кӳршĕ-аршă, тăван-хурăнташ. *Çавăн пек тăвăр пурăнăç килсен пускил-хурăнташа (кӳршĕсене)*

*чӗнмесӗр çук* [Поучения и речи сельским жителям при их работах. Казань, 1904. С. 15].

**ПУССАЧИ** пуса ачи? *Çӳллӗ ту çинче – ват юман, / юман та мар, мӗн те мар, / пуссачи, пуссачи, / тиек ачи пулайчӗ…* [«Çӳллӗ ту çинче – ват юман…» // Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 352].

**ПУÇ ПĂРАХ** пӗлтерӗшӗ паллă мар сăмах майлашăвӗ. *Кăçал илнӗ çӗнӗ çын / ӗçре маттур пулинччӗ… / Урпа вырма тытăнсан / пуç пăрахать теминччӗ* [«Çӗн çăпата, шур чăлха…» // Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 354–355].

**ПУÇ ЧИКМЕК** кутăн-пуçăн [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ПУÇАЛУ** правительство. *Пире ырăлăх тăвакан çӗнӗ пуçалу (правительство)* [Хыпар 1907. № 2. С. 3].

**ПУТАШ** пӗлтерӗшӗ паллă мар сăмах. *Мучӗшӗ кăна «Эй, путаш! Çав укçа сасси анчах, ăсу пулсан пурăнăн» терӗ тет* [Укçапа мӗн тăвас, ăсу пултăр // Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 174].

**ПУХЧА** тӳпеттей [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**ПУШ КУРĂКӖ** çул курăкӗ? *Пус кутӗнчи пуш курăкӗ / пустав тӗслӗ курăнать* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 116].

**ПУШ ХИРЛЕН** пуш хир пулса тăр. *Ӳкнишӗн çăлтăр – çăлтăрсем сӳнмеççӗ, / килнишӗн кӗр – пуш хирленмест çаран* [Яккусен П. «Ӳкнишӗн çăлтăр – çăлтăрсем сӳнмеççӗ…» // Яккусен П. Кӗмӗл кимӗ. Шупашкар, 2010. С. 231].

**ПӲЛЕК** пӗлтерӗшӗ паллă мар сăмах. *Кăткă пӳлек. Унта питӗ кăткă нумай* [Кăткă пӳлек // Тавралăх халапӗсем. Шупашкар, 2013. С. 60].

**ПӲЛМЕК** кĕҫĕн кĕрӳ туйра килтен киле ҫуренĕ чухне сăран сумкине пухнă апат-ҫимĕҫ. *Тепĕр ирхине ҫĕнĕ ҫынсем ҫывăрса тăричченех Карачăм икĕ ҫамрăкрах ачана утсем утлантарать те пӳлмек ҫиме тесе хăваласа кăларса ярать. (Пӳлмек тесе кĕҫĕн кĕрӳ туйра килтен киле ҫӳренĕ чух хăйĕн сăран сумки ăшне пухнă кулачăсене, чăкăтсене, хур тукмаккисене калаҫҫĕ). Ҫынсем пухăнса ҫитсен ҫав кулачăсене вакласа пыл сĕреҫҫĕ те пурне те валеҫсе параҫҫĕ* [Чăваш туй йĕркисемпе туй юррисем // Илемлĕ литература. 1941. № 4. С. 94].

**ПӲЛӲ** карта; йывăрлăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ПӲР-СУРАН** суран. *Иккĕмĕш хутĕнче хресчен улпута юмăҫ пулса улталама шут тытрĕ. Кĕленчене шыв, ал шăлли илсе улпут ялне кайрĕ. Ял тăрăх вăл «Камăн пӳр-суран тӳрлетмелли пур!» тесе кăшкăрса ута пуҫларĕ* [Иртенҫӳрен хресчене ан кӳрентер! // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 75].

**ПӲРТКӲ, ПӲРТӲКӲ** пӳрт умĕ**.** *Киле ҫитсен старик туйисене пӳртӳкӳ (пӳрт умĕ) ҫумне тăратрĕ те пӳрте кĕчĕ* [Туй-Тупала // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 189].

**ПӲШТӲШ** япала чиксе йăтмалли хатĕр [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 330].

## Р

**РАДИО-ТЕЛЕВИЗОР** электричество вăйĕпе ĕҫлекен информаци хатĕрĕсем. *Пĕлместĕр ҫав эсир, хальхи ҫамрăксем, пĕлместĕр… Радиви-телевизорне кĕрлеттеретĕр те – ҫитрĕ те сире… Эпир чух ял урамĕ шăпланма пĕлместчĕ, чĕресене*

*купăс-юрă сасси пăлхантарса тăратчĕ* [Акивер Х. Юр хĕвет // Тăван Атăл. 1975. № 9. С. 52].

**РАСМАН** пĕр-пĕр авалхи миф сăнарне пĕлтерекен сăмах [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 333].

**РАТЛАН** савăн [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437]. < выр. рад.

**РАТНЕ-ĂРУ** тăван-хурăнташ. *Пире вылямa-кулмашкăн / ратне-ăру пуçтартăр, / выльăр-кулăр теейрĕр* [«Ах, аттеçĕм-хуçаçăм…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 6].

**РАТНЕ-ЮЛТАШ** тус-тăван. *Эп вăрмана ма каяп / сарă çеçке полмасан? / Эп çакăнта ма килеп / ратне-йолташ полмасан?* [Улах юррисемпе такмаксем. 1736 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 245].

**РАШКИ** юрлă çумăр [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 518].

**РАШШИВА** парăслă пысăк кимĕ. *Çав Стенька Разин хăйĕн ушкăнĕпе Атăл тăрăшпе рашшивасене – кимĕсене çаратса çӳренĕ* [Стенька Разин // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 335]. ≤ выр. расшива.

**РИВИТНИК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Нăр-нăр ривитник. (Чĕлĕм)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 269].

**РИМИСЛА** вак-тĕвек япала тăвассипе çыхăннă ал вĕççĕнхи ĕç. *Ар çынсенчен çуртра чи асли иккенне вăл хăй те аван пĕлет, анчах мĕн тумалла-ха унăн? Çак пысăк çемьене мĕн ĕçлесе, мĕнпе пулăшмалла? Ни римисла пĕлмест, вăйĕ те сахал, пĕр пăта та аран йăтать* [Ялавин С. Селмен Иванкки // Сунтал. 1935. № 2. С. 17]. ≤ выр. ремесло.

## С

**САВĂНĂÇЛĂХ** савăнăç [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**САВĂÇЛĂ** савăнăçлă. *Комсомол хыççăн / савăçлă юрă / юрлăр та утăр, / халăх шат куртăр* [Хусанкай П. Пионерсен маршĕ // Сунтал. 1925. № 3. С. 25].

**САВĂШ** юрату. *Телейсĕр савăшăн пĕртен-пĕрех калчи…* [Хусанкай П. Салампи // Тăван Атăл. 2009. № 7. С. 158].

**САЙЛĂ** сăпайлă. *Çак пурнăçра лайăх, сайлă пурăнса ирттерме тăрăшăр* [Хĕр килĕнче пиллени. 626 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 212].

**САККАЛИЙĂН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Апи илсе панă пыçахийĕ / саккалийăн корнтăр-и* [«Шор кримски калпакне…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 168].

**САКМАР** Оренбург хутлăхĕнчи юхан шывпа тăрăх ячĕ. *Сакмар шывĕ юхать, ай, сарăлса, / сар хăмăшĕ юлать тайăлса* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 176].

**САКСУН** нимĕç. *Атте-анненĕн пултăм юратман ачи, / атте-анне пачĕ мана саксун аллине, / саксун леçрĕ сахăр савăтне* [«Атте-анненĕн пултăм юратман ачи…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 205]. < выр. саксонец < ним. Sachsen авалхи нимĕç йăхĕ.

**САН** кĕрт [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 518]. *Анатри пахчари сан айĕнче / шăнкăртатса юхать-çке юр шывĕ* [Хусахсенĕн çулĕ ăçтан иртет // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 328].

**САНКĂРАВ** хăлхасăр. *Санкăрав пупшăн икĕ хут чан çапмаççĕ* [Петров К. Тайăр. Шупашкар, 1976. С. 30].

**САНРАВ** хăлхаран витĕр мар çын. «*Ан йĕкĕлте! – çиленнĕ пек пулчĕ Кĕтерук. – Питĕ хытă кăшкăртăм. Санрав çын та илтмелле*» [Турхан К. Çĕр суранĕ // Тăван Атăл. 1962. № 4. С. 44].

**САПАЛАНТАРУ** валеçӳ; аркату [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**САР УТИ** темĕнле курăк ячĕ. *Сар-пĕр хĕрсам / сар утăна кайнă, / сар çомăр килнĕ, / сар ут вырнне пĕр кĕнçе* [Хвети. «Сар-пĕр хĕрсам…» // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 90].

**САРĂЛЧĂК** сарлака. *Хаттиме тĕттĕмлĕхе ачашла-ачашла вăйран каять, тĕмсĕлет, йăлтах аптраса çитсен тĕттĕмлĕхе тутисемпе кăшлама тытăнать, сарăлчăк урисем çине çӳçне сапалать* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 44].

**САРПАЛА** ӳкĕтле [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**САСАТКА** малтан тӳлесе хунă укçа [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437]. ≤ выр. задаток.

**САСТАШ** рифма [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СĂЛУ** чиперкке. *Пĕррехинче Кучум Эскер хулинче сăлу курнă. Пиçсе çитнĕ çырла пек хĕрлĕ питлĕ те хирти сарă чечек пек чипер пулнă вăл* [Ильин М. Чăваш тăвĕпе Чăваш сăмсахĕ тата Чăваш хули // Тăван Атăл. 1966. № 2. С. 92]. ≤ тут. сылу.

**СĂМАТ** перекетне, тухăçне пар. *Çултталăкра пĕрре хĕртсурт пăтти пĕçернĕ. Хĕртсурта пăтăпа чӳкленĕ. Кĕлĕре каланă: «Телет – сăмат, хĕртсурт»* [Хĕртсурт пăтти. 507 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 187].

**СĂНСĂРЛА** сăн çухаттар, конт. мантар. *«Вăйли çук та…» тенине хушаттăн, / вĕрентӳçĕ, пуçăмра тытма, / те кунçул, те киремет, те шатăн / вăрттăн сăнсăрлаççĕ асăма?* [Энтип В. Çĕрпе тӳпе // Тăван Атăл. 1989. № 8. С. 28].

**СĂПĂ** сăпайлă туйăнасшăн курăнакан, апат сахал çиекен хуçкаланчăк çын. *Сăпă хĕр çиме лармасть, çиме ларсан – шăмă хăвармасть* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 242]. *Сăпă хĕр сухан çимен тет, çие пуçласан хуппине хăварман тет* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 379, 427].

**СĂРАКАВАЙ** хĕрĕх витре кĕрекен пичке. *Пĕр пӳлĕмре икĕ сăракавай пичке ларать тет, сулахай енчен ĕçрĕ тет çакă эрекине – вăй кĕчĕ тет* [Йăванпа Çурçан // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 222, 386]. < выр. сороковая (бочка).

**СĂРĂНЧĂК** çыпçăнчăк, уйрăлми, йăлăхтармăш. *Сăрăнчăк шухăш* [Кузнецов И. Чăваш халăхĕн ăслăхне тĕпчесе пăхни // Тăван Атăл. 1957. № 3. С. 95].

**СĂРЛĂХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çеçен хирте сăрлăх ларать. (Ут кăшкар)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 183].

**СĂС** çĕрĕк. *Йывăçа пĕр сăс кĕре пуçласан час çĕрет* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 57, 424].

**СĂСĂК** интерес. *Хам пек çĕр хурчĕ пулать пуль тенĕччĕ мар-и? Эс хăвăн талаюпа та, сăсăкупа та урăх çын. Мĕнле ĕçлесе ирттерĕн ĕмĕрне агрономра – хам та пĕлместĕп* [Турхан К. Çĕр суранĕ // Тăван Атăл. 1962. № 3. С. 20]. *Ашшĕ ăнлантарса янă ĕçе çĕнĕ тĕс кĕртес тесе Александр Николаевич Абалымов Çĕрпӳ уесĕнчи земство управин председателĕ вичĕм çул Лапрара илемлĕхпе ырă йăласен çурчĕ уçать. Ăçтан пырса кĕрет-ха ун пуçне ку шухăш – чăваш енче никам нихăçан курман темле илемлĕх çурчĕ лартас сăсăк?* [Таллеров Л. Çăлтăр витĕр çул курнать // Ялав. 1986. № 7. С. 14].

**СĂТЛĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Чипер çынна, Вучахăм, пар эс хăтлăх, / умне кăлар эс тăварна. / Еймĕ сан пултăр тулăх, сăтлă – / хăну тав тутăр кил-çуртна* [Ахун В. «Усал чуна, Вучахăм, эс ан ăшăт…» // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**СĂХĂЛА** пĕренесене сӳтнĕ чух пăтраштарасран чăвашла картпа номерле. *Лисорсем патĕнче хуçисемсĕр пуçне никам та çук-ха, ампар пăсакансем килсе ĕлкĕреймен. Лисорпа арăмĕ кĕлетри тĕрлĕ шăкăр-макăрсене çенĕке куçарма тытăннă. Макар пырса кĕнĕ-кĕменех чăваш йăлипе вăй сунчĕ, анчах Лисор ăна кăмăллă йышăнмарĕ: «Вăйĕ вăл пирĕн никам сунмасăрах тавулни-ха, кивçене каймасан та çитет», – терĕ. Макар ăна Кузьма Степанч çырса панă хута кăларса тыттарчĕ. «Эпĕ… çак хутпа килсеттĕм те… – терĕ вăл. – Мĕнлеччĕ-ши? Çынсем киличчен сăхăласа хурас, ĕç тытăнса тăмалла ан пултăрччĕ»* [Аслан С. Вăтăрмĕш çулсем // Тăван Атăл. 1955. № 3. С. 58].

**СĂЯМАК** паллă мар чир ячĕ. *Сăямак вăл шыв тытсан ерет: ăçта та пулин шыв хĕрринче хăрасассăн, ура шыва путсассăн, кĕт çӳçенсессĕн ерет* [Сив чир // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 175–176].

**СЕГМЕНТЛА** пайăн-пайăн уйăр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СЕКЛЕТТЕР** çыруçă. *Сакăр вун салтак, ик секлеттер, пĕр палушник. (Тĕренче)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 236]. ≤ выр. секретарь.

**СЕЛЕМ** ĕнчĕ [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**СЕЛЕМÇĔ** ювелир. *Селемçĕсем, асамçăсем, / илем кӳрен ăрăмçăсем, / нухратлă-и енчĕкĕрсем, / вăрçмаççĕ-и арăмăрсем?...* [Ахун В. «Селемçĕсем, асамçăсем…» // Тăван Атăл. 1983. № 3. С. 39].

**СЕМЕНЛЕТ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Эй тепĕр тесен селĕммĕн вырнаçса выртас та селĕм шăрçа пек куçусене кĕтсе ăш-чике семенлетес сенкер тӳпе мар та пуçăм çинче куçусем сан сенкер сăмаххуссем селĕп ытла хыт пăлханнăран элле эсĕ суйăр чулĕ пекех сулăнчăк суйкăн сулмаксăр сулланчăк лаша хӳрипе сулкалашнă евĕр сăмахсемпе перкелешетĕн…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 34].

**СЕНĔКЛĔХ** сенĕк евĕр пулни, конт. măйрака. *Пуçĕ сенĕклĕх, кучĕ çулăклăх, варри çӳпçелĕх. (Ĕне)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 202].

**СЕРТĔХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ку хурчăкана исе кайнă, сертĕх чарăймасăр ĕçерсе ярат* [Шапалар вĕрентнĕ ача // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 210].

**СĔЛКЕ** тĕрĕллĕ ал шăлли. *Тур умĕнчи сĕлкĕр шав пурçăнтан, / сирĕн ĕçкĕр-çикĕрсем сим-пылтан* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 138]. ≤ тут. *сөлге.*

**СĔЛКĔР** тĕрĕллĕ ал шăлли [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505]. ≤ тут. сөлге.

**СĔЛКĔШЛĔХ** сĕлкĕш, конт. усал вăй ӳкĕчĕ. *Хăйне çапла кĕтмен çĕртен аптăратса ӳкернĕ сĕлкĕшлĕхрен тĕлĕннипе çамрăк тискерчĕк йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ…* [Грин А. Хулан пылак наркăмăшĕ / А. Леонтьев куçарнă // Тăван Атăл. 2010. № 8. С. 17].

**СĔМЛЕВ** асаплану. *Пĕр-ик минут вĕсем чĕнмерĕç, / анчах Онегин пычĕ те / каларĕ: «Эсĕр мана çырнă-ç, / ан тунăр. Вуласа пĕлтĕм / эп ĕненӳллĕ чун чĕмне те, / таса ыратăш сĕмлевне те…»* [Пушкин А. Евгений Онегин / П. Хусанкай куçарнă // Илемлĕ литература. 1936. № 2. С. 21].

**СĔРЕНÇĔ** сĕрен уявне хутшăнакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СИВЛЕ** сив чир. *Чĕтрет тĕнче веçех. / Çĕр чăмăрне авать сивле. / Совет çĕр-шывĕ çех / ĕçлекене сĕнет тивлет* [Эсрел. Рот фронт // Трактор. 1932. № 3. С. 75].

**СИКĔЛЧӲЛЛĔ** тикĕс мар [Кузнецов И. Чăваш халăхĕн ăслăхне тĕпчесе пăхни // Тăван Атăл. 1957. № 3. С. 96].

**СИЛЛĔМ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Силлĕм кăна силлĕм те / ай çил пуçĕ, / ырă учĕсем пулĕç те / çул пуçĕ* [«Силлĕм кăна силлĕм те…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 154].

**СИМВОЛЛĂХ** символ пĕлтерĕшĕпе усă курни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СИМĔСЛĔХ** ешĕллĕх. *Пӳрте ачаш симĕслĕх кĕчĕ / ăш варкăшпала кантăкран* [Яккусен П. «Пӳрте ачаш симĕслĕх кĕчĕ…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 149].

**СИМ-ЮМ** сывлăхшăн усаллă апат-çимĕç. *Хăта-тăхлач ĕçки – сим-юм ĕçки* [Турхан Я. Юрă // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 246].

**СИСĔМ-ТУЙĂМ** ăнкару. *Ун [М. Горькин] пекех вулакансен шухăш-кăмăлне вăратса хĕрӳ çапăçăва хутшăнтарма, этемĕн чи тарăн вырăнта пытанса тăран сисĕм-туйăмсене вăратса хускатма вĕренсе пырĕç* [Аслă художник-революционер // Сунтал. № 1936. № 7. С. 3].

**СИСĔНЧĔК** туйăмлă [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СИТРЕ** пушă. *Акă Валя çил арпаштарнă сарă çӳçне майласа ячĕ. Çӳçне вăл ытти хĕрсем пек кĕскетсе кастарман, – пуçĕ çине берет та лартман, – ситре кăна икĕ çивĕт тунă та хыçнелле янă, çивтисем çинçе пилĕкĕ таранах усăнса тăраççĕ* [Садай В. Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр // Тăван Атăл. 1974. № 11. С. 22].

**СЛАВЯНÇĂ** славянофил [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СТЕРЕОТИПЛА** стереотип картне ларт [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СТРАМ** питĕ [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 393]. < выр. с(т)рам?

**СУЛАМАТ** чӳк е тав çимĕçĕ [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 518].

**СУЛХĂШ** веер. *Хĕлле вĕсем [хĕрсем] темле лайăх çĕлĕксемпе, кĕрĕксемпе çӳретчĕç, сулла – чечеклĕ шĕлепкесемпе, аллисенче тĕрлĕ тĕслĕ сулхăш тытса иртетчĕç* [Горький М. Çирĕм улттăпа пĕрре // Сунтал. 1929. № 6. С. 6].

**СУМ-ЯТ** чап. *Чи кансĕрри – кĕрешӳçĕсем хушшинче пĕр шухăшлăх çукки. Вĕсене пĕрлештерсе тăракан çын, пĕр пĕтĕм сум-ят кирлĕ* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 162].

**СУПКĂН** ĕçсĕр аташса çӳрекен. *Ухина кӳршĕ çынни патĕнчен таврăнсан пӳрте кĕрсен шăлтах урса кайнă. Кăшкăрма тапратнă. Икĕ урапа харăс тапсах вăрçма тапратнă: «Эй, пӳтсĕр, пӳтсĕр… Кахал, супкăн! Авăн çапас чух ĕмĕлте выртрăн, тӳрĕре çӳрерĕн… чун илесшĕ! Памастăп пӳрте сысна вити тумашкăн!..» – тата тем те пĕр каласа вăрçнă Ухина* [Медведев А. Çăлăнăç çулĕ // Сунтал. 1937. № 1. С. 25].

**СУРМАНЧ** вĕрӳ-суруçă [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 330].

**СУРЧĂК-СĔЛЕКЕ** çăварта пулăнакан шĕвек [Этем мĕншĕн сурчăк-сĕлекеллĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 76].

**СУСĂРКА** сусăрлан, аман. *Ан лар, кукку, пирĕн ял çине / çунаттуна сусăркама* [Çĕн çĕре каякансен юррисем. 403 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 95].

**СУТĂНУ** суту-илӳ; сутăнчăклăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СУТĂÇ(Ă)** суту-илӳ тăвакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СУХАНЛĂХ** сухан пахчи. *Пирн пахчи те – суханлăх, / сирн пачхи те – суханлăх* [«Пирн пахчи те – хăмлалăх…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 141].

**СӲНТĔК** арча. *Марян полнă пысăк сӳнтĕк, тăришă чалăш полнă, çӳлĕшĕ олтă шит полнă* [Асамлă çапкăçпа вут чулĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1973. Т. 1. С. 276]. ≤ выр. сундук.

**СӲРЕК** çынлăхлă, шеллевлĕ. *Тӳре айăпланă çынна та / ан васкăр, ан таптăр тӳрех. / Хамра пуррине çех ыйтатăп: / çынсем, пулăрсамăр сӳрек* [Исмуков Н. «Çеçке те çыр курăкĕ пултăр…» // Ялав. 1987. № 10. С. 4].

**СӲТĔРĔЛ** сӳтĕл. *Хура сăхман çĕлетрĕм те / сакăр вун пĕр пĕрĕм пĕртертĕм. / Сакăр вун пĕр пĕрĕм сӳтĕрĕлчĕ, / сăхман шутран тухса ӳкрĕ* [Улах юррисемпе такмаксем. 1592 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 234].

**СӲТСЕ ЯВУ** сӳтсе явни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СЫПĂКЛАНУ** сыпăк çине пайланас пахалăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СЫПĂНЧĂК** хушма япала [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**СЫХЛАСЛĂХ** сыхласа хăварас мехел [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

## Ç

**ÇАВА-ÇУРЛА** çулма-вырма усă куракан ĕç хатĕрĕсем. *Хăртна-пĕр пырсан мĕн хавас? – / Çава-çурла сасси пит хавас* [«Уя-пĕр тухсан мĕн хавас?..» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 221].

**ÇАВРА ШĂТĂК** кратер. *Хăруш çурăксем, / çавра шăтăксем / кĕç-вĕç çăтасла / пăхаççĕ мурла* [Галкин А. Еккĕме асапран хăтарать аптраман Раман // Тăван Атăл. 1967. № 2. С. 63].

**ÇАВРИНККЕ** çаврăнăç [Ваçила пĕви // Тавралăх халапĕсем. Шупашкар, 2013. С. 149, 398].

**ÇАВРИНККЕЛЕ** йăвалантар, кустар. *Тепрехинче вăл [Çитăрка] чыхма мар, çурма тултарнă çăнăх миххисене урайĕнче кустарса çавринккелет* [Ваçила пĕви // Тавралăх халапĕсем. Шупашкар, 2013. С. 149].

**ÇАРМĂÇ-ЧАРМĂÇ** çармăс халăхĕ. *Мĕн кăкшă-мăкшăлатса тăран? Çармăç-чармăç çук кунта!* [Чиндыков Б. Масаркасси ясарĕн çитмĕл çиччĕмĕш матки // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 283].

**ÇАРРАН-ÇАРАМАС** атă-пушмаксăр, тумтирсĕр. *Кунта ачи-пăчи, ватти-вĕтти, хĕрĕ-арăмĕ, çарран-çарамас туллиех* [Куçма Çинахвунччă пăхаттир // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 214].

**ÇĂКМА ПАР** чыс ту. *Алăк патне кĕрӳ çăкма пар, тĕпеле кин çăкма пар* [Калăм кĕллисем. 260 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 90].

**ÇĂЛĂНЧĂК** çăлăнăçлă [Юрьев М. Чăвашсен иртнĕ маннă кунĕсем // Сунтал. 1925. № 10. С. 10].

**ÇĂЛТĂРЧĂК** пĕчĕк çăлтăр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇĂТКĂН-ВУПКĂН** çăткăн, сăхă [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇĂТУ** çăтни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇĂХАВÇĂ** элекçĕ. *Çăхавçăшăн – уяв çеç çын асапĕ* [Галкин А. Çеçпĕле асăнса // Тăван Атăл. 1968. № 4. С. 51].

**ÇЕМÇУРКА** вăйсăр, хавшак [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 518].

**ÇЕÇКЕЛĔХ** чечеклĕх. *Çаранлăхра кăлканлăх иккен, / кăлкан айĕ çеçкелĕх иккен* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 14].

**ÇĔНӲЛĔХ** çĕнтерӳ. *Çĕнӳлĕхшĕн – çăкăр пит кирлĕ…* [Митти Кеоркийĕ. Вăрçăллă коммунизм // Сунтал. 1931. № 12. С. 7].

**ÇĔР ВИÇӲÇĔ** çĕр лаптăкне виçекен çын. *Кушкă Чăвашĕ çĕр виçӳçĕ пулмалла иккен* [Иванов И. Чăваш халăх ывăлĕ // Тăван Атăл. 1988. № 4. С. 48].

**ÇĔРĔКЛĔХ** нишлĕх. *Хаттиме вăй пĕтсе килнине те, чĕр кусçисем юхăнса чĕтреме пусланине те туймасть, темле çĕрĕклĕх чирĕ усăннă пек ун çине, çинçе пилĕклĕ селĕм хĕр кĕлетки шурлăх çĕленĕ пек авкаланса хӳтлĕх тăрăх чул урайне шуса анать…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 38].

**ÇИЛĔМÇĔ** пулла çилĕмпе тытакан пулăçă. *Çилĕмçĕ – кĕлмĕçĕ* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 291].

**ÇИЛĔШЛĔ** çилленчĕк, хаяр. *Çилĕшлĕ Иван (Иван Грознăй) патшара ларнă чух малтанласа Хусан хули тутар патши аллинче пулнă…* [Çилĕшлĕ Иван патша Етĕрнере // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 314].

**ÇИМАКУР** тăван çĕр-шывран ютта кайса ĕçлекен çын. *Ан хуйхăрăр, чăвашсем, / тĕнчери çимакурсем!* [«Сăрт-сăрт тăрăх пирĕн çул…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 55].

**ÇИÇĔМЛЕ** шухăш мĕлтлетсе ил. «*Мана малтан ăс-тăн йăлт çиçĕмлерĕ. / Сăмахсемпе пĕлӳ вăл парнелерĕ*» [Сатур С. Сăмах. Шупашкар, 2001. С. 3].

**ÇУЛĂКЛĂХ** шăпăр. *Тăрри сенĕклĕх, кучĕ çулăклăх, варри çӳпçелĕх. (Ĕне)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 202].

**ÇУЛÇĂЛĂХ** симĕслĕх, ешерлĕх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУМĂР КАЙĂКĔ** çумăр умĕн çĕр çумĕн вĕçекен кайăккĕшĕк. *Çĕр чĕкеçĕсем (вĕршĕнсем, çумăр кайăкĕсем) аялтан тата кăшкăрса вĕçсен – çумăра* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 141].

**ÇУНАВ** çунни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУПАЛА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çупаларăм – ӳстертĕм тиха, / çупаларăм – вылятрăм тиха. / Илтеймерĕм çапах ыррине, / кураймарăм çапах телейне* [Ахун В. Икĕ монолог // Тăван Атăл. 1980. № 3. С. 68].

**ÇУРАЛ-ТĔВĔЛЕН** пулăн [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУРАÇĂН** качча тухма килĕш [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУРТ-ХУРАЛТĂ** çурт-йĕр [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУТ ТĔНЧЕЛĔХ** çут тĕнче. *Ан макăр, анне: ху ылхантăн вĕт, / çут тĕнчелĕхре сак-сук пул терĕн* [Сак-сук // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 295].

**ÇУТАТКĂÇ** çутатмалли хатĕрсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУТЛĂХÇĂ** халăха çутта кăларакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇУХĂРУ-ЙЫХРАВ** чĕнӳ, йыхрав [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇӐ̆ÇЕНТЕРМӖШ** шӑнтса яракан, чӗтреттерекен [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇЫВӐРТ** çыврат. *«О-о-ой, – тет хӗр, – куçу хоплантӑр, хӑлху ан илттӗр», – тет. Çывӑртать опана* [Виçӗ хӗр // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 50].

**ÇЫНЛӐХЛӐ** çынна юратакан, хӑйне этем ретлӗ тытакан пахалӑхлӑ. *Эс ху пирки калатӑн: / «Çылӑхлӑ этем» / Эп сан çинчен шутлатӑп: / «Çынлӑхлӑ этем»* [Энтепе А. «Эс ху пирки калатӑн…» // Ялав. 1990. № 10. С. 28].

**ÇЫПӐÇТАРКӐÇ** çилӗм [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇЫРАШКА** илемлӗ хайлав çыркалакан çын. *Çав Чиндыков текен çырашкапа унӑн арпашӑнчӑк вулаканӗсене çыхӑнтарма талпӑнакан тӗвӗ эпӗ. Ар çынпа хӗрарӑм хушшинчи хутшӑнусенче канӑçлӑхпа килӗшӳлӗх пултӑр тесен ар çынри хӗрарӑмлӑхпа хӗрарӑмри ар çынлӑх пӗр тан пулма кирлӗ* [Чиндыков Б. Çӗр хӑйӑрӗн тусанӗ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 160].

**ÇЫРЛАХТАРУ** тивӗçтерӳ [Кузнецов И. Чӑваш халӑхӗн ӑслӑхне тӗпчесе пӑхни // Тӑван Атӑл. 1957. № 3. С. 95].

**ÇЫХӐМ** çыхӑ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ÇЫХӐНАСЛӐХ** валентлӑх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

## Т

**ТАВСАСӐР** хӑйне ырӑ тунине маннӑ çын. *Алюнов ун утне чӗлпӗртен ярса тытрӗ. «Атя, ан лапӑртатса тӑр!» – «Яр! – çари! кӑшкӑрса ячӗ Укаслу. – Яр!.. Тавсасӑрскер!»* [Юхма М. Чӑваш хӗрӗ // Тӑван Атӑл. 1968. № 5. С. 58].

**ТАЙ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çурхи те шывпала юхса та кайнă пулсассăн / аслă тай улăха тухса та выртас-мĕн* [«Малаллине те шутланă…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 132].

**ТАКА-СУРĂХ** вĕтĕ выльăх-чĕрлĕх. «*Чи малтан пирĕн çак вăрçа питĕ тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле, – малалла калаçрĕ Лити патши. – Така-сурăх, эрех-сăра питĕ нумай хатĕрлемелле…*» [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 139].

**ТАККУН ТУ** шухăшла. «*Мал еннелле кайсассăн – / ютсен хĕрне тĕл пулăп; / кай еннелле кайсассăн – / чиперккене тĕл пулăп» – / хавасланса, савăнса / таккун тăвать Тимĕркке* [Шавли С. Тимĕрккепе чиперкке // Илемлĕ литература. 1941. № 7. С. 91].

**ТАМАН** диал. пулать. *Кутне кура таман* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 202, 427].

**ТАМĂР** пĕр сăваплă ĕçшĕн, пĕр тĕллевшĕн пĕрле ырмиканми кĕрешнĕ çын. *Тăван çĕр-шывра кашни тĕм, кашни йывăç, кашни сукмак – юнташ та, тамăр та* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 235].

**ТАНЛАШУ** танлаштарни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТАТАЙМĂСТ** юмахри çăмпа витĕннĕ ăмăрт кайăк. *Кĕтӳ саран курăкне / икĕ çĕрте çимелле. / Пĕри – Ейӳ хĕррине, / Саран тăвăн айĕнче, / тепри – унтан кăшт инçе, / татаймăст йăви патĕнче* [Улăп аслашшĕ патне кайни // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 269].

**ТАЧКАЛĂХ** çĕр нӳрĕ пулни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТАЯНКĂÇ** пукан хыçĕ. *Кермен варринче ялтăраса тăракан çӳллĕ астул çинче тĕнче хуçи аслă та чаплă Зевс турă ларать. Унăн астулĕ ылтăнран. Çӳллĕ таянкăçĕн икĕ вĕçĕ ту-*

*харах тӑрать. Вӗсене вут сапса тӑракан чӑмӑр пысӑкӑш мерченсемпе илемлетнӗ. Таянкӑç тӑрринче вут сапса тӑракан мерченсем хушшинче – вилӗмсӗр ӑмӑрт кайӑк* [Юхма М. Юрӑçпа патша // Юхма М. Алтӑр çӑлтӑр çути. Шупашкар, 2007. С. 319].

**ТӐВАÇӐ** ӗçлевçӗ. *-Çын (-чын, хальхи -çӑ / -çӗ, -чӑ) – тӑвaçӑ (деятель) ячӗ тӑвакан чи авалхи аффиксенчен пӗри. Ахӑртнех эпир çав аффиксра çынна тата «çын» сӑмах пулса кайнин пуçламӑш самантне асӑрхатпӑр* [Сатур С. Çын // Сӑмах. Шупашкар, 2001. С. 29].

**ТӐКӐНМИ ÇЕÇКЕ** бессмертник, лат. Helichrysum arenarium. *Пур тӑкӑнми çеçкӳ – ӑна та эпӗ / шур кӑлканпа явса çыхатӑп меллӗн* [Энтип В. Туслӑх кӑшӑлӗ // Тӑван Атӑл. 1977. № 6. С. 34].

**ТӐККИ-ТАККИ** сӳс тылланине евӗрлекен сӑмах. *Тӑккитакки тӑвар-ха, / силлентерех чышар-ха* [Сӳс тыллакансен юррисем. 40 // Ӗçпе йӑла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 27].

**ТӐМАТЛӐХ** ӗçе вӗçне çитерме тӑрӑшни. *Хавхалану, чӑн-чӑн хастарлӑх / тӑматлӑхпа пырсан пӗрле / кашни кун пулӗ пархатарлӑ / пиртен кайман ӗçченлӗхре* [Юмарт В. Пирӗн план // Тӑван Атӑл. 1982. № 3. С. 36].

**ТӐМПӐРТӐК** параппана патакпа çапнине евӗрлекен сӑмах. *Тӑмпӑр-тӑмпӑр, / тӑмпӑр-тӑмпӑр, / тӑмпӑртӑк! // Токмак сасси ян каять, / хурӑн токмак витерет* [Пир çапакансен юррисем. 50 // Ӗçпе йӑла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 28].

**ТӐНКӐЛТА** тӑнкӑлтаттарса утма хистекен чӑрмав? *Кӗмӗл старик кӑмӑлпа каларӗ: / «Сакӑр вун сакӑр сакӑлта, / тӑхӑр вун тӑхӑр тӑнкӑлта. Çӳллӗ тусем çинчен ансассӑн, / Çарӑмсан урлӑ каçсассӑн / çемçе çаран тӗл пулать…»* [Мӑн кӗрӳ такмакӗ // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 12]; танл.: *сакӑлта* шӑтӑк-путӑк.

**ТĂРĂХЛУ** шӳтлев [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТĂХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Йăмăкĕ калать тет: «Укçа тупăсăн та кĕçĕн инкĕме пар, мана кирлĕ мар. Тăхăр йĕрсе тăхнă, тăри йăва çавăрчĕ, варпуш пак çӳçĕме кăткă йăва çавăрчĕ, майра сăнĕ пек сăнма хурăн сарри çаппăрĕ», – тет* [Чеченик // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 73, 387].

**ТĂШ** тĕш? *Мĕн тăвас – вилес киллмест: çут çанталăкра пĕр сехет пурăнсан та тем тăшнех тăрать – çăмха илет те тухса утать çул çине* [Шарапчăк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 258].

**ТЕВĔШ** турта. *Урапа кӳлес пулать, / тевĕш тӳрлетес пулать* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 92].

**ТЕВРЕ** çинçе юпа? *Çĕр шăниччен радио теври лартса хăварма васкаççĕ* [Толокович В. Çĕр вăрçи // Сунтал. 1929. № 12. С. 4].

**ТЕКĔ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. *Хăшĕ текĕрен, хăшĕ теперен çакăнса кĕсене хыçалтан хăвалама тухрĕç тет* [Старик ачине сутни // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 196, 387].

**ТЕКМЕКЛЕН** мекеçлен? *Упа ывăль хĕçе йăтрĕ те пырать текмекленсе…* [Туй-Тупала // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 191].

**ТЕМЕК** туртмалли, табак. *Утаман чĕлĕме инçех мар пытарать те, / хусахсем хускалаççĕ каллех ким çине. / Ун çине вырнаçса çеç вĕсем ĕлкĕрейрĕç – / ту тăрри тĕтĕмпе тĕтĕре те пуçлать. / Пулнă тет пит асамлă çав тĕтĕм темекĕ…* Юмарт Г. Разин чĕлĕмĕ // Тăван Атăл. 1981. № 7. С. 42].

**ТЕМПЕРАТУРĂЛА** температурăпа аптра [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТЕПЕ** паллă мар пĕлтерĕшлĕ сăмах. › **текĕ.**

**ТЕРРОРЛА** террор ӗҫӗ ту [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТЕРЮКА** йӗтӗн пустав. *Вырӑн сартӑн ман валли, акка, / вырӑн хытӑ терӗн, терука* [Шавли С. Ҫӗр каҫма чарӑнсан // Тӑван Атӑл. 1968. № 6. С. 44].

**ТЕШӖ** туртана ҫуна ҫумне ҫыхмалли ункӑланӑ пӑяв [Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**ТӖВӖЛЕН-ҪУРАЛ** пулӑн [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТӖВӖЛЕНЧӖК** тӗвӗ, ҫыхӑнчӑк. *Пайманӑн урӑх ҫитменлӗхсем те пур. Вӗсем пурте пӗрех, ҫак халӗ ҫеҫ асӑннӑ тӗвӗсемпе ҫыхланса тӑраҫҫӗ. Уйрӑмӑн-уйрӑмӑн илсе ҫак тӗвӗленчӗксене салтса пӑхма тивет* [Тимӗрҫ И. Пайманӑн «хура пӗркенчӗкӗ» // Сунтал. 1929. № 3. С. 17].

**ТӖЛӖНӲҪӖ** тӗлӗнекен ҫын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТӖЛЛИ-ПАЛЛИСӖРЛӖХ** уҫӑмсӑрлӑх. *Хаттиме вӑй пӗтсе килнине те, чӗр куҫҫисем юхӑнса чӗтреме пуҫланине те туймасть, темле ҫӗрӗклӗх чирӗ усӑннӑ пек ун ҫине, ҫинҫе пилӗклӗ селӗм хӗр кӗлетки шурлӑх ҫӗленӗ пек авкаланса хӳтлӗх тӑрӑх чул урайне шуса анать, унтан куҫра темскер ялкӑшса хӗмленме тытӑнать, сарӑлса, вӗриленсе пырать тӗлли-паллисӗрлӗх…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 38].

**ТӖПӖКЛЕН** пӗлтерӗшӗ паллӑ мар сӑмах. *Шурлӑ ҫӗрти тӑпрана янкар теҫҫӗ. Тӗпӗкленекен, торф евӗрлӗ ҫунакан, ҫӑмӑрсӑр ҫулсенче ӗнтсе яракан тӑпра пирки калаҫҫӗ* [Ял ҫум пусси // Тавралӑх халапӗсем. Шупашкар, 2013. С. 52].

**ТӖПИК** япала тӗпӗ, аялти пайӗ [Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 333].

**ТӖПИХЕМ?** пӗлтерӗшӗ паллӑ мар сӑмах. *…Сӳрет ҫырми вара тӑп-тӑваткал та тӗпсӗр тарӑн тӑнч антраса ӳкмелле чӑнкӑ тӑпса евӗр тӑсӑк тертленӳ техӗмӗ ыйтуллӑ ҫӗр ҫырли*

*пек теçĕл терт-хурпа терт-хастар усаллăхран тĕшлеççĕ тĕшĕ манăн тĕпихемпех тĕтĕмлĕ тивĕçлипех туй-çуйлă…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 35].

**ТĔРЕКЛĔЛЕН** вăйлан [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТĔРЕКЛĔЛЕНТЕР** вăйлантар [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТĔРЕКЛĔЛЕТ** вăйлат [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТĔРЕЛЕ** тĕлле. *Ахванеç капкас тумлă çын çине тĕрелесе пăхрĕ, ку хаяр тĕслĕ пулсан та мĕншĕн пĕртте чĕнмест-ха, шавламасть-ха тесе шухăшласа илчĕ* [Юман М. Атăл калавĕ // Тăван Атăл. 1989. № 3. С. 25].

**ТĔРĔС-ТĔКЕЛЛĔХ** пархатар, пехĕт; сывлăх-чĕрĕлĕх; тăнăçлăх. *Хĕртсурт – питĕ ырă кăмăллă пике тură, вăл кил тĕрĕшне пăхса тăрать, ăна тĕрĕс-тĕкеллĕх, хăтлăх парать* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 377].

**ТĔРНЕÇ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Тăрри тĕрнеç, тĕпĕ мамăк. (Сӳс тӳни)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 277].

**ТĔСЛĔЛЕН** тĕс кĕрт [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТИВАНА** айван. *Урамран таврăнсан мĕншĕн кĕмерĕ-ха пӳрте? Ашшĕ вăрçа тухса каяссине пĕлетчĕ вĕт-ха, тивана!* [Садай В. Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр // Тăван Атăл. 1974. № 11. С. 41].

**ТИВĔÇЛЕВЛĔХ** тивĕçтерӳ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТИЛАХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Лĕртĕмле урам ӳкрĕ сенкĕ юппи, / лĕртĕмле кĕлеткем ӳкĕрĕ тилах…* [Чеченик // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 74].

**ТИЛВĔРЕН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çĕнĕ ырă тесе лаша тăвать, çĕнĕ ырă амăшĕ тесе сурăх парать, тилвĕрен тесе пăру тăвать* [Карта пăттинчи кĕлĕсем. 1060 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 327].

**ТИСКЕРЧĔК** çынпа хутшăнмасăр пĕччен пурăнакан çын. *Хăйне çапла кĕтмен çĕртен аптăратса ӳкернĕ сĕлкĕшлĕхрен тĕлĕннипе çамрăк тискерчĕк йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ…* [Грин А. Хулан пылак наркăмăшĕ / куçараканĕ А. Леонтьев // Тăван Атăл. 2010. № 8. С. 17].

**ТИШКЕРЕВÇĔ** аналитик, конт. критик [Романова Ю. Ятлă-сумлă тишкеревçĕ // Ялав. 1986. № 1. С. 25]. Танл.: *Сакăр теçетке тултаракан ятлă-сумлă критика эпир юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр* [Çавăнтах].

**ТОЛЕРАНТЛĂ** урăхлалăха чăтăмлă йышăннине кăтартакан пахалăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТОППИР** халĕ. *Лешĕ (пачăшки) ампар пуçне пушатма хушрĕ тет. Ампар пуçне пушатрĕ тет те [вуттине] татах ашшĕнчен ыйтать тет: «Ну, атте, топпир мĕн ĕçлес», – тет* [Çурри упа, çурри этемлĕ çын // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 185]. ≤ выр. теперь.

**ТОХĂ** тир тавăрса çĕлетнĕ тăлăп. *Микула Максăмĕ хăй çине витĕннĕ тоххине хăвăрт сирсе пăрахса ялт сиксе тăрса ларчĕ те çывăрнипе тăмаланнă çӳçне кĕрепле шăлĕ пек хытă пӳрнисемпе катăр-катăр хыçса пушшех тăмалантарчĕ* [Данилов М. Тилĕ хыççăн // Сунтал. 1929. № 4. С. 6].

**ТУЙĂК** йĕс [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 333].

**ТУККЕС** сăхман. *Кивелсе çитнĕ кĕске туккесĕ çамрăк кĕлеткине сивĕрен хӳтĕлемест. «Ы-ы-ы!», – çӳçенсе илчĕ вăл [Çемен] йытă тирĕнчен тунă çĕлĕкне ĕçпе хытнă сылтăм*

*аллипе пусарарах лартса* [Миронов А. Çирĕм пĕрĕмĕш // Сунтал. 1951. № 6. С. 1].

**ТУМ-СИЙ** тум-тир. *Мăкăнь питлĕ ырă çур кунне / уй-хирте çӳрет-ха савăнса, / хушпăвĕ ун – кăн-кăвак тӳпе, / тумĕ-сийĕ – сип-симĕс калча* [Сильвестров Л. Çур иртес умĕн // Ялав. 1982. № 8. С. 30]. *Анчах темшĕн ютран килнĕ ятсем хитререх туйăнаççĕ çамрăксене: Эмма, Эльза, Жанна, Артур, Руди (Рудольф) т. ыт. те. Ирĕксĕрех каярахпа куçа чарса пăхатăн ун пек çын çине: сăнĕ-пуçĕпе те чăвашах хăй, тумĕ-сийĕ те хамăрăнни пекех, ячĕ вара – ют* [Андреев И. Çын ячĕсем. Шупашкар, 1983. С. 13].

**ТУМХАЛАНЧĂК** вараланчăк, таса мар. *…эпĕ хам та вараланчăк кĕпем пекех тумхаланчăк…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 35].

**ТУНККУЙ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Кашни туйрах тунккуй тупăнать* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 413].

**ТУПĂ** тупсăм. *Юмах ярăп, туппине хамах калăп. (Калăп)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 243].

**ТУПĂКЛĂХ** виле упрамалли хуралтă [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТУПĂШУ** ăмăрту [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТУПТЕНЭ?** пĕтĕмпе. *Хĕле кĕрсен шыва типĕтсе ан яр; çăва тухсан туптенэ тӳпеми шыв ан тултар!* [Шыва хисеплемелли сăмахсем // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 48].

**ТУРАККА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Каçпа вутăш пынă та кантăкран шаккать тет: «Тураккана пар мана, тураккана пар мана!» тесе йăлăнать тет* [Вутăш (322) // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 205].

**ТУРĂЛĂХ** турра тивĕçлĕ пахалăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТУРХАНЛĂХ** турхан пăхса тăракан хутлăх. *Метте хăйĕн пĕтĕм çĕр-шывне тата пĕчĕкрех тăрăхсемпе турханлăхсем çине те пайланă* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 83].

**ТУРХАН-МĂРСА** чăваш халăхĕн авалхи ертӳçисем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТУСЛĂХ-ТĂВАНЛĂХ** хурăнташлăх, çывăхлăх. *Калăпăр, пĕр-пĕр çĕрте çынсем тавлашма тытăнаççĕ. Килĕшӳ çакăн çинчен илтет те хăпăл-хапăл унта вĕçтерсе çитет, ырă пурнăçпа тăнăçлăх, туслăх-тăванлăх çинчен калама тытăнать* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 368].

**ТУСТАРУÇĂ** тустаракан, çĕмĕрекен, аркатакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТУТЛĂ-ИМЛĔ** сывлăхшăн усăллă. *Тутлă-имлĕ мунчи пултăр, / йӳçси кайтăр, пылакĕ юлтăр…* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1985. Т. 6. П. 1. С. 88].

**ТУШНАН** хурлăхлă, паттăррăн. *Тушнан юрла, кĕслем!.. / Чăтсам, ан сик, чĕрем!* [Петтоки А. Çирĕм иккĕ // Трактор. 1931. 1-мĕш кĕнеке. С. 71].

**ТӲН ХУРАЛ** тӳн-тӳнле вылянă чухне ыттисене тытакан ача. *Кама малтан тытать, çавă тӳн хуралĕ пулать* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 36].

**ТӲН-ТӲН КАРЧĂК** тӳн-тӳнле вылянă чухне ыттисене тытакан ача. *Пĕр ачи хăй ирĕкĕпе е шăпа ярса тӳн-тӳн карчăк пулать* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 35].

**ТӲРККЕСЛЕТ** тӳрккес ту [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТӲСӲ** тӳсĕм [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТЫМАРЛĂХ** тымар пулни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ТЫТĂ** тыткăч. *Хура сухал, хайман тытти, / эс те мучи, ăслай ватти! /…Хаклашăр манăн тавара…* [Ахун В. «Хура сухал, хайман тытти…» // Тăван Атăл. 1980. № 3. С. 67].

**ТЫТКĂНЛĂХ** тыткăн [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

## У

**УЙ-ÇĔР** уй-хир. *Тепĕр кунне пуян тарçине пĕтĕм уй-çĕрне сухаласа акма хушнă* [Пуянпа тарçи // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 26].

**УКÇА-ÇАРМА** укçа-тенкĕ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**УЛАТĂР ЧУЛ** янтал [Артемьев А. «Ан ман мана» // Тăван Атăл. 1967. № 1. С. 19].

**УЛАШУ** улани [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**УЛМАЛĂХ** улма пахчи. *Пирн униче – улмалăх* [«Пирн униче – шĕшкĕлĕх…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 186].

**УЛШĂНУЛЛĂ** улшăнчăк [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**УМСАН** мухтан. *Пукане siксе тăчĕ те хăйпе умсанса, хăйне хăй тăрăххăн пăхса ташлама пуçларĕ* [Пукане // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 71]. < ăмсан?

**УНИ-КУНИ** вăл-ку [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343]. < вăл-ку (ăна-кăна).

**УПРАВЛĂ** хӳтĕлевлĕ? *Уяр кунсем ĕлккен те капăр! / Халь-халь ирĕлĕве куçас / ĕмĕтпелен çуралнă, сапăр / юр кĕртĕнчи управлă сас* [Ирхи Г. «Пуш уйăхĕн рехечĕ – хăйĕн…» // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 65].

**УСКĂН** кахал [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**УССĂРМАН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ним çукран ятра çӳрени уссăрман, каçару ыйтнипе никам та хур курман* [Ухăт. 81 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 30].

**УÇĂМСĂРЛĂХ** паллă марлăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**УÇКĂРТ** вĕслет, вĕскĕрт [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**УТ-ЛАША** лаша тавраш. *Кил çумĕнчи выльăх-чĕрлĕхе те хĕртсурт питĕ юратать. Каçсерен вăл картишне тухать те ут-лашана шыв ĕçтерет, вĕсене тасатать, çилхинчен тытса уттарса çӳретет* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 378].

**УТНАКĂЛАН** самайлан. *Хай арăм пĕр-икĕ эрне выртсан пăртак утнакăланнă* [Иванов И. [Юмăç ултавĕ] // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 176, 439]. < выр. однако.

**УТ-УРХАМАХ** лаша [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**УША ÇĂЛТĂР** паллă мар çăлтăр ячĕ. *«Уша çăлтăр, упра ман чуна, – пăшăлтатрĕ Сентти. – Мана Хулана илсе каякансем килчĕç пулас…»* [Карягина М. Уша çăлтăр // Тăван Атăл. 2008. № 12. С. 58].

**УШАХ** шурлăх [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**УЯВ-ĔÇКĔ** уяв. *Асамат кĕперĕн турри çăмăл çунатлă Ирида тĕнче хуçи хăйне чĕннине илтсе тĕрлĕ тĕслĕ сăррисене кĕтесе пуçтарса хучĕ те Зевс çумĕпе вĕçсе иртсе Гера умне анса ларчĕ. Çак уяв-ĕçкĕре унăн хăйĕн тивĕçĕ пур: нихăçан та Зевсăн савнă мăшăрĕнчен Герăран пĕр утăм юлмалла мар* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 320].

## Ӳ

**ӲКЕРЧӖКЛЕ** ӳкер [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ӲКӖТЛЕВ** ӳкӗте кӗртни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ӲПКЕМ** ӳпкев. *Пуҫлă-вӗҫлӗ анана / таптанăшăн ӳпкем пур, / аттепеле аннене / ҫуратнăшăн ӳпкем пур* [«Турă лаша тейсе…» // Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 170].

**ӲТЕН** аталан. *Усал малтан аякра ӳтенет, аякран яла килет* [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 52, 330]. < ӳтлен.

**ӲТЛӖХ** йывăр хӳтлев. *Каллех, миҫемӗш хут ӗнтӗ, пуч сасси илтӗнчӗ. Чатăр ăшӗнчен йывăррăн пусса вăтăр аттика тухрӗ. Вӗсем те пӗтӗм кăралӗпе: сылтăм аллисенче – вăрăм сăнă, хыҫӗсенче – ухă, туп-тулли ҫӗмрен тултарнă укҫу, пилӗкӗсенче – йывăр вӗҫлӗ хӗҫ-алтаспан, сулахай аллисенче – ӳтлӗх, ҫыннăн пӗтӗм ӳтне тăшман ҫӗмренӗнчен те, хӗҫӗнчен те упрама пултаракан хӳтлев* [Юхма М. Хӗвел хапхи // Юхма М. Алтăр ҫăлтăр ҫути. Шупашкар, 2007. С. 83].

## Х

**ХАВХАЛАНУЛĂХ** хавхалану [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 343].

**ХАЙВАН** чӗр чун. *Ҫеҫен хир ҫыннишӗн урхамах – сăваплă хайван* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Аслă ҫул. Шупашкар, 2010. С. 82]. ≤ тут. хайван ≤ ар. ح يوان

**ХАЙЛАЛĂХ** ӳнер хайлавӗ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХАЙМАН** сăранран çĕленĕ чаплă, пысăк енчĕк. *Хура сухал, хайман тытти, / эс те мучи, ăслай ватти! / Хаклашăр манăн тавара…* [Ахун В. «Хура сухал, хайман тытти…» // Тăван Атăл. 1980. № 3. С. 67].

**ХАЙРАН** кастарнă ар çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХАЛАВЛĂ** халаллă? *Эй мĕн виличчен юратнă Хаттиме пехил ту мана çĕн халавлă çĕнĕ тĕнчере хутран хута хутлам-хутлам шухăш сапалантăр хăмла çырли пек кĕрен туйăм хăма çинче юлтăр…* [Чиндыков Б. Элчел // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 34].

**ХАЛАН КАЙĂК** паллă мар кайăк ячĕ. *Сар кайăк пек савăнса, халан кайăк пек авкаланса, хур акăш пек мамăкланса пурăнăр* [Хĕр илме кайнă чух пиллени. 618 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 209].

**ХАЛЛАН** вăй ил, конт. кăмăла çĕкле [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**ХАМĂР ЯЛЛĂХ** тăванлăх; ентешлĕх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХАНТАРАЙ** кахал çын. *Хантарайсем – кантурта* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 82].

**ХАП** питĕ. *Чĕри хавшак çын пулсан / унтах вилме хап ансат* [Вĕре çĕлен // Сунтал. 1936. № 6. С 23].

**ХАРАМСАЛĂХ** харам пырлăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХАРĂМ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Пирĕн юрă юрăхсăр, / эпир хамăр харăмсăр* [Хăвалăн тинĕс – хăямат // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 324].

**ХАРКАМÇĂ** индивидуум [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХАРСĂР-ЧĂРСĂР** хăюллă, паттăр. *Харсăр-чăрсăр вăй-хăватлă паттăрсем / пĕр бандит юлми тĕп турĕç тăшмана, / самурай юнĕпе çурĕç таврана* [Евстафьев Н. Юрă // Евстафьев Н. Инçетре ку пулнă, тухăçра. Шупашкар, 1858. С. 7].

**ХАРУШАЙ** кăштах [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ХАСА** айăплав; асаплантару. *Айăпне кура хаса теççĕ* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 249, 427].

**ХАСĂР** халĕ. *Чавса кĕрсенех Ванькка тытса хупаççĕ. Унта кăнтăрлахи апата тĕрме трубинчен ĕне навусне улăмпа пăтратса параççĕ. Ванькка тĕрмери çынсене калать: «Ан çийĕр çавна, хасăр çиетпĕр!» – тет. Ванькка курак йыснăшĕ панă ашшавлике сарса прахать те – музыка хускалса каять. Ашшавлик çинче мĕн çиес тенĕ, çав пур* [Ванькка // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 176]. ≤ тут. хәзер.

**ХАЯРЛАНУ** тискерленӳ, усаллану, вĕресе кайни. *Митисен патшин хаярланăвĕ сасартăк чакрĕ* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 114].

**ХĂВ** хăвала. *Кĕтӳç кĕтĕвне хăвать / аслă Атăл улăхне* [«Кĕтӳç кĕтĕвне хăвать…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 144].

**ХĂВАН** савăн [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 505].

**ХĂВАНТАР** савăнтар [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ХĂЙ ПИТТИ** хăйне хăй ирĕк, хăй тĕллĕнхи. *…вырăссен «самостоятельный человек» тенин пĕлерĕшне çывăх чăвашла сăмах майлашăвĕ* [Тăван сăмах управĕн хĕрлĕ кĕнеки / хатĕрлекенĕ П. Львов // Ялав. 1989. № 8. С. 13].

**ХĂЙМАК-ХАЧМАК** халăх сăмахлăхĕнчи паттăрсемпе несĕл пуçĕсене асăнса калакан проза жанрĕ. *Хăймак-хачмакра, халапсемпе юмахсенче паттăрсен ячĕсем самаях нумай упранса юлнă* [Паттăрсемпе несĕл пуçĕсене калани // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 71].

**ХĂЙПĂКЛАН** хăйпашкалан, турпаслан. *Кил картинче / çурман каска та / куçа чикет, – / халех тухса, / пуртта илетĕп те / ваклатăп. Чăл-паррăн арканать, / ванать, / хăйпăкланать вăл сийĕн-сийĕн* [Романов Б. Çуралнă кил // Ялав. 1969. № 3. С. 12].

**ХĂЛА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Хăна килсен хăла пылна ан хĕрхен* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 369].

**ХĂМА КУПĂС** сĕрме купăс. *Хăма купăспа кĕсле калакансем Куславкка районĕнчи Урасметтĕвĕ ялĕсем* [Сунтал. 1929. № 7. С. 4].

**ХĂМÇИ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Сахьян такмак – çумĕнче, / кӳмĕлтĕрĕк – тӳшĕнче, / хăмçи – çумĕнче, кутлăхĕ – çийĕнче* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 20].

**ХĂНĂХЛАН** хăнăх? *Хăнăхланса ӳснĕ чух ирхи тăмĕнчен, кăнтăр шăрăхĕнчен, шăшийĕнчен-шăрчăкĕнчен, çилĕнчен-тăвăлĕнчен, курмайми тăшманĕнчен Эсĕ сыхла, Эсĕ упра* [Калăм кĕллисем. 259 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 89].

**ХĂНТ** кĕренке [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394]. < выр. фунт < акăлч. pound < лат. pondus йывăрăш.

**ХĂР** намăс. *Тата пирĕн тăвас тăшмана ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне ан çитер, шухăшланă шухăшне ан çитер, тытам-папам ăшне хăр пар, çырлах!* [Аслă кĕлĕ (киремете) калани // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 68].

**ХĂРĂК-ШАНКĂ** типĕ вут-шанкă. *Çӳрерĕ ку çапла вăрманта хăрăк-шанкă пуçтарса* [Хаяр карчăк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 127].

**ХĂРУШЛĂХЛĂ** хăрушă [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХĂТЛĂ-СĂТЛĂ** хăтлă; хитре. *Хăтлă-сăтлă çак тăван çĕре / тек кураймăп ырă тĕлĕкре* [Ахун В. «Керван çӳренĕ ĕлĕк ку çулпа…» // Тăван Атăл. 1986. № 5. С. 47].

**ХĂЯКЛĂ** хăяккăн. *Ачи-пăчи месерле, ашшĕ-амăшĕ хăяклă. (Сак)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 235].

**ХĂЯТ** Тутар Республикин Пăва районне кĕрекен Хăят ялĕнче ирттерекен ярмăркка. *Хăюсăр çын хăйиччен хăят та çитĕ, иртсе те кайĕ* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 107, 330].

**ХĔВЕРИ усал** [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394].

**ХĔЛХЕМЛĔХ** хĕлхем. *Юратрăм çиçкĕн куç хĕлхемлĕхне, / ĕнентĕм пуш сăмах илемлĕхне* [Тюменев С. «Юратрăм çиçкĕн куç хĕлхемлĕхне…» // Тăван Атăл. 2009. № 3. С. 99].

**ХĔНКĔР-ХЕНКĔР** хăнкăр-ханкăр. *«Пĕтрĕмĕр!» – тесе тулалла сирпĕнтерчĕç тет Мăкаччи, Кашкăрри… Упи алăк янаххи çине пыр вăрн! Алăк хĕнкĕр-хенкĕр! Упа çине йăтăнса ан!* [Пашалу // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 29].

**ХĔН-ХУРЛĂХ** хĕн-хур; пусмăр. *Ман çине хĕн-хурлăх килчĕ, анчах мана вĕрентекенни Санăн заповедӳсем* [Сехет кĕллисем. Чĕмпĕр, 1891. С. 18; Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХĔРАРĂМЛĂХ** хĕрарăм пулнине тивĕçтерекен паллăсемпе тыткаларăш. *«Мĕне кирлĕ сана ар çынсем çăпăçни, вăрçни, такама тыткăна илни, унтан хăтарни? – терĕ Лити патши. – Эсĕ – хĕрарăм. Хĕрарăмлăхупа телейлĕ пул, савăн, ар çынна та савăнтар!...»* [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 183]. *Ар çынпа хĕрарăм хушшинчи хутшăнусенче канăçлăхпа килĕшӳлĕх пултăр тесен ар çынри хĕрарăмлăхпа хĕрарăмри ар çынлăх пĕр тан пулма кирлĕ* [Чиндыков Б. Çĕр хăйăрĕн тусанĕ // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 146].

**ХĔРЕСЛĔ-ПИРЛĔ** урлă-пирлĕ. *Урлă-пирлĕ Урине, хĕреслĕ-пирлĕ Хĕреççин. (Чӳрече рамки)* [Тупмалли юмахсем // Илемлĕ литература. 1941. № 7. С. 101].

**ХĔРĔНКЕЙ** хĕрĕнкĕ. *Çав вăхăтра Питĕрте / пирĕн кĕслеç Çементей / майра патша умĕнче / кĕсле калать хĕрĕнкей* [Шупуççынни. Еркĕн // Сунтал. 1928. № 1. С. 10].

**ХĔРĔСЛЕН** хĕрелсе кай [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506].

**ХĔР-ПĔРЧĔК** хĕр пĕрчи, хĕр ача. *Вун пиллĕкри хĕр ача – вăрçă тапрансан – мăн çынсемпе пĕрле колхоз улăхне утă çулма каятчĕ… «Мĕнле ывăнма пĕлмест çак хĕр-пĕрчĕк», – тетчĕç вара хĕрарăмсем* [Скворцов Ю. Уках хурăнĕ // Тăван Атăл. 1961. № 1. С. 33].

**ХĔРХЕНĔВ** хĕрхенӳ, шеллев**.** *Эй Турă, Хăвăн хĕрхенĕвӳпе ман сассăма илтсем, Хăвăн суду урлă мана чĕртсем* [Сехет кĕллисем. Чĕмпĕр, 1891. С. 18].

**ХĔСКЕ** рак. *Раксем (хĕскесем) шывран типĕ çĕре тухаççĕ пулсан – çанталăк пăсăласса* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 137].

**ХĔСМЕТÇĔ** хĕсметре тăракан çын. *Хĕсметçĕ пӳлĕх тарçилле тӳрккесчĕ – / куç хӳрипе ун-кун пăхса илсех / çынна вăл кăмăллатчĕ е тиркетчĕ, / çăвар уçсан – ан курăн та текех* [Энтип В. Чĕнӳ чанĕ // Ялав. 1988. № 9. С. 12].

**ХĔТĔРĔН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çав хушăра вăл [Тимĕр] кĕсйинчен пăйăм-пăйăм кăларать те хĕтĕрĕнсе кайса тĕрлĕрен кĕвĕ кала-кала кăтартать* [Илпек М. Тимĕр // Тăван Атăл. 1966. № 3. С. 41].

**ХĔТĔРТӲ** хистев [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХИРЛӲ** çăм тапмалли хатĕр, пир туйи [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506].

**ХИРЛӲ-ПИРЛӲ** хирĕçӳ, вăрçă-харçă. *Хирлӳ-пирлӳ сак çине, / трн, трн, трн!.. / хăйăи çăмне чавмалла, / пурçăн мамăк*

*тумалла, / ӳссе çитнӗ сар хӗрне / пустав сӑхмань тумалла, / хӗрне качча памалла* [«Хирлӳ-пирлӳ сак çине…» // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 235].

**ХИСЕПЛЕШ** хутшӑн. *Пӗр патша хӑйӗн тарçисемпе хисеплешме тытӑннӑ* [Паллӑ мар çӑлкуç].

**ХИСЕПЛӖХ** хисеп [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХИТРЕШКЕ** хитре çын. *Халь ӗнтӗ Арçен Риййӑна ӳпкелешме пуçларӗ: «Мӗн тӑван çав хитрешкесемпе? Нивушлӗ халӗ те пӗлсе çитереймен çавсене?»* [Лисина Е. Рия // Çӑкӑр чӗлли. Шупашкар, 1994. С. 129].

**ХУЛАЛАН** хулари пек пулса кай [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХУЛЛЕ** хурлӑх? *Хуллен-хуллен пурнӑпӑр, хулле яшки çиӗпӗр* [Ваттисен сӑмахӗсем. Шупашкар, 2007. С. 100].

**ХУН КАЙӐКӖ** паллӑ мар кайӑк ячӗ. *Чипер хун кайӑкне пуçтарса пулӑшса пар мана, кепе турӑ амӑш!* [Аслӑ кепене хур кӗлли // Пилсемпе кӗлӗсем. Шупашкар, 2005. С. 62].

**ХУНЬКАССИ** хунь ашшӗпе амӑшӗ пурӑнакан ял [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХУПӐШУ** ар çынпа хӗрарӑмӑн улах хутшӑнӑвӗ [Сӑмах управӗ / хатӗрлекенӗ П. Львов // Ялав. 1990. № 10. С. 7].

**ХУПЛАВ** виткӗч [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХУРАВИК** черновик [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХУРЛАНЛӐ** хурланчӑк. *Сан ыр чунна вӑл тивӗç пултӑр – / таса ӗмӗтпеле çунан, / чӗрӗ те ян поэзи тулнӑ, / çӳл шухӑшлӑ, япшар чунна / çапах, ан тив. Эппин ӑшавлӑн / кӑмӑл тусам çак пайсене: / çурма шӳтле, çурма хурланлӑ, / халӑх халле те идеаллӑ, / тирпейсӗр йӑпанусене* [Пушкин А. Евгений Онегин / П. Хусанкай куçарнӑ // Илемлӗ литература. 1936. № 2. С. 21].

**ХУРЛĂХ-ШЫРЛĂХ** шар, инкек. *Таса çынна, Вучахăм, пар эс ырлăх / уçса хĕвел пек кăмăлна. / Çулта ан куртăр хурлăх-шырлăх, / хăну мухтатăр сан ятна* [Ахун В. «Усал чуна, Вучахăм, эс ан ăшăт…» // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ХУРТУМĂШ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Хура-мара хуртумăш, хуп-хупланкă хупламăш. (Пӳрт)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 235].

**ХУСКАВЛĂХ** тапранса кайни. *Хĕмпе çунан вучахшăнах вăл ир / çунан кăвар хĕмне хускавлăх сунчĕ…* [Янкас. Эпĕр – мĕльюнлă Ленин!.. // Сунтал. 1929. № 1. С. 6].

**ХУСКАЛУ** хускану**.** *Сан куллу ачалăх пек хитре, / тутусен хускалăвĕ – айванлăх…* [Яккусен П. «Сан туту ачалăх пек хитре…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 110].

**ХУТĂШУ** хутшăнчăк, пăтрашăнчăк. *Хула вырăнне вĕсен куçĕ умне çунса кĕлленнĕ пушă вырăн тухса тăнă. Кĕлпе шăмă хутăшăвĕ, унта-кунта чул кермен ишĕлчĕкĕсем* [Чиндыков Б. Хура чĕкеç // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 343].

**ХУЧАВЧĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Хутлă-хутлă хучавчă, урлă-пирлĕ кĕперлĕ. (Мунчала)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 250].

**ХӲМЕЛЕ** карта-хӳме тытса çаврăн**.** *Хӳмеленĕ картишсенче ĕçлекенсем хĕвĕшеççĕ: унта пулас заводсен пысăк цехсен никĕсĕсене хываççĕ* [Паллă мар çăлкуç].

**ХӲТĔЛЕСЛĔХ** хӳтĕлев, хӳтлĕх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХЫПАРЛАВ** пĕлтерӳ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ХЫТ КАÇМАК** хыт кукар [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

## Ч

**ЧАЛПАР** шăлавар [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ЧАЛХĂРККА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çын пулин анрашка, çын пулин чалхăркка, / чун хавалсăр поэзи кичем* [Федорова Л. «Эп пулсам ăрăмçах, эс пулсам Пĕсмĕлле…» // Ялав. 2003. № 8. С. 44].

**ЧАНКĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ик ен – чанкки çыран пек* [Ирхи Г. Кивĕ сăн ӳкерчĕк // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 69].

**ЧАРАХАЛЛĂ** чаруллă. *Çĕнĕ ывăл çуралсассăн, / чĕвĕл кайăк хушăнсассăн / çак ята чăваш хумарĕ, / ыррăн-сумлăн асăнмарĕ. / Ячĕ ун хура тамхаллă – / ĕмĕр-ĕмĕр чарахаллă* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ЧАРУЛĂХ** чару. *Эй Турă, çăварăма сыхă тăрат, çăварăма хупса тăма чарулăх пар* [Сехет кĕллисем. Чĕмпĕр, 1891. С. 110].

**ЧАРУ-ТĂВУ** чарса тăмалли сăлтавсем. *Туй халăхĕ «Ирĕк, ирĕк! Чару-тăву çук!» теççĕ* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 33].

**ЧАШКĂ-САВĂТ** савăт-сапа. *Пурте çисе тăрансан: «Ним те çук, пух чашкă-савăта!» – каллех хушать утаман* [Р-р-р, чукмар // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 272].

**ЧĂВАШЛĂХ** чăваш халăхĕпе çыхăннă пахалăх [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧĂКĂЛ-ЧĂКĂЛ** пулăхсăр, начар. *Хайрулла: Çĕрĕ монастырĕн аван, çавăнпа тырă лайăх пулать… Халăха çырмалă çĕрсем çех хăварнă. Çӳлли: Çапла çав, Хайрулла абзи! Чăкăл-чăкăл çĕр хăварнă хура халăха* [Максимов-Кошкинский И. Çĕр çĕкленет // Трактор. 1934. 10-мĕш кĕнеке. С. 51].

**ЧĂМĂРТАН-КАЛĂПЛАН** пулăнса тăр, йĕркеленсе çит [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧĂНЛАВ** пулăм, чăнлăхри япала [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧĂПЧĂМ** шăмăллă тĕк. *Тăрнашка. Вĕренсе ларас килет-и? Ванюш. Килмесĕр. Тăрнашка. Пĕр вĕренсе лармасăрах пятеркăсем илме пултаратăн эсĕ. Çапла туса парам-и? Ванюш. Епле майпа? Тăрнашка. Ман сылтăм çунатран пĕр чăпчăммине ил те, вăл вара хăех çырать* [Ухсай М. Тăрна чăпчăмми // Ялав. 1947. № 4. С. 18].

**ЧĂРМАЛАНЧĂК** чĕркеленчĕк. *Чармаллаччĕ, чармаллаччĕ / çавра çилĕм-пĕккĕме / тăтăм юлтăм чăрмаланчăк / чĕремпе те ўпкемпе* [Федорова Л. «Çавăрать çула вĕçенчĕк…» // Анне пехилĕ. Шупашкар, 2014. С. 66].

**ЧĂС** суй. *Вăçили каларĕ: «Эпĕ санăн йоратнă кĕрў пулатăп!» – терĕ. – «Лапах-и?» – терĕ ĕмпў. – «Чăнах çав, чăсмасăрах калатăп!» – терĕ* [Асамлă çапкăçпа вут чулĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1973. Т. 1. С. 289].

**ЧЕЕ-УЛТАВÇĂ** суеçĕ. *Шуйттансем аптраса чее ултавçă арăм патне пынă та каланă: «Эпир арлă-арăмлă пурăнакан çынна сылăха кĕртме вун икĕ çултанпа тăрăшатпăр…» тенĕ* [Чўк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 109].

**ЧЕМЛЕНТЕР** кўрентер. *Çук çын тесе чемлентерчĕç, / юри туйпа килтĕмĕр* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 118].

**ЧЕПЧЕН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Патша хĕрĕ – пиллĕ хĕр, / çепĕç – сарă чепченрен* [Улăппа Нухрат патша хĕрĕ Сарине // Халăх эпосĕ. Шупашкар, 2004. С. 280].

**ЧЕСРЕС** хăямат. *Ванькка калать: «Айăпĕ-мĕнĕ чесресе кайтăр. Эсĕ мана амун кĕслине илсе тухса пар», – тет* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ЧĔКЕ** чăнкă [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 328].

**ЧĔКЕНЛĔ** тĕрĕллĕ, эрешлĕ. *Ăна çуртра пĕр çын çӳрет çавна, унта чĕкенлĕ минтер хураççĕ, çăмарта параççĕ* [Мункун юррисем // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 409]. ≤ тут. чиккән.

**ЧĔКĔ** çивĕч? *Урхамахĕ улма чăпар… / тăлпăвĕ тимĕр, чĕрни чĕкĕ, / таканĕ кĕмĕл, тĕсĕ шур пăвăр* [Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 20].

**ЧĔМЛĔХ** сывлав, пурнăç, конт. тĕшĕ, пĕлтерĕш? *Чунлăх – хӳтлĕх. / Чĕмлĕх – хутлăх* [Яккусен П. «Пуç çинче тăри çухалчĕ…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 297]. *Чун чĕмлĕхне шырап / кун сĕмлĕхне тӳсеймесĕр* [Яккусен П. «Пурте эпир сывă мар…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 334].

**ЧĔНТĔРÇĔ** чĕнтĕр çыхакан çын. *Вологда хулинче халĕ ятарласах чĕнтĕрçĕсен шкулне уçнă* [Чĕнтĕрçĕсем // Ялав. 1963. № 7. С. 7].

**ЧĔПЧĔРККЕ** кăткăс тĕрĕ ячĕ [Жачева Е. Чăваш тĕрри // Ялав. 1990. № 12. С. 33].

**ЧĔРĔ-СЫВĂ** ырă-сывă, сывлăхлă. «*Пĕр тимĕрçе те чĕрĕ-сывă хăварма юрамасть! – тарăхсах ăнлантарчĕ Кеттени. – Хамăр кăна пĕлекен вăрттăнлăх пĕтĕм тĕнчене сарăлма пултарать!*» [Юхма М. Хĕвел хапхи // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 67].

**ЧĔРККЕ** вăрăм туна. *Ĕлĕк пĕрре çĕлен вăрăм тунана (черккие) тĕл пулнă та каланă: «Тĕнчере кам юнĕ тутлăрах, çавна пĕлсе кил-ха» тенĕ* [Чĕкеç хӳри мĕншĕн икĕ юплĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6. П. 2. С. 71]. *Эх, пурччĕ вĕт вăхăтсем, / кĕсье тулли чечексем. / Тупăлхаран турта туса / чĕркке кӳлнĕ вăхăтсем* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 55].

**ЧĔРЛĔХ-ЧУНЛĂХ** чĕрĕ чунсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧĔРМЕШ** чăрмала. *Нямаç паян Пăвана тухса кайрĕ-ха, чĕрмешсе кăвакартнă питпе ял çинче курăнма намăс тет* [Илпек М. Хура ыраш // Тăван Атăл. 1956. № 6. С. 76].

**ЧĔРПĔЛ-ЧĔРПĔЛ** çиçкĕн. *Чĕрпĕл-чĕрпĕл çăлтăрсем, / сиввĕн ан пăхăр!* [Чĕкеç Ç. Йăвăр çул хыççăн // Сунтал. 1924. № 6. С. 30].

**ЧИКĔЛЕНӐ** чикĕленсе тăни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧИНГИСХАНЛĂХ** пусмăрлăх, сĕмсĕрлĕх. *Тĕнчере тĕп пулман чингисханлăх! / Вăл сана чура чунлĕ çуратнă!* [Яккусен П. «Ялтăрти пурнăç тинĕсĕ – анлă…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 237].

**ЧИНУК** ашăк, чăпта [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ЧИРКӐÇĔ** чиркӳре ĕçлекен çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧИСМА** хăю. *Çитсе кĕпе аркине / виç хут чисма çавăртăм* [Улах юррисемпе такмаксем. 2012 // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 265]. < выр. тесьма.

**ЧИТ** ют çĕр-шыв. *Чит çĕрсенче пурăнма / ытлашши те йывăрмĕн* [«Сар мăйăра çӳреме…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 189]. ≤ тут. чит.

**ЧУКĂН** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Халь те унăн ачисем / çичĕ тинĕс леш енче / ашшин чукăн çĕлĕкне / кайса илесчĕ тесе / тăраççĕ тет йĕтесе* [Н. И. П. (Уç). Пӳлере илни çинчен // Сунтал. 1925. № 10. С. 28].

**ЧУКЛА** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Кĕсре калать тет: «Эсĕ хăвăнпа пĕрле чукла, шчеткă, йĕп ил», – тесе* [Хĕрпе кĕсре // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 151].

**ЧУКМАРЛА** хӗне. *Чукмарланӑ ҫеҫ мар – эмелленӗ / критик йышӗ поэт таврашне* [Хусанкай П. Поэмӑсем. Шупашкар, 1960. С. 70].

**ЧУКМАРҪӐ** чукмарпа ӗҫ хатӗрӗ пек усӑ куракан ҫын, конт. критик. *Пире ӑс-тӑн парса супаҫҫӗ / хисеплӗ-сумлӑ кантурсем, / пиртен тӑвасшӑн параппанҫӑ / «ыр сунӑмлӑ» чукмарҫӑсем* [Чекушкин-Юмарт В. Ҫул ҫинче // Тӑван Атӑл. 2008. № 6. С. 50].

**ЧУКШАН** чукмар. *Пуян ҫынпа тус пултӑм та, / ҫурмран чукшан каймарӗ* [«Пуян ҫынпа тус пултӑм та…» // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 53].

**ЧУЛПУ** туй арӑмӗн кӗпи умне ҫакакан япала. *Ылтӑн чулпу, пурҫӑн ҫивӗт / садри хурӑн ҫийӗнче* [Пушкӑрт Республикинче пурӑнакан чӑвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 35].

**ЧУМАНЛӐХ** кахаллӑх? *Чуманлӑх сехӗрленнӗ: «Пӗт, тухатмӑш!..» / Тытса ҫынна вӑл ҫакнӑ каштаран… / Ачалӑхяшлӑха ҫапла эп куртӑм, / халь халӑха калар-и – вӑй питти!.. / Ӑна ҫунат пилленӗ аслӑ туртӑм, / чуманлӑх чараймасть, кӗске турти!* [Юман А. Пирӗн ӗмӗр // Ялав. 1985. № 11. С. 15].

**ЧУП ТӐВАШ** чуп ту. *Салли Ника тем каларӗ. Ник савӑнсах ура ҫине сиксе тӑчӗ. «Ӑҫтарах-ши?» – хыпаланчӗ вӑл. «Урайӗнче пуль?» – ыйтрӗ Салли Барбарӑран. «Ӑхӑ», – терӗ лешӗ, вара вӗсем иккӗшӗ хире-хирӗҫле тӑчӗҫ те кула-кула, чуп тӑвашачуп тӑваша пӗр-пӗрне хывӑнтара пуҫларӗҫ…* [Чиндыков Б. Нараста // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 65].

**ЧУП ТӐВУ** чуп туни. *Сарӑ каччӑ сарӑ хӗвел пек вӗри; эпӗ те, сарӑскер, сасартӑках хам та сисмесӗр, унӑн хӗрӳлӗхӗнче сар ҫу пек ирӗле пуҫлатӑп, вара ирӗлетпӗр, ирӗлетпӗр эпир унпа иксӗмӗр те сарӑ ҫу пек, вара пӗрле ирӗлсе пӗтӗҫетпӗр хӗрӳ-хӗрӳ, вӗри-вӗри тутасен ытамӗнче!.. Анчах ҫӗр варринче кӗҫ-вӗҫ хыпса*

*илес пек вĕри минтере ыталаса вăранса каятăн та – тутасем уйрăлаççĕ, чуп тăву вĕçленет* [Чиндыков Б. Хура чĕкеç // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 327].

**ЧУПТАР ÇЕÇКЕ** хĕрлĕ чечек [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 519].

**ЧУПУÇĂ** чупакан çын [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЧУРА-ХĂРХĂМ** чура, тарçă. *Юрă çаплах янăрарĕ те янăрарĕ: Суятăн, усал Эскемер, / пире чура-хăрхăм тăваймăн. / Суятăн, усал Эскемер, / пире сăнчăрта эс усраймăн* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 480].

**ЧУРТ-ЧУРАМА** усал-тĕсел [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437]. < выр. чёрт.

**ЧУТТАХ** ăнсăртран. *Эпир пырса кĕрсессĕн – / чисти майра хĕрĕ пек, / чăнах майра теейсе / чуттах вырăсла чĕнеттĕм, / чуттах намăс курăттăм* [«Эпир çак хĕре хĕр темен…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 20]. < выр. чуть (-чуть).

**ЧУХЛАСА АПАТ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах майлашăвĕ. *Пуян ывăлĕ кайма пулнă. Хĕвел хăйĕн тумтирне тахăнтарнă, хăй лаши çине утлантарнă та каланă: «Эсĕ ху ан хăвала лашăна, вăл хăех пырĕ. Чухласа апат тĕлĕнче Пихампар симĕс алтăрпа сим тытса тăрĕ»* [Пуян ывăлĕ // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 251–252].

**ЧӐКЛЕВÇĔ** халăх тĕнĕпе пурăнакан çын. *Эп – вĕрӳçĕ чăваш, эп чӳклевçĕ чăваш!* [Ахун В. Эп – чӳклевçĕ чăваш // Ялав. 1991. № 9. С. 19].

## Ш

**ШАВКАМ** шăв-шав, пăлхану [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 329].

**ШАЙЛАШУ-ÇЫХĂНУ** пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ШАКĂЛ ТУЛĂ** шултра пĕрчĕллĕ тулă [Сăмах управĕ / хатĕрлекенĕ П. Львов // Ялав. 1990. № 7. С. 7].

**ШАЛĔК** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Выльăх-чĕрлĕхе вăрă вăрласа каясран, тискер кайăк пусасран, чир-чĕртен, путса вилесрен, шалĕк тăрне пуласран, тискер чир ересрен эс упра, эс сыхла, куншăн тайăлатпăр, пуç çапатпăр* [Çинçе вăхăтĕнчи учук кĕлли. 381 // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 138].

**ШАЛПАКА** шалпар [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394].

**ШАНКАЛ** çулçисĕр-хупписĕр тăрса юлнă йывăç. *Рия хăйне ăсаттарма та памарĕ, Арçен пирки вăл: «Ку çын пирĕнпе ан пытăр», – терĕ. Тăрса юлчĕ Арçен – шанкал пек, шывран кăларса пăрахнă пулă пек, тымарĕпе кăкласа ывăтнă курăк пек* [Лисина Е. Рия // Çăкăр чĕлли. Шупашкар, 1994. С. 125].

**ШАНТАР** жандарм. *Сакăр вун салтак, икĕ шантар, пĕр улпут. (Тĕренче)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 236].

**ШАРЛУ-ТĂВУ** хăюсăр калани [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ШАТ** телей. *Комсомол хыççăн / савăçлă юрă / юрлăр та утăр, / халăх шат куртăр* [Хусанкай П. Пионерсен маршĕ // Сунтал. 1925. № 3. С. 25]. ≤ тут. шат.

**ШАТĂН** юмахри тĕксĕм вăй, усал. *«Вăйли çук та…» тенине хушаттăн, / вĕрентӳçĕ, пуçăмра тытма, / те кун-çул, те киремет, те шатăн / вăрттăн сăнсăрлаççĕ асăма?* [Энтип В. Çĕрпе тӳпе // Тăван Атăл. 1989. № 8. С. 28].

**ШАТĂРТАТТАРУ** шатăрт-шатăрт шав кăларни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ШАХВУР** лаша вăрри [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394].

**ШАХЧĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Шахчă шыва каять. (Курка)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 247].

**ШĂВАЧУР** вăрă. *Пирĕшти кашни çуртрах / имĕш пурăнать. / Вăл кĕртмест шăвачура, / сĕмсĕр уртана* [Федорова Л. «Пирĕшти кашни çуртрах…» // Ялав. 2003. № 8. С. 44]. < выр. живодер?

**ШĂВĂШЛĂХ** йывăрлăх, ленкер [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506].

**ШĂЛ ÇУРИ АН ПУЛТĂР** ан чĕн. *Анчах каччи-кăччи ан пĕлтĕр нимĕн те, / çынсене шăл çури ан пултăр сирĕн те* [Шупуççынни Н. Еркĕн // Сунтал. 1928. № 2. С. 6].

**ШĂНАРШĂ** сăпка [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506].

**ШĂНКАРТ** тавăр. *Çанăсене шăнкартсах (тавăрсах) ĕçе тытăнмалла* [РКП Чăваш облаçĕнчи организацин тăххăрмĕш конференцийĕ // Сунтал. 1924. № 6. С. 35].

**ШĂНТТАРАЙ** ăсран тайлăкрах çын [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506].

**ШĂПĂТ** чӳклеме пĕçернĕ пăри пăтти**.** *Халăх пухăнсан уй чӳкне йĕркелесе пыракансем пĕçернĕ пăри пăттипе (шăпăтпа) пĕтĕм тĕнчешĕн тесе Турра пуç çапнă* [Çуллахи чӳк кĕллисем // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 103].

**ШĂРЧАНУЙ** çăмран çыхнă япала çинчен [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 506]. ≤ выр. шерстяной.

**ШĂТĂК-ШĂКĂР** шăтăк. *Çавăнпа Хун çилленнипе йăт çурипе амăшне сĕм вăрмана шăтăксăр-шăкăрсăр пура ăшне кайса ярать тет* [Хунпа арăмĕ // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 127].

**ШĂША** савăт. *Хĕрсем çăхана икĕ шăша (савăт) пачĕç те, вăл кранклатса вилĕ шывĕпе чĕрĕ шывне илме вĕçсе кайрĕ* [Çитмĕл çичĕ чечекрен çĕлетнĕ кĕпе // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 96].

**ШĂШИ-МĂШИ** шăши. *Вылянӑ чухне çапла пуплеççĕ: «Шăши-мăши ăçта?» – «Шăтăкра»* [Воронцов Г. Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 92].

**ШЕВЛЕЛĔХ** шевле, ялкăшу. *Сан хăвăн хĕвелӳ. Эс курăн / ун йăлтăрти шевлелĕхне* [Яккусен П. «Хура хĕвел шăнса пăрланчĕ…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 171]. *Атя сывăрмастпăр кĕçĕр: / сăрт çийĕн шевлелĕх çиçĕ, – / курмашкăн атя, савниçĕм* [Яккусен П. «Ир учĕ тĕтрелĕх ĕçĕ…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 239].

**ШЕМШЕК** начар? [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 519].

**ШЕНКЕВ ЧУЛ** гранит. *«Шенкев чул пек…» сăмах илтетĕп / пин-пин çулхи чĕлхемĕрте* <…> */ Гранит сăмах çапла çӳренĕ / атте-анне пуплевĕнче* [Ахун В. «“Шенкев чул пек…” сăмах илтетĕп…» // Ялав. 1987. № 11. С. 15].

**ШЕПЕР** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Куккук шепер, куккук шепер, / хĕрлĕ шура хĕрсем путнă* [Хăрхăмпа пике // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 76].

**ШЕХЕР** наркăмăш. *Çĕлен пек йĕркесем шăваççĕ, / пĕри – сим пыл, тепри – шехер* [Дмитриев А. Поэзи // Тăван Атăл. 2010. № 3. С. 91].

**ШĔНКĔЛ КАЙĂК** паллă мар кайăк ячĕ. *Уçланкăн пĕр хĕрринче виç-тăватă çамрăк хыр пĕлĕтелле кармашса ларать. Шĕнкĕл кайăка курас тесен тӳрех çав хырсем патнелле кăна пыр* [Элкер Ç. Шĕнкĕл кайăк // Шĕнкĕл кайăк. Шупашкар, 1974. С. 106]. *Эс, Çерукăм, шĕнкĕл кайăк, / чуп сиксе умри çулпа* [Ахун В. Ах, хитре Апаш тĕпекĕ // Ялав. 1986. № 6. С. 9].

**ШИКАРИКИ** вӑйӑ ячӗ. *Сиксе улӑхса ларсан ачасем ши-ши-ши! тесе кӑшкӑрса пыраççӗ. Вӑйя çавӑнпа шикарикилле ят панӑ* [Воронцов Г. Ача-пӑча вӑййисем. Шупашкар, 1992. С. 52].

**ШИНКАР** хупах хуçи. *Çиччӗпелен кайрӑм ямшӑка. / Шинкар патне кӗтӗм каç выртма…* [«Çиччӗпелен кайрӑм ямшӑка…» // Ӗçпе йӑла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 77, 519]. ≤ выр. шинкарь. ≤ пол. szynk.

**ШИНККИ-ШИНККИ** шыв юххине евӗрлекен сӑмах. *Шинкки-шинкки шыв юхать / шитти карта çуммипе…* [Львов П. Ир çинче // Ялав. 1983. № 6. С. 6].

**ШИХВАНКӐ** сирень. *Мӑкка айккинелле пӑрӑнса шихванкӑ тӗмӗ айне пытанса ларчӗ* [Садай В. Аттесемпе пӗрлех кӑвакартӑмӑр // Тӑван Атӑл. 1978. № 8. С. 26].

**ШТАНТӐР** стоп. *Мечӗке тытса ӗлкӗреймесен, вӑл çӗре ӳксен сиксе илнӗ мечӗке тытать те штантӑр! е стоп! тесе кӑшкӑрать* [Воронцов Г. Ача-пӑча вӑййисем. Шупашкар, 1992. С. 86].

**ШУЙТТАНЛӐХ** аскӑнлӑх, усаллӑх. *Поэт вара, мӗскӗн телейсӗр поэт, юрату çинчен, Юльӑн чапӗпе вилӗмсӗр илемӗ, мӑн кӑмӑллӑхӗпе шурӑ-шурӑ ӳт-пӗвӗ, ӑшри тасалӑхӗпе тулашри асар-писер кӗвӗçмелле хитрелӗхӗ, турӑлӑхӗпе шуйттанлӑхӗ çинчен канӑçма пӗлми шутларӗ те шутларӗ, чунне, ӑсне, ӳт-пӗвне ӑшаларӗ шухӑш çатми çинче* [Чиндыков Б. Тухса кайиччен // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 103].

**ШУКАЛӐХ** пӗлтерӗшӗ паллӑ мар сӑмах. *Тӑв айкки хӗрри – шукалӑх, / шумастӑр-çке, ачасем!* [«Тӑвайкки хӗрри – шукалӑх…» // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 305].

**ШУР ПУÇ ЙЫВӐÇÇИ** хуппине сӳме татса хунӑ çамрӑк çӑка вулли. *Унӑн [вупӑрӑн] пур хӑйпе шур пуç йӳççи, / утланать те ун çине хӑрушшӑн!* [Федорова Л. Вупӑр // Ялав. 2003. № 8. С. 43].

**ШУР ТУЛĂ** рис. *…китайсем мĕн авалтанах шурă тулă, урăхла каласан рис тăваççĕ* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 84].

**ШУРАШКА** шурă тĕслĕ. *Пăчăри, пăчăри! / шыв сиппе пытăр-и! / Ĕç, хитре пăрушка, / сып, хура шурашка* [Тимахви А. Пăчăри, пăчăри // Тăван Атăл. 1983. № 6. С. 59].

**ШУРУ-МУРУ** кашкăр. *Шуру-муру килнĕ те чикки-приккине вăрласа кайнă. Çавна чам ачисем илтнĕ те хуçисене каланă. Хуçисем шуру-муруна хăваласа çитсе вĕлернĕ, чикки-приккине илсе таврăннă. (Сурăх, йытăсем, çын, кашкăр)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 206].

**ШУТ-ХИСЕП** хисеп калăпăшĕ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ШӲШӲ ЯШКИ** темĕнле яшка ячĕ. *Ир çинче хĕре шӳшӳ яшки пĕçерме каланă та хăй [старик] тухса кайнă* [Юратман хĕр // Нараста юмахĕсем. Шупашкар, 2012. С. 28].

**ШЫВЛАМ** тĕрĕ тĕсĕ. *Куратпăр, шывăн сиккинче / хĕвел ачи шывлам тĕрлет пек* [Удалов М. Юрату хĕлхемĕ // Тăван Атăл. 1970. № 10. С. 27].

**ШЫРАВ-ТИШКЕРӲ** тĕпчев [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ШЫРĂШ** шăналăк [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 437].

**ШЫРĔÇ** паллă мар ӳсен-тăран ячĕ. *Юрататăп эпĕ курăксе, / тутлă шарăш пур тесе; / шултра пуçлă шырĕçе / тĕшĕ лайăх пуль тесе* [Турхан Я. Юрататăп эпĕ курăксе… // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 245, 446].

## Ы

**ЫВĂНТ** ĕшентер. *Яра куна тăрăшса ĕçленипе / ал-урана аванах ывăнтрĕ* [«Тавтапуçăм улаях та кĕсрене…» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 22].

**ЫЙТĂМ** халăх шухăшне ыйтса пĕлни [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЫР ТĔКĔН** ырă шухăш-кăмăллă çын. *Уйăх çутипе çӳрекен ыр тĕкĕн мар* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 22, 424].

**ЫРĂ МАРЛĂХ** шар, инкек [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЫРĂСЕМ-КИРЕЛӲ** киремет. *Ху выçă лар та эс киремете чӳклеме ан ман. Çынсене çиллен те ун умĕнче йăваш пул. Вăрçса-хирĕлсе эс ырăсене-кирелĕве çеç тарăхтаратăн* [Уяр Ф. Таркăн // Тăван Атăл. 1984. № 4. С. 21].

**ЫРЛĂХ-РЕХЕТ** ырлăх. *Кун-çулăн ырлăхĕ-рехечĕ / сасартăк пухăннăн чунра* [Ирхи Г. Слакпуçĕнче // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 66].

**ЫРМАЛĂХ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Ик ен – чанкки çыран пек. / Шăп варринче – ырмалăх – / кĕр çутипе сăрланнă / каçса тухми çырмалăх…* [Ирхи Г. Кивĕ сăн ӳкерчĕк // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 69].

**ЫР-ХАЯР** халăх тĕнĕнчи турă ячĕсем [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЫТАМЛА** ытала [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЫТАРĂШ** ытарласа каланă хайлав [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЫТАХ** тата, тепĕр тесен. *Ытах хуçан мĕн пулĕ? Хуçăк шĕшли, катăк пуртти пулĕ* [Утаман (атаман) сăмахĕ // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 96].

**ЫТЛĂХ-ÇИТЛĔХ** çителĕклĕх, тулăхлăх. *Перекет – ырă турă, ытлăх-çитлĕх турри* [Юхма М. Юрăçпа патша // Юхма М. Алтăр çăлтăр çути. Шупашкар, 2007. С. 372].

**ЫТТИ-ХЫТТИ** урăххи [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

## Э

**ЭККĔЛ** паллă мар чечек ячĕ. *Виç çеçпĕл, ик эккĕл хуратăп Чавайн умне* [Исмуков Н. Мари Эл // Ялав. 1989. № 11. С 11].

**ЭЛЕК-МАСАР** çын çинчен саракан усал сăмах. *Ялти сӳпĕлти, элек-масар саракан, паврама ӳркенмен ват супнă халиччен никам патне те телей кӳме çӳремен* [Юхма М. Чăваш хĕрĕ // Тăван Атăл. 1968. № 5. С. 19].

**ЭЛМЕН** аслă киремет ертӳçи. *Çуллахи чӳклеме (мăн чӳк) виçĕ, тăхăр, вун икĕ çултан пĕрре çаврăнса çитет. Ăна элменпе виçĕ эптер (хутлăха кĕрекен ытти аслă киремет ертӳçисем) тата çав тăрăхри кашни ялтан килнĕ мăчавăрсем виçĕ картпа икĕ карчăк йĕркеленĕ* [Çуллахи чӳклеме // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 112].

**ЭЛЧĔЛĔХ** посольство [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЭНЕШ** каяш. *Çӳлĕ тусем çинче тулă кăшăлĕ, / ан уйăрăр хӳрипе энешне. / Халиччен пĕрле пурăнтăмăр, / ан уйăрăр кунтан малашне* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 131].

**ЭНЧЕН** вăйсăр, халсăр, хавшак [Сăмах управĕ / хатĕрлекенĕ П. Львов // Ялав. 1990. № 10. С. 7].

**ЭПТЕР** аслă киремет ертӳçи › **ЭЛМЕН.**

**ЭРЕМ** харам, вилӗм. *Эх, тăванăм, каян вӗт, / сан юлашки паян вӗт. / Юта тухса ыр курмасан / эс эремех каян вӗт* [Пушкăрт Республикинче пурăнакан чăвашсен юррисем. Шупашкар, 2013. С. 117]. *Сăрине юрламасăр ӗçес мар, / хуçа сăрине эрем тăвас мар* [Çавăнтах, с. 157].

**ЭРӖШ-МЕРӖШ** ăпăр-тапăр. *Ӳкеретӗн темле эрӗш-мерӗшсене, нихăш енчен пăхсан та хуçкаланчăк йӗрсемсӗр пуçне урăх ним те кураймастăп эпӗ вӗсенче* [Чиндыков Б. Алăксем умӗнче // Чиндыков Б. Тухса кайиччен. Шупашкар, 2009. С. 249].

**ЭРХЕЛЕЙ** архиерей. *Хваттер хуçин ӗни пăрулать те пăрăва ăшăнма кăмака çине вырттараççӗ. Тарçă тăрать те: «Пачăшкă, тăр-ха, тăр, эсӗ пăру çуратнă» – тет… – «Ан шарлах! Эпӗ таратăп!» – тет пуп. – «Эрхелей кунтах. Эрхелей пӗлсен пупран кăларать, часрах тар», – тет тарçи* [Хытă пуп // Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 62].

**ЭТЕМККЕ** çын пекки [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЭХЕРЛЕН** кăшкăр [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 394].

## Ю

**ЮКУРИ (ЯКУР) КУНӖ** вырăс тӗнӗнчи Георгий святоя асăнмалли кун (çӗнӗ стильпе çу уйăхӗн 6-мӗшӗ, раштавăн 9-мӗшӗ). *Юкури кун ирхине сывлăм нумай ӳксен çав çул хура тул пулать* [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 153, 331].

**ЮЛТАЙ** ютшăнчăк. *Ют хушшинче юпах тиха та юлтай* [Чăваш халăх сăмахлăхӗ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 52, 330].

**ЮМАНЛАН** юманлăх ӳстер. *Сăрт çамкинче юманлансассăн тин / ăнлантăм юман йывăç хуйхине* [Яккусен П. «Пĕлетĕн-и, мĕскер вăл – кĕркунне…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 221].

**ЮНКАВ** аслă юн кун. *Юнкавăн (аслă юн кун) çанталăк çиллĕ пулсан тырă тăкăнать* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 152, 331].

**ЮНКĂЛТИ** › **енкепи.**

**ЮНХАВЛĂ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çил кăна тăхта пĕлмесĕр / халь улать кунта кӳнесĕр. / Хурлăхлă ун сасси, юнавлă, / хăрхăм хӳхĕ пек юнхавлă* [Ахун В. Хура тамха // Ялав. 1984. № 4. С. 4].

**ЮРАТĂШ** юрату. *Пĕр-ик минут вĕсем чĕнмерĕç, / анчах Онегин пычĕ те / каларĕ: «Эсĕр мана çырнă-ç, / ан тунăр. Вуласа пĕлтĕм / эп ĕненӳллĕ чун чĕмне те, / таса юратăш сĕмлевне те…* [Пушкин А. Евгений Онегин / П. Хусанкай куçарнă // Илемлĕ литература. 1936. № 3. С. 37].

**ЮРАТУЛĂХ** юрату туйăмĕ [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЮРĂ** йывăр? *Тунти кон – юрă кон тенĕ* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 110].

**ЮРĂ-ТАКМАК** юрă [Обратный словарь чувашского языка. Хельсинки, 2009. С. 344].

**ЮРИ** пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах. *Çук çын юри тĕпĕнче пĕр пĕрчĕк тырă пулмасан та шăлса пуçтарсан пĕр пăт пуçтарăнать теççĕ* [Ваттисен сăмахĕсем. Шупашкар, 2007. С. 287].

**ЮСĂ-ЮСЛĂ** тĕрĕс-тĕкел, сывă. *Ырă çын умне тăрсан ырă пит, тутлă чĕлхе, юси-юсли пил парăсăнччĕ* [Калăм кĕллисем // Пилсемпе кĕлĕсем. Шупашкар, 2005. С. 89].

## Я

**ЯКРАКА** типĕ те хытă курăк. *…Çулма тытăнмалли якрака. Хытă ялтракан пралук пек курăк. Çава илмест* [Еллиев Е. Çаран çинче // Трактор. 1933. 5-мĕш кĕнеке. С. 12].

**ЯЛКĂШКА** çиçсе-йăлтăртатса тăракан капăрланмалли хатĕр. *Капăркка – кайăк тĕкĕнчен тунă илемлĕ ялкăшка* [Юхма М. Ылтăн ту – тăван кил // Юхма М. Аслă çул. Шупашкар, 2010. С. 194].

**ЯЛТĂРМА** çиçкĕн япала. *Шурă юр çине çунă та шур ялтăрма, / хĕртсе хĕвел пăхсан та – ирлес çук* [«Шурă юр çине çунă та шур ялтарма…» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 49].

**ЯЛТРАВ** йăлтăртату. *Кичем ӳсен-тăран хайлавĕ, / кăваклăхăн ачаш ялтравĕ / тыткăнламаççĕ ăнсăртран* [Ирхи Г. «Пĕрре çеç курнă пурнăçра эп…» // Тăван Атăл. 2009. № 2. С. 67].

**ЯЛТРАВЛĂ** çиçкĕн, йăлтăрти. *Çав тĕнчере, ялтравлă тĕнчере, / пĕлмен никам та: / мĕн вăл – сив хаярлăх?* [Яккусен П. «Хĕвелĕ ăмăрт кайăкла ансан…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 121]. *Епле çуталса, ялтравлăн / ир кӳлĕм инçет çиçет…* [Яккусен П. «Епле çуталса, ялтравлăн…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 314].

**ЯЛТРАВЛĂХ** çиçкĕнлĕх, йăлтăртатулăх. *Хуласем сана тухатĕç, / илĕртĕ сивĕ ялтравлăх* [Яккусен П. «Урампа утса иртем те…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 240]. *Сана тухатрĕ çӳллĕ ту тăрри, / ту тăрринчи куçа шартан ялтравлăх* [Яккусен П. «Çырлахтармарĕ умăнта пурри…» // Яккусен П. Кĕмĕл кимĕ. Шупашкар, 2010. С. 251].

**ЯМ** шăтăк. *Аслă ямра сим вĕрет. (Сăра йӳçни)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 277]. < выр. яма.

**ЯМАН** кăйттă, начар. *«…Дьяволов, яманрах сывлăхлăскер, çарта та пулман, çар учетĕнче те тăмасть», – терĕ военком* [Садай В. Аттесемпе пĕрлех кăвакартăмăр // Тăван Атăл. 1974. № 11. С. 42].

**ЯНАХСĂР** чарăнми ятлаçакан. *Пурте ку сăмахсене илтсен хĕпĕртесе кайнă: «Атьăр çакас!» – тесе кăçкăрнă*

*янахсăртарах шăшийĕсем (янахсăр тесе пĕрмай ятлаçакан çынна калаççĕ»* [Кушакпа шăшисем // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 81].

**ЯНТАК** яштака, çӳллĕ, çапсан янраса тăракан сăсăлсăр çирĕп йывăç. *Янтак чăрăшсем вăрман варринчен / пăхнă кармашса тĕнче хĕрнелле…* [Элкер Ç. Хĕн-хур айĕнче. Шупашкар, 1993. С. 6].

**ЯПТАШКА** чупкăн. *Ялта япташка, киле пырсан – купташка. (Йытă)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1984. Т. 5. С. 203].

**ЯРКАЙ** коньки. *Ĕнтĕ шывсем пăрпа витĕнеççĕ, / илемлĕ урай пек курăнчĕç; / хавас халахăн – ачасенĕн / пăра йĕрленĕ яркайĕсем* [Турхан Я. Кĕр куннепе хĕлле // Революциччен-хи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 253, 447].

**ЯРКАМ** ярăнса ӳсекен [Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 519].

**ЯРПАЙТ** сарăлтар, ешерттер. *Унтан тĕп сакайĕнчен тухсан тата тăвар шывне ярат çав ача çуралнă тĕлтенех: «Çĕр ашшĕ, çĕр амăш, ачана ан сăхлан, ан ăмсан, ӳсме ирĕк пар, хăмла пек хăпарт, çулçă пек ярпайт», – тесе* [Петров М. Ача çурални // Революцичченхи чăваш литератури. Шупашкар, 1984. Т. 1. С. 117, 442].

**ЯТАМАС** ятсăр. *Ятамас салтак йăлт та ялт, / çăнăх чăпти паш та паш. (Мулкач)* [Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 194].

**ЯТАШ** хут. *Вот пурте лашисене хуçа пӳрт урлă сиктерме тапратрĕçĕ тит. Пĕрин та лаша хоть пĕр яташ çӳлĕш те сикимарĕç тит* [Кукша Йăван // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 205]. ≤ выр. этаж.

## Чăвашла-вырăсла сăмах кăтарткăçĕ

### А

**аванлаш** стать благородным
**аванлăх** добродетель
**авăртаканçă** мельник
**авторсăрлăх** анонимность (в литературе)
**айăкка-майăкка** в сторону
**айлюкки** название мужского танца низовых чувашей
**айхиçĕ** айгист
**акамлан** дружить (о девушках)
**актăк** ?
**аллях** межд., призывающее к внимательности
**алма-шӳлкеме** женские нагрудные украшения
**амăл** аминь?
**анрашка** дурачок
**антару** спуск
**антăрлă-чĕнтĕрлĕ** узорчатый
**апайла** быть внимательным
**апăршук** бедняжка
**ар çынлăх** качества, присущие мужчинам
**асамçăла** колдовать
**асамçă-тухатмăш** ворожей
**асăк** корм, подаваемый домашним животным
**асăмчах** волшебник
**асăх** распутничать
**аслăлăх** величие
**аспĕс пул** сойти с ума
**атикка** отец
**атма-тетел** рыболовные снасти
**ахах-ĕнчĕ** украшения из жемчуга
**ахăру** разврат
**ахти** межд. подожди
**ашшавлик** скатерть-самобранка

### Ă

**ăвă ?**
**ăвăс пăрни** медовое пиво
**ăрасак** счастливый
**ăратник** солдат
**ăрлаççи** по дороге
**ăслăлантар** научить; проучить
**ăслăç** ученый
**ăс-талай** ум, характер
**ăсус** процент
**ăхăклат** всхлипывать
**ăш-вар** живот

### В

**вакăлăх** мелочность
**вала** пестрый
**варавăр** бескостный
**вар-васак** овраг
**вариацилĕх** вариативность

**варпуш** мягкий
**ваçка** молодец
**вӑй ту** притеснять
**вӑй-сӑйлӑ** мощный
**вӑкӑрлӑх** угроза
**вӑрӑмлӑх** длина
**вӑрӑмчӑк** длиннота
**вӑрман-черӗ** тайга
**вӑртахлӑх** родство
**вӑхӑтсӑрлӑх** безвременье
**вӑшӑр-вӑшӑр** подр. легкому ветру
**велтей** болван
**вӗлтӗркки** сукно, сотканное свободно
**вӗтелӳ** мелочность
**вирт** ?
**виçевлӗ** достаточный
**витлев-сивлев** поддразнивания
**вут ту** вулкан
**вутлӑх** огонь
**вут-тӗтӗм** собирательное название огня и дыма
**вылянчӑклӑх** легкомыслие
**вырнаçу** размещение

## Д

**деградацилен** деградировать

## Е

**евӗр-ӗлке** образец
**евитес пул** явиться
**ейӗм** ?
**емелкке** телега
**енкепи** легкомысленный
**ер** ?
**ешӗрлӗх** росток

## Ӗ

**ӗмӗшле** мечтать
**ӗненӳлӗх** вера
**ӗненӳллӗ** верующий
**ӗнӗрлен** напевать
**ӗнчӗ-ахах** жемчуг
**ӗрӗм** ?
**ӗрчетӳ** разведение
**ӗскӗрӗн** брезгать
**ӗтлен** мучиться

## И

**илемӗш**[1] образ
**илемӗш**[ц] эстетика
**илӗхӳ** рост
**илӗштер** заимствовать
**имин** аминь
**им-ямла** ?
**инкеклӗх** несчастье, беда
**инкек-нуша** несчастье
**ирçе-çармӑс** волжские финно-угры
**исма** двусторонний шов
**исӳ** ?
**иçмул** богатство
**ишӗк** древний
**ишлӗк** руины

## Й

**йăла-маса** традиции
**йăла-халам** традиции
**йăлмак** ?
**йăлттам** ?
**йăлха** спутывать, делать петли
**йăнтăр-йăнтăр** подражание звукам гуслей
**йăпăлтăш** льстивый
**йăпăс-йăпăс** ?
**йăпăркка** шелк
**йăхăл-йăхăл** флирт
**йăх-шыв** род
**йĕйĕн** ?
**йĕнчĕл** ?
**йĕпетӳ** смачивание
**йĕпкĕн** ?
**йĕпчĕк** колюшка (рыба)
**йывăç-тĕм** кустарники
**йыхăрăн** быть званым

## К

**кавă** кофе
**каганлăх** каганат
**кай енçĕ** западник
**как** блюда, приготовленные из фруктов
**какар** ?
**каккăр** некий музыкальный инструмент
**каккуй** по какой причине
**какшă-мăкшăлат** говорить «как же»
**камăр** тесто для приготовления юсмана
**камлав** камлание
**кан** ?
**каналлĕ** негодяй
**канашлăх** коллегиальность
**каниссар** небольшой лес
**карт** старик
**касакки** мужской кафтан
**касмăк** каземат
**каснăлăх** поляна, полученная путем вырубки деревьев
**касримушка** кукла-оберег женственности
**касу** узор, вырезаемый на дереве
**каçлу** ?
**катта** галоши
**кача-мекекек** коза
**Кашкăр çăлтăр** Большая Медведица
**кăкак** крюк
**кăкăрсăрлăх** туберкулез
**кăмăллаш** уважать
**кăмăл-туртăм** желание работать
**кăп** спокойный
**кăраллан** вооружаться
**кăрансăр** безграничный

**кăринк** звуки, издаваемые беркутом
**кăрнатир** солдат
**кăсăх** ?
**кăтай** ?
**кăтарткăç** указатель
**кăтат** магазинное сукно
**кăшкăру** лозунг
**кевте** ?
**кем** немного
**кеппеç** тюбетейка
**кервенкке** сильный; большой
**керменкке** маленький дворец
**кĕл** всегда
**кĕлтĕркке** худой
**кĕлттĕм-кĕлттĕм** мелкие деньги
**кĕмеркке** ?
**кĕнтеш** ревновать
**кĕнчелерçĕ** канцелярист
**кĕр куннелен** обрести осенний вид
**кĕреснуй** сани со спинкой
**кĕрлев-сĕрлев** шум-гам
**кĕтелле** в долг
**кивелккă** человек, отставший от жизни
**кил-вут** семья
**ким** дешево
**кипен** ?
**кирле** палка
**кирпĕчлĕх** строение из кирпича
**киртĕк** кол
**китай** шелк китайского производства
**китайлан** перенять китайскую культуру
**кнопкăла** прикрепить кнопкой
**кревенкĕ** гребенка
**кримккă** крынка
**кулкка** роща
**кульки** голубь
**куляк** бедняк
**кун тухăç** восток
**куна** ?
**кункăш** птица солнца и счастья
**купăс-тăмра** народные музыкальные инструменты
**курăк-чечек** травянистые растения
**куç ăвă** в одно мгновение
**кутăн-пуçăнлăх** хаос
**кути-мати** неумелый человек
**куштан-кахал** лентяй
**кӳлевлĕх** упряжь
**кӳллĕх** местность, богатая озерами
**кӳмĕлтĕрĕк** ?
**кӳне** ?
**кӳптеме** полный
**кӳрнек ?**

## Л

**лакӑмла** выкопать яму
**лакçӑм** яма
**ламтай** человек одного поколения
**лапанка** низовье
**лӑмлан** мокнуть
**лекуш, лакуш** место для катания
**ленки** ?
**ликвидациле** ликвидировать
**лис** мелкая порода собак
**лутӑрчак** низкий
**луткала** ?
**лӳхет** жадно пить
**ляхах** межд. привлечения внимания

## М

**малаллӑх** будущее
**малан** ?
**мамун** отыменное производное слово с негативной коннотацией
**манка-сурчӑк** слюна
**маçтӑрлӑх** мастерство
**маткӑч** царь
**мӑл** малек
**мӑн кӑмӑллӑлану** важничание
**мӑнаççӑрлӑх** бессилие
**мӑшкӑллану** быть оскорбленным
**метек** двухколесная тележка
**метӗр** есть (принимать пищу)
**мӗрче** дымоходная труба
**микет** ?
**мина-снаряд** боеприпасы для стрельбы из орудий
**миссионерлӑх** миссионерство
**миçенлӗх** количество
**монологлан** говорить монологом
**мощий, мощай** ?
**мыскаралан** дурачиться на людях

## Н

**нӑхра** неизвестный музыкальный инструмент
**нӑхта-йӗвен** лошадиные снасти
**непӗссӗр-ӗмӗтсӗр** негодный, гнусный, отвратительный
**нӗкӗт** музыкальный инструмент типа волынки
**нӗртес** жадный
**ниçтасӑрлӑх** небытие
**услӑ** вкусный
**нухаля** нагайка, плетка
**нӳнӳке** слизистый, скользкий
**-няк** част. неужели

**О**

**орăшка** ломать
**ориентациле** ориентировать

**П**

**пайлăх** край
**паклава** разновидность вышивки
**палакăр** балакирь
**палăртăм** определение
**палушник** помощник
**папуй** ?
**парамат** перемёт
**парăнас марлăх** сопротивляемость
**пару** налог
**паттис** ?
**пахча кĕпçи** щавель
**пашлăк** головной убор
**патьяна** бадья
**пăйăм-пăйăм** музыкальный инструмент из проволоки
**пăлат-хурçă** железо
**пăлтăрчан** трясогузка
**пăлхăр** состариться, изнашиваться, рваться
**пăрлану** оледенеть
**пăртавуй** темно-красный
**пăскăн** дефект, изъян
**пăталан** пригвоздиться
**пăхăм** наблюдение, надзор
**пăчаллă** ?
**пăчăри** межд., произносимое при поении теленка
**пăчкă пулă** стерлядь
**пăшавай** почтальон
**пăшал-тупă** оружие
**пăшăрханчăклă** тревожный
**перевçĕ** стрелок
**перĕш** рабочий инструмент плотника
**песвеç** всегда
**пехаля** ?
**печĕ** ?
**пĕлĕмлĕх** знание
**пĕлĕн** быть знакомым
**пĕлĕнтеш** знакомый
**пĕр ăнкай** всегда
**пĕр хутлă** дурак
**пĕрлешĕн** соединиться
**пĕрçӳ** телка
**пĕсĕрлен** бояться
**пĕç-кăк** часть ног, где они прикрепляются к телу
**пĕтӳ** талисман
**пик** князь
**пиршавуй** продавец
**пишки** пышка
**повесть-роман** крупное литературное произведение
**проекцилен** проецироваться
**пу** очень сильно
**пукан-диван** мебель для сидения

**пулăмлăх** производность
**пулăнтар** произвести
**пулăхлат** сделать плодородным
**пулĕ** некий инструмент плотника
**пулат**[1] полати, полка
**пулат**[2] комната
**пур çĕртелĕх** всеприсутствие
**пусав** ?
**пусах** угнетатель
**пусăмлан** становиться ударным
**пускил-хурăнташ** соседи
**пуссачи** ?
**пуç пăрах** ?
**пуç чикмек** кувырком; непоследовательно
**пуçалу** правительство
**путаш** ?
**пухча** тюбетейка
**пуш курăкĕ** ?
**пуш хирлен** опустошиться
**пӳлек** ?
**пӳлмек** еда, собираемая зятем во время свадьбы
**пӳлӳ** изгородь; затруднения
**пӳр-суран** рана
**пӳрткӳ, пӳртӳкӳ** сени
**пӳштӳш** сумка

## Р

**радио-телевизор** электронные средства массовой информации
**расман** некое мифическое существо
**ратлан** радоваться
**ратне-ăру** родня
**ратне-юлташ** родня; друзья
**рашки** дождь со снегом
**рашшива** расшива
**ривитник** ?
**римисла** ремесло

## С

**савăнăçлăх** радость
**савăçлă** веселый
**савăш** любовь
**сайлă** вежливый
**саккалийăн** ?
**Сакмар** р. Сакмара
**саксун** немец
**сан** сугроб
**санкăрав** глухой
**санрав** глухой
**сапалантару** разбрасывание
**сар ути** название какого-то растения
**сарăлчăк** широкий
**сарпала** просить, уговаривать
**сасатка** задаток
**састаш** рифма

**сăлу** красавица
**сăмат** дать прибыль
**сăнсăрла** потерять лицо
**сăпă** притворщик
**сăракавай** сороковая бочка
**сăрăнчăк** липкий
**сăрлăх** ?
**сăс** гниль
**сăсăк** интерес
**сăтлă** ?
**сăхăла** нумерация разбираемых бревен чувашскими цифрами
**сăямак** название неизвестной болезни
**сегментла** сегментировать
**секлеттер** секретарь
**селем** жемчуг
**селемçĕ** ювелир
**семенлет** ?
**сенĕклĕх** подобие вил
**сертĕх** ?
**сĕлке** полотенце с вышивкой
**сĕлкĕр** полотенце с вышивкой
**сĕлкĕшлĕх** мокрый и талый снег; месиво из снега и воды
**сĕмлев** мучение
**сĕренçĕ** участник праздника сĕрен
**сивле** лихорадка
**сикĕлчӳллĕ** скачками
**силлĕм** ?
**символлăх** символичность
**симĕслĕх** свежая зелень
**сим-юм** еда, полезная для здоровья
**сисĕм-туйăм** предчувствие
**сисĕнчĕк** чувствительный
**ситре** пустой
**славянçă** славянофил
**стереотипла** стереотипизировать
**страм** очень
**суламат** благодарственная еда на чуклении
**сулхăш** веер
**сум-ят** репутация
**супкăн** человек, шатающийся без работы
**сурманч** заклинатель
**сурчăк-сĕлеке** слюна
**сусăрка** пораниться
**сутăну** продажа
**сутăç(ă)** продавец
**суханлăх** место для выращивания лука
**сӳнтĕк** сундук
**сӳрек** жалостливый
**сӳтĕрĕл** размотаться
**сӳтсе яву** обсуждение
**сыпăклану** слогоделение
**сыпăнчăк** привязчивый
**сыхласлăх** сохранение

## Ç

**çава-çурла** инструменты для кошения травы
**çавра шăтăк** кратер
**çавринкке** круглой формы
**çавринккеле** катать по полу
**çармăç-чармăç** марийцы
**çарран-çарамас** голый
**çăкма пар** почитать
**çăлăнчăк** спасительный
**çăлтăрчăк** звездочка
**çăткăн-вупкăн** прожорливый, жадный
**çăту** глотание
**çăхавçă** жалобщик
**çемçурка** бессильный, слабый
**çеçкелĕх** цветочный огород; клумба
**çĕнӳлĕх** победа
**çĕр виçӳçĕ** землемер
**çĕрĕклĕх** гнилость
**çиçĕмле** пролететь, как молния (о мысли)
**çилĕмçĕ** рыбак, ловящий рыбу неводом
**çилĕшлĕ** свирепый, злой
**çимакур** зимагур
**çулăклăх** веник
**çулçăлăх** листва
**çумăр кайăкĕ** птицы, предвещающие дождь
**çунав** горение
**çупала** ?
**çурал-тĕвĕлен** зародиться, произойти
**çурачăн** быть сосватанным
**çурт-хуралтă** дом и надворные постройки
**çут тĕнчелĕх** белый свет, мир
**çутаткăç** светильник
**çутлăхçă** просветитель
**çухăру-йыхрав** зазывания
**çӳçентермĕш** вызывающий озноб
**çывăрт** заставить уснуть
**çынлăхлă** человеколюбивый
**çыпăçтаркăç** клей
**çырашка** графоман
**çырлахтару** обеспечение
**çыхăм** связка
**çыхăнаслăх** валентность

## Т

**тавсасăр** неблагородный человек
**тай** ?
**така-сурăх** мелкий скот
**таккун ту** думать
**таман** будет
**тамăр** соратник
**танлашу** равнение
**татаймăст** миф. орел, покрытый шерстью
**тачкалăх** сырость земли

**таянкăç** спинка стула
**тăваçă** работник
**тăкăнми çеçке** бессмертник
**тăкки-такки** подражание звукам, раздающимся при работе с куделью
**тăматлăх** стремление завершить работу
**тăмпăртăк** подражание барабанной дроби
**тăнкăлта** ?
**тăрăхлу** подошучивание
**тăх** ?
**тăш** ?
**тевĕш** оглобля
**тевре** ?
**текĕ** ?
**текмеклен** ?
**темек** табак
**температурăла** температурить
**тепе** ?
**террорла** терроризировать
**терюка** льняная материя
**тешĕ** веревка, которой оглобля крепится к саням
**тĕвĕлен-çурал** произойти, зародиться
**тĕвĕленчĕк** завязь
**тĕлĕнӳçĕ** удивляющийся человек
**тĕлли-паллисĕрлĕх** беспорядок
**тĕпĕклен** ?
**тĕпик** нижняя часть вещей
**тĕпихем** ?
**тĕреклĕлен** становиться мощным, крепким
**тĕреклĕлентер** сделать мощным, укрепить
**тĕреклĕлет** сделать мощным, укрепить
**тĕреле** смотреть прицельно
**тĕрĕс-тĕкеллĕх** благополучие
**тĕрнеç** ?
**тĕслĕлен** приобрести цвет
**тивана** наивный
**тивĕçлевлĕх** обеспечение, снабжение
**тилах** ?
**тилвĕрен** ?
**тискерчĕк** дикарь
**тишкеревçĕ** аналитик; критик
**толерантлă** толерантный
**топпир** сейчас
**тохă** тулуп, сшитый изнаночной стороной наружу
**туйăк** латунь
**туккес** кафтан
**тум-сий** одежда
**тумхаланчăк** грязный
**тунккуй** ?
**тупă** отгадка
**тупăклăх** гробница

**тупăшу** соревнование
**туптенэ** ?
**туракка** ?
**турăлăх** божественность
**турханлăх** область, контролируемая тарханом
**турхан-мăрса** собирательное название древнечувашских феодалов
**туслăх-тăванлăх** родственность
**тустаруçă** погромщик, раз-рушитель
**тутлă-имлĕ** полезный, здоровый (о еде)
**тушнан** трагично, геройски
**тӳн хурал** вóда в игре в жмурки
**тӳн-тӳн карчăк** вóда в игре в жмурки
**тӳрккеслет** сделать грубым
**тӳсӳ** выдержка, терпение
**тымарлăх** наличие корней
**тытă** ручка, рукоять
**тыткăнлăх** плен

## У

**уй-çĕр** поля
**укçа-çарма** деньги
**улатăр чул** янтарь
**улашу** вой
**улмалăх** яблоневый сад
**улшăнуллă** изменчивый
**умсан** гордиться
**уни-куни** то-се
**управлă** защищенный
**ускăн** ленивый
**уссăрман** ?
**уçăмсăрлăх** неопределенность
**уçкăрт** натравливать собаку
**ут-лаша** лошади
**утнакăлан** выздороветь
**ут-урхамах** лошади
**Уша çăлтăр** название неизвестной звезды
**ушах** болото
**уяв-ĕçкĕ** праздник

## Ӳ

**ӳкерчĕкле** рисовать
**ӳкĕтлев** увещевание
**ӳпкем** ропот
**ӳтен** развиваться
**ӳтлĕх** щит

## Х

**хавхаланулăх** воодушевление, вдохновленность
**хайван** животное
**хайлалăх** произведение искусства
**хайман** кожаный мешочек
**хайран** евнух
**халавлă** ?
**халан кайăк** название неизвестной птицы

**халлан** стать сильным
**хамăр яллăх** землячество; кумовство
**хантарай** лентяй
**хап** очень
**харамсалăх** дармоедство, тунеядство
**харăм** ?
**харкамçă** индивидуум
**харсăр-чăрсăр** храбрый
**харушай** немного
**хаса** обвинение, страдание
**хасăр** сейчас
**хаярлану** ожесточение
**хăв** гнать
**хăван** радуйся
**хăвантар** обрадовать
**хăй питти** самостоятельный
**хăймак-хачмак** жанр в фольклоре, повествующий о героях и предводителях рода
**хăйпăклан** превратиться в щепки
**хăма купăс** скрипка
**хăрушлăхлă** страшный
**хăла** ?
**хăмçи** ?
**хăнăхлан** ?
**хăнт** фунт
**хăр** стыд
**хăрăк-шанкă** сухие дрова
**хăтлă-сăтлă** комфортный
**хăяклă** боком
**хăят** ярмарка в с. Киять в Татарии
**хĕвери** миф. злое существо
**хĕлхемлĕх** искра
**хĕнкĕр-хенкĕр** подражание глухому громыханию
**хĕн-хурлăх** нужда, бедность; гнет
**хĕрарăмлăх** женственность
**хĕреслĕ-пирлĕ** поперек, крестообразно
**хĕрĕнкей** подвыпивший, захмелевший, хмельной
**хĕрĕслен** стать красным
**хĕр-пĕрчĕк** девочка
**хĕрхенĕв** жалость
**хĕске** рак
**хĕсметçĕ** служитель
**хĕтĕрĕн** ?
**хĕтĕртӳ** подстрекательство
**хирлӳ** шерстобойка
**хирлӳ-пирлӳ** ссора
**хисеплеш** знаться
**хисеплĕх** количество
**хитрешке** красавец
**хулалан** обрести черты города
**хулле** несчастье
**хупăшу** брачная ночь
**хун кайăкĕ** название неизвестной птицы

**хунькасси** село, в котором проживают тесть и теща
**хуплав** крышка
**хуравик** черновик
**хурланлӑ** печальный
**хурлӑх-шырлӑх** горе, несчастье
**хуртумӑш** ?
**хускавлӑх** движение
**хускалу** движение, жест
**хутӑшу** смесь
**хучавчӑ** ?
**хӳмеле** огородить
**хӳтӗлеслӗх** оборона, защита
**хыпарлав** оповещение, уведомление, информирование
**хыт каҫмак** жадина

**Ч**

**чалпар** шаровары
**чалхӑркка** ?
**чанкӑ** ?
**чарахаллӑ** запретный
**чарулӑх** запрет
**чару-тӑву** преграда
**чашкӑ-савӑт** посуда
**чӑвашлӑх** чувашскость
**чӑкӑл-чӑкӑл** неплодородный
**чӑмӑртан-калӑплан** оформиться
**чӑнлав** явление, предмет действительности
**чӑпчӑм** перо
**чӑрмаланчӑк** исцарапанный
**чӑс** врать
**чее-ултавҫӑ** лжец
**чемлентер** обижать
**чепчен** ?
**чесрес** черт, бес
**чӗке** крутой
**чӗкенлӗ** узорчатый
**чӗкӗ** ?
**чӗмлӗх** ?
**чӗнтӗрҫӗ** кружевница
**чӗпчӗркке** название сложного узора
**чӗрӗ-сывӑ** живой, здоровый
**чӗркке** комар
**чӗрлӗх-чунлӑх** животные
**чӗрмеш** царапть
**чӗрпӗл-чӗрпӗл** блестящий
**чикӗленӳ** наличие общей границы
**чингисханлӑх** гнет
**чинук** рогожа
**чиркӳҫӗ** служитель церкви
**чисма** лента
**чит** заграница
**чукӑн** ?
**чукла** ?
**чукмарла** бить
**чукмарҫӑ** работник, использующий дубину
**чукшан** дубина

**чулпу** какое-то украшение на костюме участницы свадьбы
**чуманлăх** ?
**чуп тăваш** целовать
**чуп тăву** поцелуй
**чуптар çеçке** ?
**чупуçă** бегун
**чура-хăрхăм** рабы, слуги
**чурт-чурама** черти
**чуттах** случайно
**чухласа апат** ?
**чӳклевçĕ** язычник

**Ш**

**шавкам** шум-гам, волнение
**шайлашу-çыхăну** наличие связей; соотношение
**шакăл тулă** пшеница с крупными зернами
**шалĕк** ?
**шалпака** просторный
**шанкал** дерево, оставшееся без листвы и коры
**шантар** жандарм
**шарлу-тăву** несмелое высказывание
**шат** счастье
**шатăн** темная сила в сказках
**шатăртаттару** скрежетание
**шахвур** конокрад
**шахчă** ?
**шăвачур** вор
**шăвăшлăх** тяжесть
**шăл çури ан пултăр** молчать
**шăнаршă** колыбель
**шăнкарт** выворачивать
**шăнттарай** человек, начавший сходить с ума
**шăпăт** полба, приготовленная на чукление
**шăрчануй** шерстяной
**шăтăк-шăкăр** дырки
**шăша** сосуд
**шăши-мăши** мышь
**шевлелĕх** блик, отблеск
**шемшек** слабый?
**шенкев чул** гранит
**шепер** ?
**шехер** яд
**шĕнкĕл кайăк** название неизвестной птицы
**шикарики** разновидность игры
**шинкар** шинкарь
**шинкки-шинкки** подражание течению воды
**шихванкă** сирень
**штантăр** стоп
**шуйттанлăх** разврат, распутство
**шукалăх** ?
**шур пуç йывăççи** бревна молодой липы, подго-

товленные для снятия коры
**шур тулă** рис
**шурашка** белый
**шуру-муру** волк
**шут-хисеп** количество
**шӳшӳ яшки** название какого-то супа
**шывлам** разновидность вышивки
**шырав-тишкерӳ** исследование
**шырăш** полог
**шырĕç** название неизвестного растения

## Ы

**ывăнт** утомить
**ыйтăм** опрос
**ыр тĕкĕн** добродушный человек
**ырă марлăх** беда, горе
**ырăсем-кирелӳ** киреметь
**ырлăх-рехет** благополучие
**ырмалăх** ?
**ыр-хаяр** обобщенное название языческих богов
**ытамла** обнимать
**ытарăш** притча
**ытах** иначе
**ытлăх-çитлĕх** достаток
**ытти-хытти** остальное

## Э

**эккĕл** название неизвестного цветка
**элек-масар** клевета
**элмен** глава киремети
**элчĕлĕх** посольство
**энеш** охвостье, отход
**энчен** слабый
**эптер** глава киремети
**эрем** напрасный
**эрĕш-мерĕш** то-се
**эрхелей** архиерей
**этемкке** человечек
**эхерлен** громко плакать

## Ю

**Юкури (Якур) кунĕ** день памяти святого Георгия
**юлтай** отчужденный
**юманлан** обрасти дубами
**юнкав** великая среда
**юнкăлти** легкомысленный
**юнхавлă** ?
**юратăш** любовь
**юратулăх** состояние любви
**юрă** ?
**юрă-такмак** песни
**юри** ?
**юсă-юслă** благополучный

**Я**

**якрака** сухостой

**ялкăшка** блестяшка

**ялтăрма** блестящий

**ялтрав** блеск

**ялтравлă** блестящий, сверкающий

**ялтравлăх** сверкание

**ям** яма

**яман** слабый, плохой

**янахсăр** говорливый

**янтак** крепкое дерево, звенящее при ударах по стволу

**япташка** бездельник

**яркай** коньки

**яркам** растущий вольготно

**ярпайт** позволить разрастись

**ятамас** безымянный

**яташ** этаж

## ТУПМАЛЛИ

УМ СӐМАХ ........................................ 3
Сӑмах статйин тытӑмӗ ........................................ 4
Кӗскетӳсем ........................................ 5
Паллӑсем ........................................ 5
Сас палли йӗрки ........................................ 6
Сӑмах пуххи ........................................ 7
Чӑвашла-вырӑсла сӑмах кӑтарткӑҫӗ ........................................ 92

*Справочное издание*

**Фомин** Эдуард Валентинович
**Иванова** Алена Михайловна

**СӐМАХ ЭТКЕРӖ**

**ЛЕКСИЧЕСКОЕ НАСЛЕДИЕ**
**Словарь**

Редактор *О. А. Хлебкова*
Компьютерная верстка и правка *Э. В. Фомина*

Подписано в печать 26.06.2018. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная.
Гарнитура Palatino Linotype.
Усл. печ. *л.* 6,27. Уч.-изд. *л.* 6,24.
Тираж 100 экз. Заказ № 697.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15